Хветĕр Агивер

К 84(Чув)
А 24
М 18030-Чув

# ҪАПҪА ҪУМĂР ҪĂВАТЬ



Национальная библиотека ЧР
4-018030

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К Ф
К 84(Чув)
А 24

*Хветĕр АГИВЕР*

# ÇАПСА ÇУМĂР ÇĂВАТЬ

**НОВЕЛЛĂСЕМ**

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1974

С(ЧУВ)2
А36

ПРОВЕРЕНО
20

М 18030-чув

7—3—3
39—74М

© Чувашское книжное издательство, 1974 г.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО



## АКĂЛЬ

— Акăль, Акăль хĕрсем, эс пултăна ку? Кĕмесĕр иртсе каятни, аре? Чим-ха, чим, Акăль хĕрсем...

Урам варрипе утса пыракан Акăль сасă илтĕнсе кайнă енне пуçне пăрчĕ те уçă чÿречерен кармашнă инкĕшне асăрхарĕ.

— Чим-ха, чим, Акăль хĕрсем, кĕмесĕрех иртсе ан кай-ха? Урамах тухам...

Чанккамас инкĕшĕ наччас Акăль патне йăкăртаттарса çитрĕ.

— И-и, аван-и?— аллине тăсрĕ инкĕшĕ.

— Аванах-ха.

— Аре, мĕн мар-и, яшка çакма тапратнăччĕ те, пăхатăп — кантăк умĕпе пĕр шу-укăль майра ярăнса пырать. Хамăр ялсем пулас çук-ха ку, тетĕп. Юриех чÿречерен пырса пăхрăм — эс пулах кайрăн.

— Ҫиле килсе каяс терӗм,— инкӗш ҫатӑлтатнине хирӗҫ хурав турӗ Акӑль.

— Килмелле. Килмесӗр, килсех тӑмалла ҫав. Хальтӑран килменччӗ те пуль-ха?

— Майлӑ вӑхӑт тупӑнса пымарӗ.

— И-и, Акӑль хӗрсем, мӗн-ха эпир капла урам варринче тӑратпӑр, атя, пӳрте кӗрер. Ҫул ҫинчен ӑшу та хыпрӗ пуль. Сӑра сӗрӗпӗр, виҫминех ӑсла вӗретсе лартнӑччӗ те.

— Кӗрсех тӑрас мар пуль. Ҫиле ҫитсе ӳкес. Анне те кӗтсе ывӑнчӗ-тӗр. Час тухаймарӑм та хуларан, каҫарах юлтӑм ахаль те.

— И-и, тепӗр тӑват ҫухрӑм юлнӑ та, хӗвелӗн те анса ларасси тепӗр шит. Ӗнтӗрӗкчен ҫитетӗн... Ҫук, ҫук, калаҫса ан тӑр, ҫӗн сӑра тутантарса пӑхтармасӑр ямастӑпах. Инкӗшӗ Акӑле хулӗнчен ҫатӑрларӗ те, вӑйпах тенӗ пекех, килӗ еннелле пӑрчӗ.— Тепӗр тесен, ӳкӗтлесех те тӑмалла мар та сана, Акӑль хӗрсем, килнӗ-кайнӑ тӗлсенче хӑвӑнах кӗрсе ҫӳремелле те, ҫук вӗт, пӗртте тӑван пек мар — ҫӳреместӗр.

Акӑль чӗненҫи-тӑванҫи пулмарӗ. Вӑл, ҫӑмӑл чӑматанне алӑкран кӗрсенех хурса, тӑрӑхла сак ҫине пырса ларчӗ. Инкӗшӗ, сӗтел ҫине майлама тесе, чупкалама пикенчӗ.

Тӑпӑл-тӑпӑл пӳрт. Ҫутӑ. Чӳречисем урамалла иккӗ, картишнелле пӗрре. Пӳртне лартни те тӑваттӑмӗш ҫул ҫине кӑна кайнӑ-ха. Ҫӑҫал пуранӑ пекех, хыр пӗренесем тап-таса. Вӗсенчен сухӑр шӑрши кӗрет. Хӗллесенче йӗпенмест пулмалла ҫурчӗ. Йӗпенсен — пӑчӑр-пӑчӑр хуралмалла пӗренесем. Мӗнле чаплӑ ҫурт туса хӑварчӗ Борис. Ҫермен. Хӑй Ҫӗпӗрте ҫерем уҫнӑ ҫӗрте ӗҫлесе илнӗ пӗтӗм укҫине ҫакӑнта хыврӗ. Колхозра, шоферта, кӗрмешсе тунӑ укҫи те самаях пухӑннӑччӗ пулмалла унӑн. Усси ҫеҫ ҫиле пулмарӗ. Харама — юта саланчӗ Борис усси. Анненеччӗ ҫакнашкал ҫурт... Анне...

Амӑшне аса илсенех Акӑль, «Юрӗ-ҫке, юрӗ» текелесе,

хышаланса ӳкрĕ, вара инкĕшĕ, кăмака хыçĕнчен чăмпа сăра ăсса тухаканскер, ăна хистесех сĕтел хушшине сиктерсе лартрĕ. «Килнĕ хăнан сăйсăр кайни чиперĕ çук» текелесе, тулли курка тыттарчĕ. Ĕçрĕç.

— Çырма урлă каçсан, хырăм выçать, теççĕ, пирĕн яла çитиччен çырми те саккăр... Акăль хĕрсем, çырт-ха, çырт, чĕре сури ту.

Инкĕшĕ тĕрлĕ шĕвеке иленсех иленни сăнаса пăхмасăрах курăнчĕ. «Аш хыпрĕ-ха»,— тесе, вăл харăсах виç-çĕшне пушатса хучĕ. Самай! Акăль пĕрне те хистенçи пулнипе çеç çуррипе тан чĕпĕтсе пачĕ. Урăх — тултарт-тармарĕ те. Часрах яла, килне çитсе, ывăлне, Юмана, ытамне илесси килчĕ унăн.

«Юман, ман ырă, чĕмсĕр Юманăм!..»

— И-и, Акăль хĕрсем, эп мĕн те-ха, ыйтса пĕлесшĕн-ччĕ. Бориса куркаламастăн-и çавăнта, Шупашкарта?— хăй, эс курсан та курмана перетĕн-ха, манпа пурпĕрех чĕререн калаçас çук тенĕшкел, хĕрсемĕ çине сиввĕн куç ывăтса илчĕ.

— Тем шухăшлă ĕнтĕ вăл халь?.. Каялла та çав... çилхăванĕпех (куçĕнче шалти хаярлăх палăрчĕ) таврăннă теççĕ-и-ха? (Çиллине шăнараймасăр). Ых, патакчĕ иккĕшне те!.. (Сасартăк лăш пулса). Эс, мĕн-ха, Акăль хĕрсем, ман çине апла чиперех мар ан пăх-ха. Ĕлĕкхисене аса илер мар,— шăпăрт пулчĕ инкĕшĕ пĕр саманта.

«Ĕлĕкхисене аса илер мар... Çынна чĕреренех амантсан-и?»

— Пулнă-иртнĕ. Пĕрехмай урлă пурăнар мар. Эп чылай пуç тавра килтерсе пăхрăм шухăша. Тем, хамах ăшă пулман пек туйăнать... Эх, Акăль хĕрсем, çĕрле вăранса каятăп та чĕре икке шар сурăлать, куç уçма хăраса каймалла. Кăмака хыçĕнчи шăрчăк та эпĕ. Тăрса урама тухатăп. Шăплăх. Тӳпере уйăх çутатать. Шухăшлатăн та — акă, ик енчи кӳршĕсенех тăватшар ача. Эсĕ — тăр-пĕччен... Çурт та ĕмĕр çакăн пек кервен лармĕ. Хама хам ал хурас патнех çитетĕп тепĕр чух.

Шиклӗ. Эх, Акӑль хӗрсем, апла-капла темех ан шутла та, халь кайсан пурпӗр Бориспа сӑмахласа пӑх-ха, мӗн те... Кунта кӗтеҫҫӗ те, аннене те Борис патне хистесе ҫыру ҫыртарттарасчӗ. Эп, ак, ырансем-тепӗр кунсем пырса та каясшӑн та сирӗн пата хӑнана — мӗнле. Бориса тӑна кӗртесчӗ, эп ҫапах та саккунлӑ арӑмӗ-ҫке-ха, атту... пӑссах ярӗҫ ӑна.

...Ҫул хытти ик енӗпе ҫӑра ҫерем. Пакӑлчак таран. Пуҫ вӗҫӗнче, ҫӳлте, ҫӗтӗк сӑхман пек пӗлӗт ӗренки пур. Сывлӑшӗ — хӳхӗм керменсенче шӑратса туни.

«Чулпа перекене ҫӑкӑрпа пер». Темле кайӑк ҫул хӗрринченех пӑрлатса вӗҫсе хӑпарчӗ те аякках мар каялла курӑк ӑшне ӳкрӗ. Ытлӑх!

«Чулпа та, ҫӑкӑрпа та пемерӗм эпӗ. Ҫынна перес чухне хама чулпа кӳпкерӗҫ — ҫӑкӑрпа пеме хӑтланакана чулпа пеме халь илемлех те мар. Ҫавӑн пек пулӗ ӗнтӗ вӑл пурнӑҫра, яш пуҫ ҫине нуши ытларах тиенет.

Хевтесӗрсене чулпа пемеҫҫӗ.

Хевтесӗр? Инке-и? Кӗтсех тӑр».

— ...Ан макӑр-ха, Юманӑм, ан макӑр, макӑрса сассуна ан ҫӗтер. Ҫитрӗмӗр те, акӑ. Пӳрчӗ те сан ятна хутнӑ пекех ӑшӑ, ав. Хӑйсем таҫта тата — Борис пичи, инкӗшӗ.. Кипки пуланса кайнӑ, ай! Ҫавӑнпа макӑрашкаларӑн пуль-ха эс, сӗм-сӗмеккем. Ай, ӑслӑскерӗм, йӗпе ҫинче выртасси килмен унӑн — амӑшне сас туса систерчӗ. Ҫӗнӗ ҫитти сарӑпӑр. Эй, тяппуна хускататни? Ат-тӳ-тӳ-тӳ!...

Сивӗ ҫӗклемӗ пӳрте лапсӑрр кусса кӗчӗ.

— Акӑль,— терӗ тӗпел кукринелле талт-талт пусса иртнӗ инкӗшӗ, ҫиллес сассипе хӗрсемне сывлӑх та сунмасӑр,— хӑна пӳрчӗ мар ку. Ман патӑмра ҫӗр каҫасси пирки ҫӑвар та ан уҫ. Вӗлтӗрен кайӑкна йӑт та уттара пар ӑҫтан килнӗ ҫавӑнта. Мана намӑса кӗртсе ан ҫӳре ял умӗнче. Эп саккунлӑ упӑшкапа пурӑнатӑп. Ют арҫынпа тупнӑ хӗрарӑм — пирӗн тӑван мар. Ия.

Акӑль, кипке улӑштарса тӑраканскер, нимле мар

пулса кайрĕ. Кăкăрне пĕр вĕри пырса çапрĕ, пĕр сивĕ пăркăçларĕ унăнне.

— Ия, Акăль, эпĕ вăтăр виççĕччен качча тухмасăр пурăнса та каччă тĕлне пĕлмен, никама çывăхлатса курман хам çумма, лайăх арçын тĕлне пуласса кĕтнĕ. Пирĕн, ак, çурт çавăрас шухăш. Эс пур, калăттăм та пĕрре, ăçтиçук, йĕпе сăмса тĕлне пулнă та, ме сана, тӳрех ун хурри пулнă. Тьху!..

Акăль хыпăнса ӳксе çуйкăнланчĕ. Хайшĕн мар, тĕлли-паллисĕр инкĕшшĕн, унăн килпетсĕр сăмаххисемшĕн намăсланчĕ вăл.

«Ай, намăс. Ăçта килсе лекрĕм эп? Ма кунта эп? Ма каллех улталантăм? Пĕлместĕмччим çак хĕрарăмăн чунсăрлăхне? Киле пырса аннене ятласа хăварнине те мантăн-им? Ай, ăсăм кĕске-çке!..»

— Борис пиччӳне кĕтсе ан тăр, пурпĕр сан хутна кĕмест вăл. Кĕрес тесен те кĕрттерместĕп. Пустуй ун хӳттине шанса тăни!— инкĕшĕ, сăмахĕи вĕçленнине пĕлтерсе кăмака умĕнче тем кĕмсĕртеттерме, тем шалтăртаттарма пикенчĕ.

Акăль ачине чĕркерĕ. Куçне куççулĕ килчĕ. Алăк урати урлă каçас чух çапла каласа хăварчĕ:

— Пĕлместĕп, мĕнле айăпа кĕтĕм-ши сирĕн умăрта? Кун пек пулса иртнĕ хыççăн ĕмĕрне ярса ан пустăрччĕ урам çак киле!

Çил шăхăрать. Тĕттĕм. Сивĕ. Ăçта каймалла халь Акăлĕн çур уйăхри ачипе? «Ах, Зоя патне кĕрес-çке. Вăл хӳтерсе кăларса ямĕ, кĕçĕрлĕхе хӳтлĕх парех».

Зоя тăванне йышăннă пек йышăнчĕ Акăле. Çĕнĕрен яшка çакрĕ, чей вĕретрĕ.

Зоя — Акăлĕн кӳршĕ ялти хĕр-тантăшĕ.

Ирхинепе Юмана пĕçертсе пăрахрĕ. Зоя, çакна курса тăркач, лаша кӳлтерсех Акăльпе ывăлне район пульницине леçтерчĕ.

...Çул хыттин икĕ енĕпе çăра çерем. Пакăлчак таран. Пуç вĕçĕнче, çӳлте, çĕтĕк сăхман пек пĕлĕт ĕренки

пур. Сывлăшĕ — хӳхĕм керменсенче шăратса тунăскер.

«Чулпа перекене çăкăрпа пер». Акăль, чăматанĕпе юнашар плащ сарса, çерем çине ларчĕ.

«Пĕлсе пĕтерме çук: çын çăкăрпа перет пек, хĕвĕнче чул тытнă-мĕн».

...Акăльпе Зиновий районри ĕçпе юрă уявĕнчен таврăнаççĕ. Аслă çулпа мар, çуран çулпа. Тӳрĕрехшĕн. Акăль — вунтăххăрта, кăçал çеç вăтам шкул пĕтернĕскер, Зиновий — çирĕм тăххăрта, авиаци институтĕнчен вĕренсе тухса çар самолечĕ çинче ĕçлекенскер, халĕ вăл отпускри çын, Акăльсен ялĕнчи пĕртăван аппăшĕсем патĕнче пурăнать, хăй каларăш, хусах пурнăçĕ йăлăхтарса çитерниле «хĕр тупса, çемьеллĕ пулма» килнĕ. Укçине те çителĕклĕ илет имĕш вăл, хваттерĕ те çарта янтă иккен унăн, çуллен икĕ уйăхлăха тенĕ пек кăнтăра, Хура тинĕс хĕррине, канма çӳрет-мĕн Зиновий.

Акăлĕн нимĕç чĕлхипе экзамен памалли юлнă. Ют çĕршыв чĕлхине вăл самай ăнкарать, çавăнпа питех шиклĕ те мар, парапах, тет. Çитменнине тата Акăлĕн ку яхăнта вĕренӳ патне алли те пыми пулчĕ: юратса пăрахрĕ вăл Зиновие. Зиновий яштака. Акăльтен пĕр ал лаппи чухлĕ çӳллĕ, пуç каçăртса пăхмалла. Куçĕ пĕлĕт пек тарăн, алли тимĕр пек хытă, çӳçĕ йĕтĕн пек кăтра унăн. Зиновий Акăле паллашнин иккĕмĕш куннех ирĕксĕрлесе чуптурĕ. Акăль малтанах йĕкĕт ытамĕнчен вĕçерĕнесшĕн хиркеленчĕ, питне тартрĕ, каччă тути ун тутине сĕртĕнсен, лăштăрах пулчĕ вара. Унра хăй халиччен пĕлмен çепĕçлĕх вăранчĕ.

Зиновий — тĕнчери чи хаклă çын. Амăшĕ пек, пиччĕшĕ пек. Вĕсем пек çеç-и? Зиновий — Акăлĕн чун хуçи.

Çĕр çывăраймасть Акăль, вĕçĕмех Зиновипе тĕлленет. Ах, ытла та пылак-çке йĕкĕт сăмахĕсем, хĕр чĕрине çу пек ирĕлтереççĕ!

Шăп. Хĕвел, хир çине пăрахнă юлашки пурçăнне те хăйпе пĕрле пуçтарса, лерелле утса кĕрсе кайрĕ. Кун çути тарса-тарса пычĕ.

Пуçри шухăшсем чӳччу ярăнаççĕ. Çак тарана хир ваççине каччăпа тăр-пĕччене юлма шиклĕ те пек Акăле, такам темрен сыхăрах пулма та хистет пек, пурпĕрех хĕр чĕри ынатлă, пĕлĕтсĕр, юратăва хирĕç çунат сарнă.

Зиновий канăçсăр. Зиновий хĕр пичĕ умĕнчех пăшăлтатса тем ӳкĕтлет, йăлăнать, шантарать. Зиновий Акăле çирĕппрен çирĕппрех хăй çумне чăмăртать.

Акăлĕ — пăчă. Сывлăшĕ çитмест. Чĕри тăçта вăй! вĕçсе каять те капкăна çакланнă шăши пек тăпăлтатса илет. Зиновий, мĕн хăтланатăн эсĕ?!

Тĕттĕм çĕр чĕмсĕр...

...Çул хытти икĕ енĕпе çăра çерем. Пакăлчак таран. Пуç вĕçĕнче, çӳлте, çĕтĕк сăхман пек пĕлĕт ĕренки пур. Сывлăшĕ — хӳхĕм керменсенче шăратса туни.

Çиртлĕ çырминче шыв шăнкăртатать.

Вашмак çыранпа шыв хĕрне чупса анать Акăль.

«Çиртлĕ, Çиртлĕ! Ман вăйтанçи хĕр-юлташăм! Эсĕ— ĕмĕр хĕр-халлĕн! Чун тĕпĕнчи таса сассупа ывăна пĕлмесĕр калаçатăн та калаçатăн, мана лăплантаратăн. Эпĕ Юманăма илме килетĕп. Паллатăн вĕт эсĕ ăна! Эпир ывăлăмпа кунта акшар чулĕ пуçтарма çӳреттĕмĕр, унпа выляма юрататчĕ вăл, чĕкеç тăмĕ кăларса шăхличĕ тăваттăмăр. Халĕ асламăшĕпе хур кĕтӳ кĕтме çӳрет-тĕр...

Ах, пит час иртеççĕ-çке çулĕсем! Ак, кур-ха, Çиртлĕ тусăм, куç айне кăшт тĕксĕм те çапрĕ. Хам та ĕлĕкхи йăр-япăш мар ĕнтĕ, ывăннă. Çук, çук, чĕре çавах ĕлĕкхиех — юратушăн тунсăхлать.

Пĕлтерем-и сана пĕр япала, Çиртлĕ тусăм, кулмăн-и? Çук, эс кулас çук. Эс ăнланатăнах хĕрарăм чĕрине: пур ман халĕ сывăх çыннăм, çул юлташĕ. Мĕнле чĕнеççĕ тетĕн-и? Çынсем, хисеплесе, Константин Петрович теççĕ, маншăн — Костя, Костенька... Эпир унпа ĕçлетпĕр. Вăл — бригадир, эп ун бригадинче, мозаик. Япăх ĕçлесен, пăскăртмасть-и Костеньку, тетĕн-и? Çук, пăскăртмасть, мĕншĕн тесен пурте лайăх ĕçлетпĕр, туслă

пурӑнатпӑр. Анчах Костьӑн сывлӑхӗ чаплах мар, чӗрепе аптрать...»

Шӑнкӑртатать Ҫиртлӗ, шӑнкӑр-шӑнкӑр. Акӑль, Ҫиртлӗ шывӗпе питне уҫӑлтарса, ҫӑмӑл уттипе малалла юхрӗ.

«Чулпа перекене ҫӑкӑрпа пер». Курӑк ӑшӗнчен каллех темле кайӑк пӑрлатса хӑпарчӗ те, ҫул урлӑ вӗҫсе каҫса, инҫетре курӑнса ҫухалчӗ.

«Тепре кӑна илтем ман упӑшкапа кино тӑрӑх якӑлтатса ҫӳренине — пуҫне ҫапса ҫурап. Пӑх-ха, мӗн хӑтланаҫҫӗ вӗсем, саккунлӑ чӗрӗ арӑмӗ пур ҫинчех хула урамӗпе ҫавтӑнса-кӗлентӗрленсе ҫӳреҫҫӗ. Кӗҫҫе пит! Хусах арҫын тупаймарӑн-им? Авланни ҫумне ҫыпҫӑннӑ. Урӑх та ҫӳрес пулсан, асту, кислота сапатӑп. Кӗпӳне тивӗ-и, ӳтне-и унта — пӗлместӗп,— ху айӑплӑ».

«Юрать-ха, ун чухне пӳлӗмре пӗччененехчӗ эп. Пӗрле пурӑнакан хӗрсем кинона кайнӑ тӗл пулчӗ. Вӗсем те ҫав хӗрарӑмӑн сӑмахӗсене илтес пулсан, эпӗ мӗнешкел хӗрелсе, ҫухалса кайнине курнӑ пулӗччӗҫ.

Константин Петровичпа, Костьӑпа, эпӗ «ҫӳрени» хамӑр бригадӑри хӗрсемшӗн никамшӑн та вӑрттӑнлӑх марччӗ ӗнтӗ. Ҫапах та иксӗмӗр хушӑмӑрти ҫыхӑнусене ҫын ҫине уҫӑмлӑнах кӑлармa тӑрӑшман эпир. Мӗн тума ҫын ҫине кӑлармалла пулнӑ-ха? Константин Петровича арӑмӗнчен пурпӗрех уйӑрттарас ҫукчӗ эпӗ. Хӑй вӑл вӗҫӗмех пӗр-пӗр кун ун патӗнчен тухса каясси пирки ӗнентеретчӗ. Мӗншӗн ӗнентермелле? Константин Петрович ҫапла тӑвасса эпӗ хӑй шантармасӑрах сиссе тӑраттӑм. Таса чунлӑ ҫын вӑл. Суя пурнӑҫпа пурӑнакан ҫын мар. Ҫавах вунӑ ҫул пӗрле пурӑннӑскерсен шӑпишӗн савӑл пулас килместчӗ. Ҫӗрлесерен, ыйхӑ вӗҫнӗ самантсенче, ҫапла шухӑш та пуҫа пӑралатчӗ: каллех улталанмастӑпши эпӗ, Юман «ҫӗнӗ ашшӗне» епле хӑнӑхӗ, мӗн тейӗ вӑл мана, ӳссен? Тен, Константин Петрович — ман пурнӑҫӑн пӳрни?»

...Кӗҫҫе пит... Тӗлӗнсе-хытса каймалла: сана нимсӗрмӗнсӗр кӗҫҫе пит тесе хӑртаканскер, хӑй намӑс-симӗсне

çухатнă, питне кĕççе çĕленĕ этем. Чĕр тамăк туса хунă Константин Петрович пурнăçне çав хĕрарăм. Ирĕн-каçăн упăшкине пăчкăпа каснă пек каснă: укçа сахал ĕçлесе илетĕн (Константин Петрович 150—170-шер ӳкерсе пырать-ха уйăхсерен), хваттерӳ пĕчĕк (икĕ çынна пĕр пӳлĕм мăй таранах çитмелле ĕмĕр ĕмĕрлеме), тумтир çитсе пымасть — çынсен арăмĕсем çинчи япаласене курмастăн (чаплă тумланассу килсен, ху ĕçе кĕрĕш, килте упăшку ĕнси çинче кăна ан лар) тата ытти те, тата урăххи те, хăлха йӳçĕхсе çитиччен.

Пĕрехмай арăм кăсăкĕпе çеç пурăнмалла мар вĕт-ха. Унсăр пуçне, куллен туса пымалли халăх ĕçĕ, патшалăх ĕçĕ те пур.

Вунă çул мăшăрĕнчен ăшă сăмах илтмесĕр пурăннă Константин Петрович. Çемçе кăмăллăскер, арăмне хирĕçлеме хăяйман, çемье нушине ăшĕнче пăшăрханса ирттернĕ. Чĕри те çавăнпах хавшанă пулĕ унăн. Килпетсĕр арăмне пĕччене тăратса хăварма та хăюлăх çитереймен вăл. «Юрĕ-çке, паян пурăнкаларăмăр, ыран та мĕнле те пулин пурăнкаласа ирттерĕпĕр-ха», текелесе йăпатнă хăйне. «Тен, малалла çăвартан çăвара та пурăнма пуçлăпăр ак»,— каллех хăйпе хăй йăпаннă чĕмсĕр Константин Петрович. Кун иртнĕ те çĕр иртнĕ, çăвартан çăвара пурăнасси пăхса та курăнман. Çемье лавĕ мĕнле кӳлнĕ, çаплипех тапранаймилларнă. Ăна тăварса çеç пăрахмалла пулнă.

...Константин Петрович питĕнче кăшт палăракан кулă. Зоя (кӳршĕ ял хĕрĕ) манпа юнашар тăрать.

— Пирĕн патра ĕçлесшĕн,— тет Зоя, ман енне пуçне сĕлтсе.

...Эпĕ пыр шыççипе ĕçе тухаймарăм. Константин Петрович пырса кĕчĕ.

— Ак, имçамсем,— тет именсе, таблеткăсене сĕтел çине хурса. (Хам аптекăна тухса кĕрейммен пекех).

— Санăн-и? — вырăн тĕлĕнчи сăнӳкерчĕке курса ыйтать.

— Манăн. Иккĕре.

— ...Виççĕмĕш çул ĕçлетĕн ĕнтĕ, Акăль, канма каймастăн-и, путевка пур,— тет Константин Петрович.

— Яла каясшăн-ха, ывăла курас килет,— тетĕп.

...Эпир — кинора. Ман алă — Константин Петрович аллинче.

— Константин, Костя,— тетĕп эпĕ хуллен,— кинори пек хитре пурнăç пулать-и çĕр çинче?..

— Пулать,— тет вăл, аллăма сисĕнкĕсĕр чăмăртаса.

...Константин Петрович мана яла ăсатса яма тухнă. Калаçмаллисем иксĕмĕрĕн те иксĕлнĕ. Калаçмаллисене малтанах калаçса пĕтернĕ ĕнтĕ. Халь — чĕнместпĕр. Автобус тапранса каять.

— Ан тунсăхла,— тетĕп.

— Юмана часрах илсе кил...

Тĕттĕмленчĕ. Акăль килне пахча хыçĕнчен йăранпа кĕчĕ. Карчăкпа ывăлĕ каçхи апат тăваççĕ. Кашăкпа тирĕк тĕпне шакăртаттарса ларакан Юман, алăкран кĕрекен амăшне курсанах, ун майĕ çине ыткăнчĕ.

Амăшне алă пачĕ Акăль.

— Çыруне çырнă та — кĕтетпĕр, каç та пулчĕ — эс çук, паян тухаймарĕ, ырана хăварчĕ пуль килессине, тесеттĕмĕр.

— Юларах тухайрăм та, каçарах юлтăм çав, анне. Инке чĕнсе кĕртрĕ, унта лартăм кăштах.

— Э-э.

Акăль, чăматанне уçса, Юмана шкул çулне çитнисене тăхăнмалли кĕпе, шăлавар, карттус тыттарчĕ — «Тăхăнса пăх-ха»,— терĕ. Амăшĕ хулпуççийĕ çине хĕллехи çăм тутăр уртса ячĕ.

— Эй, кашни хутĕнчех ма чăрманан, чăрманмалла марччĕ. Кĕтӳ кăлараппи тутăрпа! Хăвна уя, мана ĕнтĕ, карчăка...

Урине аппа (Акăль амăшне çапла чĕнеççĕ) чăх пуснă-мĕн хĕр ятне. Яшка техĕмĕ пĕтĕм пӳрте сарăлнă. Урине аппа нӳхрепрен сăра ăсса кĕчĕ.

Çиме ларчĕç. Юман кускала çӳрет. Ачасем патне урама тухса чупĕччĕ шкул тумне кăтартма — тĕттĕмленнĕ, ырана кĕтес пулать.

Акăль хăй ĕçĕпе хулари пурнăç çинчен каласа пачĕ, Урине аппа та ял çинчен пăртак сăмахласшăнччĕ — çын килсе кĕни чарчĕ.

— Ман килес. Çӳреççĕ-и? И-и, сирĕн те хăна пур иккен. Ан ятла та каçа юлса çӳренĕшĕн, Урине, нушам хамăн-çке. Зиновисем килнĕ. Çавсем валли тесе çĕркаç сăра пыллантарса лартрăм та, йӳçмест — тем амакĕ. Санăн çĕпрӳ хăватлă пулакан. Хăмла хăпармалăх парса ямăн-ши терĕм те...

Ку — Зиновий аппăшĕ, Акăле пырса ал пачĕ вăл.

«Зиновисем килнĕ... Çухалнă çын...» Акăль ăшра тем пĕçерсе кайнине туйрĕ.

Зиновий аппăшĕ Зиновипе Акăль хушшинчи тахçанхи çыхăнусене тĕшмĕртет те, çавăнпа сăмаха ытлашши вакласа-туса тăмарĕ, çĕпре тултарнă кĕленче савăта илсе, чăваш йăлипе «хамăр пата пырса ларăр» тесе хăварчĕ.

Юмана салтăнтарса çывăрма выртарчĕ Акăль. Амăшне сĕтел çи пуçтарма пулăшсан, хăй те ывăлĕ çумне кĕрсе выртрĕ

Шăплăх. Хиртен пĕччен трактор сасси илтĕнет. Сĕмлĕхе селĕм баян çурмаран çурчĕ, пĕр-ик кĕвĕ вылянтарнă хыççăн вăл та йăмрĕ. Зиновий аппăшĕсен тĕлĕнче каламарĕç-и? Акăлĕн ыйхă çĕтрĕ.

— Анне, лабккара шкула çӳремелли лайăх сумка пур, илсе памăн-и? — пăшăлтатать Юман. Хăй амăшĕ çумне тĕршĕнет-тĕршĕнет.

— Çывăр, Юманăм, çывăр, ыран кайса илĕпĕр,— çурăмĕнчен лăпкать ывăлне амăшĕ.

Шăплăх. Пӳрт умĕпе çамрăк мăшăр тытăнчăклăн чăхлатса иртсе кайрĕ. Таçта алăк чĕриклетрĕ. Йытă каçăхса кайса вĕрчĕ. Лере, униче патĕнче, тăлăх купăс сасси хĕрарăм чĕрине çĕçĕ пек сĕрсе илчĕ.

...Зиновий, ма пурнăçăма çĕмĕрсе хăвартăн эсĕ, Зиновий?! Нивушлĕ эпĕ саншăн япăх çул юлташĕ пулнă пулăттăм? Таптарăн манăн чи пирвайхи юратăва. Йăрăпăш, шапăлкка хĕрачаран пурнăç çине тимлесе пăхакан хĕрарăм пулса тăтăм. Чĕрене амантса хăвартăн пулин те, сана усал сунман эпĕ. Ăнлантăм эсĕ ырă мар çын иккеннине. Сана юрату мар, ман хĕрлĕх çеç сăхлантарнă иккен. Эпĕ пур, айван, пирвайхи туйăма сана парнелерĕм. Ку туйăма ман сана мар, Костьăна парнелемеллеччĕ. Костя-и? Вăл эс мар. Эсĕ, ак, пĕр уйăх манпа килентĕн те — урăх сас та памарăн. Çыру çыртăм — çырмарăн. Пулнă-иртнĕ, терĕн пулĕ. Пулни-иртнине каярах çеç ăнлантăм çав. Пĕлесчĕ сан, Зиновий, мĕнле хăрушă пулса кайрĕ мана çавна сиссе илсен. Пĕтĕм тĕнче сасартăках тĕксĕмленсе килчĕ. Ĕмĕт кашти шартах хуçăлчĕ — эпĕ питĕ, питĕ малалла вĕренесшĕнччĕ-çке, института кĕресшĕнччĕ, учитель пуласшăнччĕ. Çапла-ха та: халĕ эпĕ ĕçленĕ çĕртенех вĕренетĕп, иккĕмĕш курс пĕтернĕ. Ун чух хам çине хам ал хурас патнех çитнĕччĕ. Юман çăлса хăварчĕ.

Ашшĕ çук Юманăн. Юмана ашшĕ пирки çапла каласа ăнлантарнă: самолетпа ÿксе вилнĕ. Тен, ÿсерехпе мана вăл çак суяшăн каçармĕ те, пĕлместĕп. Анчах халлĕхе çапла туни кирлĕ: «Юман вĕлтĕрен кайăк мар, унăн ашшĕ пулнă».

Урине аппан та ыйхă вĕçнĕ. Урине аппа (çывăрса каяс умĕн): «Ах, çак ача-пăчасемпе. Ыйтаймарăм та, темле пурнать ĕнтĕ Борисĕ? Хамах айăплă пуль çав, хамах айăплă пуль... Иртĕхтерсе те ÿстермерĕм пек ĕнтĕ Борисне те, Акăльне те. Такама хыврĕç. Борисĕ апла пулчĕ, ав. Акăлĕ те... Акăлĕ тем хăтланать тата. Çырăвĕнче темле арçын пирки çырнă. Авланнăскер тет-и. Юрать-и вара пирĕн пеккисене çапла харсăрланма. Йĕркеллĕрех пуласчĕ те çав.

Малтанхипе телей пÿрмерĕ те, урăх шут та тытмалла мар пек те.

Ашшĕ таврăнаймарĕ вăрçăран, тăн парса çитĕнтермеллеччĕ те... Хамах айăплă пуль çав, хамах айăплă пуль.

Борисĕ чараксăра тухрĕ. Кӳршĕ яла киле кайса кĕчĕ. Ырă хĕрарăм çукчĕ-и ĕнтĕ ун тĕлне? Тепĕр тесен, пĕрлешнĕ-тĕк пĕрлех пурăнмаллаччĕ те — унта та ман пите хĕретрĕ: Шупашкарта тĕл пулнă хĕрарăмĕпе Çĕпĕре тухса тарнă. Эх, тур-тур, ĕмĕр тăршшĕпе çунтараççĕ амăшне. Акăль çырнипе, ку хĕрарăмĕ йĕркеллĕ-мĕн теха. Тепле малашĕ. Шăкăл-шăкăл пурăнччăрах. Лешĕн пирки, Борисăн пĕрремĕш пирки, тĕрлĕрен сас-хура çӳрет те. Халăх çăварĕ пĕлмесĕрех каламасть пулĕ: ун патне пĕтĕм ял арçынĕ иленнĕ, теççĕ те... Йĕркеллĕ пурăнса кайччăрах Борисĕсем, йĕркеллĕ пурăнса кайччăрах. Юрать-и вара пире пĕрмаях хамăр çинчен калаçтарма? Çын сăмахĕнчен иртес марччĕ...»

Кантăка çумăр пĕрчисем пырса перĕнчĕç. Шĕпĕртетме пуçларĕ. Пăчă. Акăль хăй çинчен утиялне сирсе пăрахрĕ.

«Çумăр, çумăр, çуллахи ăшă çумăр!.. Хĕрсем паçăрах ĕç пĕтерсе саланчĕç. Эпир, Константин Петровичпа иксĕмĕр, çумăра лекрĕмĕр.

Каçса кайса шăпăртатать çумăр. Эпĕ сăвăç мар, тумламсем асфальт çинче ура хуçса ташланине нимпе те танлаштарма пĕлместĕп. Пурпĕрех ăшă çумăра чунтан саватăп эпĕ. Çывăх тăван пек вăл маншăн. Ăша лăпкăлăх кĕртет.

Иксĕмĕр те сисетпĕр — пирĕн калаçмаллах. Тăсма юрамасть. Халĕ те тăватă çул тăсатпăр ĕнтĕ.

Çумăр иртрĕ те — хĕвел тӳпене тасалса тухрĕ. Константин Петрович та, эпĕ те троллейбус чарăннă çĕре утмарăмăр, вăрман енне пăрăнтăмăр. Эпир хута яма хатĕрлекен çурт — Етĕрне çулĕ çинче.

Çумăр хыççăн вăрманта — ирĕк. Йĕпе çулçăсем тумлам тăкаççĕ. Куккук авăтать. Çывăхрах шăпчăк пĕр çавра шăхăрса илчĕ.

Константин Петрович ман умра тăрать. Унăн лăпкă пичĕ ҫине пуҫ каҫăртса пăхатăп эпĕ.

— Акăль, суд пулчĕ — пире уйăрчĕҫ,— хăлхара янăраса каять Константин Петрович сасси.

Эпĕ шĕшкĕ тĕмисене сирсе шаларан шала кĕретĕп вăрмана. Мана ҫара хул ҫине тăкăнакан тумлам ҫӳҫентерет. Чим, мана тумлам мар, пурнăҫ алкумĕ умне килсе ҫитнĕ иккĕленӳ ҫӳҫентермест-и?

— Мĕншĕн?— хирĕҫлетĕп эпĕ, хам килĕшнине палăртасран хăраса. Константин Петрович ман ҫамка ҫине усăнса аннă ҫӳҫ пайăркине майлать, пит ҫине сырăннă тумлама кăштăркка пӳрнипе шăлса типĕтет.

Эпĕ пĕчĕк ача пекех ĕсĕклесе йĕретĕп, куҫҫулĕме Константин Петрович кăкăрĕ ҫине пытаратăп.

— Тепĕр ҫултан хваттерне те парĕҫ, ак. Унччен мĕнле те пулин общежитире те пурăнкалăпăр,— калаҫать Константин Петрович, манăн ытарайми арҫыннăм, Костя.— Юмана илсе килĕпĕр.

Чĕвен тăтăм та Костьăна мăйĕнчен ыталарăм. Темĕнччен итлесе тăтăмăр эпир хамăр чĕресен пĕрешкел таппине. Куккук чарăна пĕлми авăтрĕ...»

Ҫĕрлехи ҫумăр час иртсе кайрĕ. Акăль, тăрса, чӳречене уҫса ячĕ. Уҫă хум пӳлĕме варкăшса кĕчĕ.

Тинкки тухрĕ Акăлĕн ҫывăрса каяймасăр, пĕр аякĕ ҫине выртса пăхрĕ, тепĕр аякĕ ҫине, ӳпне ҫаврăнчĕ, месерле, ҫапла асапланкаласа хăй те сиссе ĕлкĕреймерĕ — тахăш вăхăтра ăна ыйхă чăптисен ҫуни ҫине хурса кайрĕҫ. Тарăн ыйха путас умĕн вăл ывăлне курчĕ. Ывăлĕ симĕс ҫаранпа ҫарран чупать пек. Юман чупнăҫемĕн ӳссе-ӳссе пырать пек. Акă Юман чăваш Улăпĕ пекех пулса тăчĕ — кĕреш пек ҫӳллĕ, чечек пек хитре...

Ҫак тĕлте Акăле ыйхă пусса-пусса килчĕ...

Кĕтӳҫ пушши шартлатнипе вăранса кайрĕ Акăль. Кас кĕтĕвне яраҫҫĕ иккен. Ав, амăшĕ, пĕр качакипе тăват сурăхне урама хуса тухрĕ.

Кун — тăп-тăрă, сывă. Ҫĕркаҫхи шухăшсенчен Акăль

хăйне уçах мар туйрĕ. Питне йĕпетсе илес терĕ — кăмака кукринче шыв пулмарĕ. Картишне тухрĕ. Пусă патне пычĕ.

Пĕр икĕ кун ялта пурăнать ĕнтĕ Акăль, амăшне килçурт ĕçĕнче пулăшкалать. Вĕренÿ çулĕ пуçланасси тата тăватă кун. Тепĕр кунсем кайсан та Юман ĕлкĕрмелле.

Пусă кутĕнчи такана шыв типнĕ. Виçĕ витре кăларса ячĕ унта Акăль. Виççĕмĕш витри чутах, аллинчен вĕçерĕнсе, пусса ÿкетчĕ. Хырăм тирне ыраттармаллах икĕ хутчен кăлтлаттарчĕ çĕнĕ чун. Тăнн хытса тăчĕ Акăль — каллех кăлтлаттарасса кĕтрĕ. Кăлтлаттармарĕ.

«Арçын ача пулсан, Костя хурăпăр — ашшĕ ятне; хĕрача пулсан, Акăль — амăшĕ ятне». Ку — Костя шухăшĕ.

Акăль пÿрте шыв ăсса кĕртсе лартрĕ. Çăвăнчĕ. Кăмăлĕ уçăлса кайрĕ унăн.

Урине аппа кĕтÿ ярса килчĕ. Ирхи апат хатĕрлеме тухрĕ. Акăль те унта тухрĕ.

— Бориссем темле пурăнаççĕ çавăнта, çÿреççи,— хĕрĕпе сăмах пуçарчĕ Урине аппа, ĕнерхи юлнă çур чăхпа яшка çакса çĕрулми шуратма ларчĕ.

— Çÿремесĕр, çÿреççĕ-ха. Эп сырманччĕ-и-ха, анне — вĕсем укçалла икĕ пÿлĕмлĕ хваттер илнĕç.

— Хваттерлĕ пулчĕç-и апла? Арăмĕ темлескер ĕнтĕ, те Борис килсе кăтартать пĕрре?

— Тĕрĕс турĕç-ха вĕсем, укçалла илсе, ахаллĕн хваттерне пит нумай кĕтмелле. Роза, Борис арăмĕ, шутсăр кăмăллăскер, тараватъ.

— Тараватъ-и? Килĕштерсе пурăнаççĕ-и хуть?

— Мĕн калаçатăн эс, анне — Бориспа çăвартан çăвара пурăнаççĕ. Вĕсен часах пĕчĕкки те çуралмалла — сана илсе каясшăн хăйсем патне.

— Мана? Хăйсем патне?

Урине аппа, çĕрулми шуратма пăрахса, чылайччен сăмах чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан хашш сывласа ячĕ.

— Мана, Бориссем патне тетĕн-и-ха? Тем, чун турт-


М 18030-чув
республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

масть хулана. Пурнăç çук пек туйăнать унта. Ирсерен кĕтÿ яма çÿрейместĕп, хĕвелĕ те таçтан, пÿрт хыçĕсенчен тухать, теççĕ. Ќивĕ пÿртрех ĕмĕр ĕмĕрлем ĕнтĕ, кунтах çĕре кĕрем. Борисăн та шухăшĕ тĕрлĕ пуль...

— Анне, Бориса аплах шанăççăра кăларас марччĕ.

— Эп мар, хăй хăтланать-çке.

— Тĕрĕс тунă вăл Çĕпĕре тухса кайса, тухса кайман пулсан, мĕн пайтиччĕ çав хĕрарăм çумĕнче, пĕтетчĕ Борис. Юрать-ха, Роза патне таврăнма хăюлăх çитернĕ. Роза унăн çерем уçнă чухне паллашнă хĕр юлташех. Эпĕ Бориспа Роза пĕрле пулнишĕн питĕ савăнатăп. Ан куллян, анне, вĕсем шутсăр килĕштерсе пурăнаççĕ.

— Тем пекехчĕ, хĕрĕм, тем пекехчĕ. Ќарта-хура та юхăнчĕ, пÿрт сиплеттересчĕ.

— Борис ун пирки те калаçкалатчĕ-ха, анне. Эс хулана куçасах темесен, çитес çулсем, укçа пуçтаркаласан, сан валли çурт та лартса парăпăр-и, тетчĕ-ха вăл.

— Çĕнни терĕн тата, мана, пĕччене, киввине тирпей кĕртсен те çитмелле...

Çĕрулми шуратса пĕтернĕ çĕре шывĕ те вĕреме кĕчĕ. Яшкана кишĕр, сухан тураса ячĕç. Тăвар калаттарчĕç.

— Эс ху пирки нимĕн те каламастăн-çке, хĕрĕм. Çырупа çырни чăнах-и?

— Чăнах, анне...

— Тĕрĕс шухăш тытнă-ши эсĕ, хĕрĕм, пуç тавра шухăшласа пăхрăн-и тĕплĕн, ÿкĕнмелле пулмĕ-и? Эсĕ халь текех вунсаккăрти хĕр мар ĕнтĕ.

— Ќурсанах кăмăлласа пăрахатăн акă эсĕ ăна, анне. Ќаларĕ тейĕн. Хăй вăл ырă, шутсăр ырă, арăмĕ çеç унăн усал пулнă. Костя мана нихăçан та кÿрентерес çук.

— Хусах арçын тĕлне пулаймарăн-и вара, хĕрĕм?

— Анне, апла ан кала... Эпир ача кĕтетпĕр.

Урине аппан та, Акăлĕн те сăмахĕсем сасартăк шалт пĕтсе ларчĕç. Антарас вăхăчĕ çитнине сиссерсе, яшка лăкăртатрĕ.

Тем ĕмĕтлĕччĕ ĕнтĕ Урине аппа? Миçе çул Юманпа

йапанса пуранчĕ вăл, Юманĕ пысăк çын пекех ăнкараймастчĕ пулин те — этем чунĕччĕ. Халĕ мĕнле-ха апла — Юман хулана вĕренме каять-и? Çук, çук, хĕрне те мăнукне те телей çеç сунать Урине аппа. Хăй пĕччен тăрса юлассине çеç кичемлетет ăна.

Кăнтăрла çитеспе Акăль, ывăлне çавăтса, лавккана утрĕ. Юман — вĕр-çĕнĕ шкул тумĕпе. Портфелĕ, чăнах та, пур иккен лавккинче — йĕпкĕн хураскер, тăпкăл-тăпкăл. Портфельпе пĕрле Акăль туртма та илсе пачĕ Юмана. Туртминче — ручкипе кăранташĕ те пур-мĕн. Çитнĕ савăнма Юмана — çиçе тăрать. Унăн çĕнĕ портфельпе туртмине часрах çитсе асламăшне кăтартасси килет.

Урама тухрĕç. Хирĕç... Зиновий килнине курах кайрĕ Акăль. Зиновий пĕр хĕрарăма хулĕнчен кĕлентĕрленĕ. Тем тесен те арăмĕ. Иккĕшĕ те самаях хĕрĕнкĕ. Урам илтмелле вырăсла янраса пыраççĕ. Акăльсене курсан, Зиновий чĕлхи сасартăках çыхланса ларчĕ, пичĕ çинчи кăпăш кулли таçта кайса кĕчĕ. Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă тĕлпулура хăйне мĕнле тыткаламаллине те ăнкарса пĕтерейменрĕ арçын. Сывлăх сунас терĕ — хăйĕнчен хăй хăраса ӳкрĕ, чарăнса сăмах хушас терĕ — Акăльсем иртсе те кайрĕç.

Чĕри шалтлатса тапрĕ Акăлĕн.

— Юман,— терĕ вăл пăртакран.— Куртăн-и çавсене?

— Вырăсла калаçса пыраканнисем-и?

— Çавсем. Вăт, астуса юл çав пиччӳне, Юман, вăл хăй пурнăçĕнче питĕ пысăк айăп тунă — ачине пăрахнă.

Калинкке умĕнче вĕсене Урине аппа кĕтсе илчĕ.

Акăл юпа пек тăнн хытрĕ.

— Тин кăна пуштăпа çӳрекен парса хăварчĕ, телеграмм, терĕ.

«Акăль, инкек. Константин Петрович ĕнер каçхине чĕре тытнипе вилсе кайрĕ. Зоя».

Акăль юпа пек тăнн хытрĕ.

Урам вĕçĕнче чанккамас инкĕш курăнса кайрĕ.

1968



## СУРАН

Нихвати тепĕр çулталăк çурăсенчен аллă çула çитмелли арçын. Хăй пурнăçĕпе кăмăлсăр мар вăл — кăмăллă. Халь тин унăн нимĕн пиркиех те ăш хыптарса çунмалли çук — пăхса çитĕнтерме ачи-пăчи пулман, килçурт çавăрас шухăш пăшăрхантарать теесрен — патшалăхĕ тахçанах хваттерлĕ тунă ăна. Пурăн та пурăн хуйха-суйха пĕлмесĕр. Пĕртен-пĕр чăрмавĕ те Нихватин ирпе ĕçе пуçтарăнасси те каçпа ĕçрен таврăнасси. Ирпе каç хушшинче вара вăл ата-пушмак ĕçĕпе тăрмашать — йăла комбинатĕнче ĕçлет. Сулахай алă лапписĕр çынна ку ĕçпе ĕçлеме çăмăлах мар ĕнтĕ, мĕн каласси. Çитменнине тата сылтăм ури чĕркуççи тĕлĕнчен татăк унăн. Аллине те, урине те протезлаттарнă-ха вăл, апла пулин те ата-пушмакпа айкашасси пысăк терт Нихватишĕн. Тертĕнчен ытла пилĕкĕ сурма пуçларĕ юлашки çулсенче, шалта та, чĕри енче, пĕрмаях тем чикекен пулчĕ. Çавăн-

пах-та-и вăл хăйне виççĕмĕш группа инвалидĕнчен иккĕмĕшне куçарттарма хистесе пăхасшăн пулчĕ. «Сывлăхăм та юхăна пуçларĕ, пурăнас кунсем те шутлă юлчĕç-тĕр, пăртак ĕçлемесĕртерех те пурăнас, сывмар укçи шучĕпе...» — çапла шухăш та канăçсăрлантарса тăчĕ ун чунне. Тĕрĕссипе калас-тăк, Нихватие сывмар укçи илсе тăрасси пĕрре те савăнтармасть. Савăнтарма мар, çакна вăл ылханать, чĕререн кураймасть. Сывмар укçи вырăнне ăна сулахай алă лаппине, сылтăм ури татăкне, пĕтĕм сывлăхне, вăрçăра иртнĕ çамрăклăх кунĕсене тавăрса парас пулсан, нимĕн те кирлĕ марччĕ. Тавăрса панă сывлăхĕшĕн çийĕнчен хăй укçа тӳлесе тăма пултарĕччĕ вăл.

...Черет вăрăм. Комисси йышăнакан пӳлĕме ăна часах чĕнмерĕç. Акă, кăкĕ таранах хăрах ури çук сулхăн арçын та кĕрсе тухрĕ, хирĕç сак çинчи арçыннăн ятне—хушаматне те каларĕç—Нихватие çав-çавах чĕнмерĕç те чĕнмерĕç. Маларах кĕрес кăмăлпа килнĕскер, кӳршисемпе сăмах вакласах каймарĕ вăл, ютшăнарах ларчĕ, ăшчик вăрканине пусарма тăрăшрĕ. Темшĕн паян иртенпех ăшĕ вăркать-ха унăн. Вăркама сăлтавĕ те çук ĕнтĕ, ĕçне те йĕркеллех туса пырать пек (куншăн ăна пĕрре кăна мар ырланă та), комисси те ретлех иртсе каймалла пек, пурпĕрех, такам чарăна пĕлми хăйăр юхтарса тăнăн, Нихвати ăшĕ вĕчĕлтетет те вĕчĕлтетет. Ăш вĕçнине пусарма тесе, ирхи апатпа пĕрле эрех тутанса пăхрĕ вăл, анчах çакă та пулăшмарĕ, пушшех ăшчикĕ çунма пуçларĕ...

...Вĕсем иккĕн темиçе талăк тайгапа аташса çӳреççĕ ĕнтĕ. Хĕр малта ыткăнать. Нихвати хĕре хăваласа çитесшĕн, унăн ăна хăваласа çитмеллех, мĕншĕн тесен малта вирхĕнсе чупаканĕ — вăл. Çук, темле тăрăшса чупсан та, каччă хĕре çитеймест. Темме çитеймест? Те хĕр хытă ыткăнса пынăран, те каччă хĕр чухлĕ те чупайманран? Акă, хĕр тăп чарăнса тăчĕ, лĕпĕш тутăрĕпе сулларĕ, пĕтĕм тайгана янраттарса черченкĕ куллине тăкса ячĕ, вара, ахăлтата-ахăлтатах, çĕнĕ вăйпа малалла вĕçтер-

чĕ. Нихвати хĕре çитмеллипех çитнĕччĕ, алă тăсса ăна ытамне илмелли çеç юлнăччĕ, шăп та шай çак вăхăтра лешĕ вăрт пăрăнчĕ те, каччă, чупма чарăнаймасăрах, иртсе кайрĕ.

Тайгари пĕтĕм йывăç-курăк калама çук илемлĕ юрă ĕнерет, ку юрра никам та нихăçан та илтмен, ăна урăх никам та нихăçан та илтмĕ, ку юрра çут тĕнче икĕ чĕре валли çеç хывнă.

Темле пулчĕ çак: те хĕр халтан кайса чупма чарăнчĕ, те каччă хуса çитрĕ ăна — вĕри алăсем куç хупса иличчен пĕр-пĕрин кĕлеткине çавăрса илчĕç, кăкăрĕсем пĕр-пĕрне тĕртĕнсе пĕçерчĕç, тутисем ырлăхланса пĕрлешрĕç. Çăтмах ĕмĕрне вĕçленмессĕн туйăнчĕ каччă, çăтмах вĕçленсенех хăй те пĕтессĕн, çунса каяссăн туйăнчĕ ăна.

Темле пулчĕ çак: сисмен çĕртенех каччă пĕччен тăрса юлчĕ. Хĕр, ытамран вĕçерĕнсе, тайгана шаларан-шала тарса кĕчĕ, çара урисемпе çĕре перĕнмесĕр чупрĕ. Нихвати те, тăна кĕрсе, хĕр хыççăн талпăнчĕ.

Хĕр аллинче — вĕсем иккĕш пĕрле шыранă кристалл. Мĕнле капла, вăл ăна тупнă-и? Мĕншĕн-ха апла Нихватие каламан? Кирек мĕнле пулсан та, асамлă кристала вĕсем иккĕшĕ пĕрле тупасшăнччĕ-çке, кирек мĕнле пулсан та иккĕшĕ пĕрле тупасшăнччĕ.

Хĕр, ту тăрринчен кĕрлесе анакан юханшыв умне çитсен, пат чарăнса тăчĕ, каялла çаврăнса, пасăрхи пекех тутăрне сулларĕ, унтан, çанçурăмне ялкăштарса илсе, çиçсе-çуталса тăракан кристалĕпе пĕрлех шыва сикрĕ. Юханшыва сиктересшĕн марччĕ Нихвати хĕре, тытса чарасшăнччĕ—ĕлкĕреймерĕ. Илсе каять вĕт-ха пирĕшти кристала! Хĕр ишет, юхăмпа кĕрешсе, тепĕр çырана ишет. Нихвати те ишет, вăл та шыва сикнĕ ĕнтĕ. Çапах та мĕн тума вăйĕ çук-ха унăн ишме, мĕн ăна шыв тĕпнелле туртать? Нихватин хăрах ал лаппи çук, сылтăм ури чĕркуççи тĕлĕнчен татăк. Ак тамаша, мĕнле астуман-ха вăл çакна шыва сикиччен? Халь тин каялла çаврăнмалли çук, малаллах, малаллах авăсмалла унăн,

хĕре хуса çитмелле. Хĕрĕн тепĕр çырана тухмалли те нумай юлман ĕнтĕ. Ăна аллинчи кристалĕ вăй парса пырать тейĕн. Нихвати те ишет, шăлне çыртса, çăлăнăç-лăн курăнакан çыран енне пур-çук халĕпе талпăнать...

— Порфирьев Мефодий Иванович эсир-и? Ма темиçе чĕнсен те чĕнместĕр çак? Эп, мĕн, сывăрсах кайнă тесе сире,— сасартăк янраса кайнă сасă Нихватие çутă тĕлĕкрен чăнлăха тавăрчĕ. Вăл пуçне çĕклерĕ те хăй умĕнче шурă халатлă хĕр тăнине курчĕ. Лешĕ Порфирьевăн комиссие пӳлĕмне кĕме черет çитни çинчен пĕлтерет-мĕн.

— Эпех-ха вăл, эпĕ...— сăмси айĕн мăкăртатрĕ Нихвати.

Иккĕмĕш хут аманса урине таттарсан, госпитальте выртнă чух курнăччĕ çак тĕлĕке Нихвати. Ун чухне вăл тĕлĕкне хăй тепĕр çырана ишсе çитичченех курса пĕтернĕччĕ, хальхинче, ак, путма путмарĕ, ишессе, ав, пурпĕрех ишсе çитеймерĕ. Те ишсе çитеетчĕ ĕнтĕ вăл тепĕр çырана?..

Нихвати ăшĕ вăрканине пусарма тăрăшрĕ, вăл, çамки çине пĕрчĕн-пĕрчĕн усăнса аннă çӳçне каялла вырттарса, йывăррăн çĕкленчĕ, шурă халатлă хĕр хыççăн лăкăштатса, пӳлĕме кĕчĕ. Васкамасăр тĕпелти тăрăхла сак çине пырса ларчĕ, çиелти кĕпипе аялти кĕпине хывса хăй çывăхне майласа хучĕ, сылтăм шăлавар пĕççине чĕркуççинчен çӳлерех туртса хăпартрĕ, сак çумне тĕрĕнтерсе хунă туйине асăрхамасăр тĕртсе ӳкерсе, ăна çĕклеме пĕшкĕннĕ чух кăкăрне темĕскер питĕрсе илнипе чыхăнса кайрĕ, туртăна-туртăна сывларĕ, шалти хăрăлти саспа чăм шыва ӳксе кĕрешрĕ. Пӳлĕнни çийĕнчех иртсе каймарĕ. Арçын чылайччен ĕххĕм-кĕххĕмлетсе, кăкăрне аллипе сăтăра-сăтăра, сывлăш юхăмне лăплантарса пычĕ. Кăкăрĕ лăш пулсан, шухăш çаври те йăл илме пикенчĕ Нихватин. Анчах та йăл илме пуçланă шухăш çаври уçăмланмах ĕлкĕреймерĕ — кĕтесри чаршава сирсе, хĕрарăм-тухтăр утса килни Нихватие пĕр вĕрилентерсе, пĕр сивĕнтерсе ячĕ. Тăнлавĕ сикме

пуçларĕ арçыннăн, ăшĕ чиксе кайрĕ. Вăл, тӳрре тухас пек сылтăм алли çине тĕревленсе тăма хăтланчĕ, анчах çакă питех те килĕшӳсĕр курăннине ăнкарса лăштах пусăрăнчĕ. Вара — «ку эпĕ, шăп та лăп эпĕ, Мефодий Порфирьев, манпа мĕн тăвас тетĕр — çавна тăвăр ĕнтĕ, эпĕ сирĕн аллăрта» — тенĕшкел пĕкĕрĕлсе, пĕчĕкленсе ларчĕ.

Хĕрарăм лăпкăн сывлăх сунчĕ, ку тĕлпулу ытти курнăçусенчен нимĕнпех те уйрăлса тăманнине систерсе, кирек мĕнле чирлĕ клиентпа та пуплеме хăнăхнă сăмахсемпех калаçа пуçларĕ.

Нихвати пусĕнчи шухăш арăш-пирĕш кумрĕ, катаччи чупрĕ. Темле тип лачакана, тергленсен те çăлăнса тухма çук тĕпсĕр шурлăха лекнĕн туйрĕ вăл хăйне. Çăмламас кăкăрĕпе татăк урине хĕрарăм курĕ тĕлĕнчен таçта пытарĕччĕ вăл, анчах та арçын йăшăлтатса ларни вĕçме ĕмĕтленнĕ кайăк вĕçмесĕрех ĕмĕрне ирттернĕн, хурлăхлăн та камитле курăнса тăчĕ. ВТЭК картишне тухсан тин хăйне ăн кĕнĕн туйрĕ Нихвати. Вăл тахăш кĕсйинчен табакĕ юхма пуçланă пирус туртса кăларса тивертсе ячĕ, пирусăн чуна самантлăха канăç кĕртекен вăркăш тĕтĕмне вăраххăн-вăраххăн çăтса, пуçри шухăшсене йĕркене кĕртме тăрăшрĕ. Нихвати, хыçлă сак çине пырса сĕвĕннĕскер, хăй пурнăçĕн иртнĕ кунĕсен асаилĕвĕсене çитсе тухнине те сиссе юлаймарĕ. Аваллăха çухалнă яшлăхĕ ăна алăкĕсене яри уçса кĕтсе илчĕ.

...Çур çĕр çитеспе çумăр витререн тăкнă пек чӳшкентерсе яни Ленăпа Нихватие нӳхреп çинчи хӳтлĕхе хăваласа кĕртрĕ. Нӳхреп çийĕ аслах мар пулин те, Лена çĕр каçмалли вырăнне кунтах сарнă. Нӳхреп çийĕн алăкĕ те пур, питĕркĕçпех — пĕччен чухне хупăнса выртма сых ягне пулĕ ĕнтĕ. Халĕ сых ягне хупăнасси çук — вĕсем иккĕн.

Урамри хурама айĕнче тăнă чухнех вĕриленсе çитнĕ çамрăк кĕлеткесем çын курĕ курман çĕрте тачăран-тачă пăчăртанчĕç, хушăран-хушă тутисем пĕрлеше-пĕрлеше илсе кăвар кăларчĕç, ăшă та çаврака сăмахсене пĕр-

пĕрне чĕвĕлтете-чĕвĕлтете пачĕç. Пыллăхланнă туйăм, тăкăнасла, чăп тулчĕ.

Çумăр, пытанса ларнă çамрăксене лачкам гăвас пекех, хӳтлĕх умĕнче чарăна пĕлми лӳшкет. Ыран Нихвати Мускава тухса каять. Кăна Лена та аван пĕлет-ха. Пĕлет те — ырă чун эрленет. Хĕр каччă кăкăрĕ çине питне пытарсах хӳхлеме хатĕр. Хӳхлĕччĕ те — капла хăтланни сăпайлă курăнмасран шикленет. Тем шутлама пултарĕха тата каччă... арçынна пĕлме çук.

Чăнах та, каччă шухăшĕ хальхи марччĕ ун чухне — урăхларахчĕ. Ленăна тӳрех хăнăхайманччĕ вăл — пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, хăй сисмесĕртерех пулса пынăччĕ ку. Хăнăхнăçемĕн Ленăсăр тем çитмен пек туйăнса пыра пуçланăччĕ. Каярахпа вĕчĕхнĕ шиклĕх те çатăрласа илнĕччĕ Нихватие. Хăйсĕр пуçне Ленăна такам вĕçĕмех сăнаса çӳрессĕн, çав сăнаса тăраканни Нихватие шăхăртса хăварма меллĕ самант çеç кĕтсе тăрассăн туйăнатчĕ ăна. Ыйăхĕ çĕтнĕччĕ Нихватин, çĕрлесерен, Ленăна асатса таврăнмассерен, кăтăш пулаймасăр хăшкăлатчĕ, кăтăш пулсан та шарт сиксе вăрана-вăрана каятчĕ. Тĕлĕкĕсем те пĕрьевĕрленсе кайнăччĕ унăн — йăрăс кĕлеткке, тем шутпа, пĕрмаях таçта йыхăратчĕ. Кăнтăр çутипе те Нихвати Ленăра çав кĕлеткенех куратчĕ. Вăхăтăнвăхăтăн Ленăна вăл пĕлĕтрен аннă пирĕштипе танлаштаратчĕ, хăйне ун çумĕнче çӳп вырăнне те хумастчĕ. Хĕре систермесĕр Мускава тухса каяс шучĕ те пурччĕ унăн — кунашкал тума хăюлăхĕ çитсех пĕтеймерĕ, çавăнпа вăл çаплипех çунчĕ, асапланчĕ, кĕвĕçрĕ.

Мускава каяс вăхăт çывхарса килнĕçем Нихвати кăлăк чăххи пек лара-тăра пĕлмерĕ — тĕрлĕ шухăш авăрĕнче асапланчĕ. Пуç тавра çавăрсан — Лена та начарах кил хуçи пулас çук пек. Туй туса пĕрлешесси çинчен те тĕв аталантарчĕ Нихвати. Темме-çке шăп çак тĕле çитсенех ăна пĕр япала хăратса ӳкерет, çамрăклăхра чи кирли — ирĕклĕ пурнăç алăран вĕçерĕнсе тарассăн туйăнать.

Шухăш серепи чăлхантарать те чăлхантарать Нихватие. Хӳтлĕхри сĕмлĕх те чăрсăрланма хистет пек.

— Лена, эп сана чăнах та юрататăп,— пăшăлтатрĕ каччă, ансăр вырăн çинче хĕре çупăрласа ларнă май.— Ĕненсем?!

— Ан шарла, Мефодь, мана капла та, сăмаххусемсĕрех ырă. Атя, шăпăрт пулар?.. Санăн калаçас килет-и?

— Лена, манăн калаçас, калаçас, чарăнми сăмахлас килет, тата...— Нихвати кĕтмен хăюлăхпа хĕре вĕрин чуптума пуçларĕ, аллисене ирĕке ячĕ.

— Мефодь, мĕн хăтланатăн эс,— айăпсăррăн та хыпăнса илтĕнчĕ хĕр сасси. Лена пĕвĕпе туртăнса вăй пуçтарчĕ те Нихвати аллисене çатăрларĕ. Унăн сулахай алли, пилĕкĕ айне лексе, хирĕнчĕ—хĕр йынăшса ячĕ. Хăй ытлашши хĕрӳленнине тавçăрса илчĕ Нихвати, апла пулин те ăшĕнчи ӳкĕнĕçĕ çиеле тухмарĕ унăн. Вăл, хĕрĕн хирĕннĕ аллине тути патне илсе пырса, лĕпĕш çунаттине ачашланă пек, чарăна пĕлми чуптурĕ, çепĕç сăмахсем çнĕрсе ейленчĕ. Лена çав-çавах хирĕçлерĕ, йĕркеллĕ пулма йăлăнчĕ, юрату çапла пулманнипе те лĕгмессе ĕнентерчĕ. Нихвати ыранах çырăнма, хут уйăрттарма каяссине шантарчĕ, çине тăчĕ...

Тулта, нӳхреп алăкĕ умĕнче, савăнăçлă вăйне ниçта чикеймесĕр, çумăр сиккелерĕ. Шалта хĕрĕн кӳренĕçлĕ куççулĕ чăлт-шурă минтере йĕпетрĕ...

Тем çинчен калаçма та сăмах тупăнчĕ вĕсен. Ытларах Ленăн çепĕç чĕлхи чĕвĕлтетрĕ. Хăй институт пĕтерпĕ май пульницара ĕçлеме пуçласа, Нихватие укçа-тенкĕпе пулăшса пырасси пирки, ашшĕ-амăшĕсене иккĕш пĕрлешнине пĕлтерсе хурасси пирки, хăй упăшкишĕн (халь упăшка ĕнтĕ) çав тери тунсăхласа пурăнасси, çĕр çывăраймасси пирки тата темтепĕр пирки пулчĕ хĕр сăмах-юмахĕ. Нихвати сăмахланçи пулмарĕ, Лена пупленине кăшт итлекелесе выртнă хыççăн, вăл тутлăн харлаттара пуçларĕ...

...Нихватие тата тепĕр çумăр асне килчĕ. Анчах та

ку çĕрлехи марччĕ ĕнтĕ — кăнтăрлахиччĕ. Çăвасса вăл çĕрлехи пекех çапса çунăччĕ-ха — системесĕр килсе тăкăннăччĕ те волейбол вăййине вылякансене хӳтлĕхе чупса çитиччен шапăрах шӳтернĕччĕ. Шĕвессе Нихватипе Лена та лачкам шӳнĕччĕ. Шăпах çак çумăра пула çывăхланнăччĕ те вĕсем иккĕш, пĕлессе хĕр ятне те çавăн чухне тин пĕлнĕччĕ Нихвати. Çывăхланасси-мĕнĕ — эрнесем те пулатчĕ пулĕ яштака та пиçĕ çанçурăмлă пике стадиона çӳреме пуçлани. Каччă ăна тӳрех куç хыврĕ, куç хыврĕ те куç хывмасăр пулчĕ. Хĕр волейбол вăййине савать-мĕн, çавăнпа вăл текех каччă (каччă команда пуçĕччĕ) хăйне вăййа илештерме йăлăнчĕ. Командăра, чăн та, пĕри çитме-çитместчĕ, апла пулин те Нихвати хĕре илештермерĕ, унран халиччен мечĕк тытса курманран тăрăхланă пек тăрăхларĕ, хăйне «малтан ыттисем мĕнле вылянине кур, кайран ху та тепеçленсе пăхăн», тенĕшкел тыткаларĕ. Каччă çапла куçкĕретех тăрăхлани Ленăна çиллентерчĕ пулсан та, вăл çакна кăтартмарĕ, çуйланакан кăмăлне ăшĕнчех хăварса, сăмах-юмаха хиврелетмерĕ. Халĕ тата, акă, çумăр чӳшкĕнгерчĕ. Хӳтлĕхе лачкам пулнă хĕр чупса çитнине курсан, кунта пуçтарăннисем пĕр харăс ахăлтатса ячĕç. Лена пĕрлĕхен пек хĕрелчĕ, именсе алăк умнерех сиксе тăчĕ. Нихватин те ыттисемпе кĕтĕр-кетĕрленсе ахăлтатасси килсе кайнăччĕ, анчах та ахăлтатас вырăнне вăл, хĕре йĕпе хуленчен çатăрласа, хӳтлĕх тул енне çавăтса тухрĕ. Хӳтлĕх карнисĕ вăрăм пирки кунта та çумăр ӳкмест-мĕн.

— Мана Мефодий теççĕ, шупашкарсемех, геологи институтĕнче, Мускавра вĕренетĕп. Халь каникулра. Эс ăçтан?

— Шур Шупашкартан,— йăл кулчĕ хĕр,— Лена. Хусанта мединститут пĕтертĕм кăçал. Ĕçлессе çав республикăрах пĕр ялта ĕçлетĕп.

— Эп сана пĕр-пĕр Матĕрне тесе...

— А эп сана... пĕр-пĕр кукша Иван тесе...

— Э, чĕлхӳ те шăртлă-çке сан. Çӳçне ăна юри шакла кастартăм-ха, мечĕкле выляма чăрмантарать...

— Ташла пӗлмене кӗвӗ килӗшмен тенӗ пек...
— Ташлама ӑна пӗлетпӗр-ха, славнӑях... Эс мана хытах ҫиллентӗн-и, Лена?
— Ҫапса пӑрахассах ҫитрӗм.
— Ҫылӑха каҫарттарам, халь пирӗн командӑра выльӑн.
— Пуш сӑмах-и? Ултавлас тетӗн, ҫапла-и?
— Мӗн, выляс килмест-им?
— Халь тесен халь. Кичем килте. Кӗнекепе ларса пӑчӑхнӑ, ҫулталӑк тӑршшӗпех, институтра та эпӗ волейбол секцине ҫӳренӗ...
Ҫумӑр тамалсанах Лена, йӗпеннӗ платйине туратран типме уртса ярса, вӑййа хӗрӳленсе пикенчӗ. Вӑл ӑста вылямапултарни пурне те куранчӗ, илмелле мар мечӗксенех илсе пачӗ вӑл. Ҫакӑ ӑна команда куҫӗ умӗнче хӑпартрӗ. Выляса икӗ команди пӗр евӗрлӗрех, хыпӑнса ӳкмесӗртерех вылярӗҫ, ҫӗнтерессе пурпӗрех Нихвати команди ҫӗнтерчӗ. Ҫӗнтерӳшӗн Лена ачалла сике-сике савӑнчӗ. Вӑйӑ хыҫҫӑн каччӑ хӗре килне ӑсатса ячӗ...
Тата мӗне астӑвать-ха Нихвати? Пӗрремӗш хут Ленӑна чуптунине астӑвать, акӑ мӗне?
— Вара чуптутармастӑн та-и, Лена? Эп мӗн тесе, эсӗ мана пӑртак та пулин кӑмӑллан тесе...
— Намӑссӑр эс, Мефодий, йӗксӗкпе танах! Хӗрпе кам ҫапла калаҫать!
— Вӗҫкӗн эп. Тата, мӗн, э-э... санпа урӑхла калаҫма пултараймастӑп... хӑратӑп санран...
— Хӑратӑн???
Тӗлӗнсе ыйтни кӗтмен-ҫӗртен хаярран айӑпланӑ пек, «хӑратӑн, хӑратӑн! хӑратӑн!» тесе, пуҫ мимине ыраттарса, вӗтелесе каять. Нӳхреп ҫинчи каҫ тепӗр чух Нихвати асне килсе лекет, ҫутӑлас умӗн Ленӑсен килкартинчен хӑй епле хӑравҫӑлла тухса шӑвӑнни куранса каять. Нӳхреп ҫинчи каҫа ҫыру хупласа хурать. Ҫырура пӗр сӑмах анчах: «Йӗксӗк». Сӑмахӗ хӑлхана ҫурса, тавӑрул-лӑн, сиввӗн, ҫиллес янӑрать. Ҫак сӑмахран нихӑш шӑтӑка, нимле ҫурӑка та тарса пытанма ҫук пек...

«...Йёксёк? Эпё йёксёк-и? Мёншён йёксёк?— аптрарё Нихвати.— Çыру çырайман пултăр, вара мён? Эпё çырасшăнччё-çке,— ёлкёреймерём çеç. Эсё виçё уйăхра çичё çыру çыртăн — эпё пёрре те çыраймарăм. Вара çакăншăн айăпламалла-и-ха? Çырăвусем пёринчен тепри ачашчё, вёриччё, каярахпа çеç сивёнме пуçларёç вёсем. Укçа та ярса патăн, пуçласа илнё ёç укçинчен, терён. Мён тума кирлё пулчё мана ку укçа, мёншён ярса патăн, Лена? Эпё сан пулăшусăр пурăнаймăп терён-и? Укçушăн тав сăмахё те çыраймарăм — ерçеймерём. Йёксёк-и эпё? Мёншён йёксёк?.. Эпё вёренсе пётерессе ёмётлентён, пёрле пурăнса йăва çавăрасса шантăн, çемье телейёшён тунсăхларăн. Юрать-и-ха мана айăплама, енчен те эпё санран сивёнсе пыма пуçларăм пулсан, э? Лена? Санран уйрăлсанах тўрех сивёнтём тесе каласшăн мар эп хама, пачах та апла мар, çук. Нўхреп çийёнчи каç иртнё-иртменех саншăн темле ырă-ырă япала туса парас килетчё манăн. Қайрантарахпа сиссе те юлаймарăм: çав ырă-ырă япала таçта амака кайса çётрё, чун кётесёсене те пăхса çаврăнтăм — тупаймарăм çавна.

Сана пурпёрех шеллетёп эпё, Ле-на. Мён тума шелленине пёлместёп — анчах шеллетёп...

Йёксёк? Эпё йёксёк-и? Мёншён йёксёк?.. Халё те йёксёк-и эсё, Мефодий!..»

— Халё те кайман-и вара эсир... Мефодий?

— Мён? Э-э-э... Пирус чёртме тесе ларсаттăм та ларсах кайнă...

Тўпене сăрă пёлётсем карса илнё. Çўçенчёк çил вёренçи тăвать.

...Протез ураллă арçынпа тăпăл-тăпăл пў-силлё хёрарăм, кёрхи кунăн чёмсёр илемне хаваслăхпа çуйхатмасăр, хула урамёпе сайра пёрре сăмах чёнкелесе утрёç.

— Ак, эп çитрём те. Хваттерём ман — çўлти хутра, сулахай енчи пиллёкмёшпе улттăмёш чўречесем... Кёрсе курăр, кăмăлăр пулсан...

— Ҫӑмӑлӗ апла та, капла та пулӗ-ха вӑл... Ав, ҫумӑр тапранма кирлӗ, унччен киле ҫитсе ӳкесчӗ теп те.

Мӗн ухмахӗшӗн кӗрет-ха ют хӗрарӑм хваттерне Нихвати? Анчах та ҫак ют хӗрарӑм уншӑн яланах ют пулнӑ-ши? Тен, Нихвати ҫеҫ хӑйшӗн хӑй ют?

Алӑк сассӑр уҫӑлчӗ. Хӗрарӑм хӑнана курткине хывса ҫакма пулӑшрӗ, тӗпелелле иртме сӗнчӗ. Тӗпелте — пӗчӗк диван. Диван ҫине пырса ларчӗ Нихвати. Пырса ларчӗ те тытамак тытнӑ пек чӗтренсе илчӗ. Чечеклӗ стена ҫумне ҫапнӑ рамӑра вӑл никама та мар, хӑйне, ҫап-ҫамрӑк Нихватие, курчӗ. Унта вӑл пӗччен мар — хӗрпе ларать. Хӗрӗ вара — Лена. Сӑнӳкерчӗкри икӗ ҫын куҫӗ те диван ҫине вырнаҫнӑ арҫынна — протез ураллӑ Нихватие тинкернӗ. Татӑк ури йӑшӑлт сикнӗн туйӑнчӗ арҫынна, ҫӑкӑрӗ пӳлӗнсе хӑйӑлтатрӗ. Нихвати тӑма хӑтланчӗ, анчах та вӑл, ҫурри ҫӗкленнӗскер, кухньӑран Лена патнуспа ӗҫме-ҫиме ҫӗклесе кӗнине курсан, лӑкӑшт каялла ларчӗ. Ҫӑкӑрӗнчи хӑйӑлти сасӑ, ӗххӗм-ӗххӗме куҫса, пӳлӗме шеллев туйӑмӗ кӗртсе тӑчӗ.

— Шыв ӗҫӗр-ха, шыв, шыв!..

Нихвати, шыв тултарса панӑ савӑта аяккалларах шутарса, патнусри эрех кӗленчи ҫине пӳрнипе тӗллерӗ. Икӗ черкке ланкӑртаттарчӗ вӑл.

Сӗтел хушшинче Лена та ятне икӗ черкке ӗҫсе пачӗ. Нихвати каланмарӗ. Ҫалаҫса пӗтернӗн туйрӗ вӑл хӑйне. Чӗмсӗрленсе, ҫӑварне шыв сыпса ларчӗ. Сыпасса эрех сыпрӗ-ха Нихвати — шыв мар. Сыпмассерен, черкке ӳпӗнтермессерен тӑнӗ уҫӑлма, ӗренкӗленме пуҫланӑн туйӑнчӗ ӑна. Сӑмах та чӗнсе пӑхасшӑнччӗ — мӗнлерех чӗнмеллине ӑнкараймарӗ. Чухлама чухлакаларӗ-ха — ҫавӑн ҫинчен чӗнме юрамаллипе юрамалла маррине тавҫӑрсах пӗтерейменерӗ.

Икӗ ҫын сӗтелӗ йӗп ҫухатса йӗп шыраса хӑшкӑлнине аса илтерчӗ. Кил хуҫин те калаҫас, сӑмах ваклас тени палӑрмарӗ.

Нихвати чавсаланнӑ ҫӗртен ҫӗкленчӗ, стена ҫумне

çакнă сăнŭкерчĕк умне пырса, ăна шăтарасла тинкерчĕ, тепĕртакран ун кусĕсем этажерка тăрринчи тепĕр сăнŭкерчĕке асăрхарĕç, асăрхарĕç те алчăраса ŭкрĕç. Нихвати шăнтса пăрахрĕ. Хăрама пуçларĕ вăл. Çак юрлă ту тăррисем хушшинче тăракан яштака каччă вăйлăн çутăлтарса янăн туйăнчĕ ăна çак самантра.

— ...Лена, ниушлĕ çаплах?— хăйăлтатрĕ Нихвати.

Лена чĕнмерĕ.

— Ниушлĕ ку çаплах, Лена?

— Çаплах... Мефодий... çаплах.

Нихвати персе амантнă кайăкла алăкăн-тĕпелĕн лăкăштатрĕ. Лăкăштатса ывăнсан — диван çине тŭнчĕ.

— Епле-ха капла?

— Халь вăл Урал тăвĕсем çинче, экспедицире... Килессе отпуска тепĕр çур уйăхран килмелле. Çулленех хăй ĕçленĕ çĕре кусса пыма йыхравлать — ăçта тапранăп ĕнтĕ эп çуралнă çĕршывран. Тата унăн хăйĕн çемйи...

— Пулма пултараймасть? Ниушлĕ çаплах?—анăрашрĕ Нихвати.— Мĕнле-ха капла, çирĕм çул ытла пĕр сас тумасăр, Лена?

— Ан ыйт кун çинчен. Эп сана... пирĕн ывăл пурри çинчен пĕлтерме чĕнмерĕм. Эп сана тахçанхи пĕлĕшŭ патне çеç кĕрсе курма сĕнтĕм... Тепĕр тесен, ман пурнăçпа паллашни санăн япăхах пулмĕ, терĕм.

— Çапла, çапла, эп... мĕне тивĕç пулам?.. Лена, тавăру-и ку, мĕскер, ман мăшкăл-и?

— Çук, нимĕн те ан шутла. Кун чухлĕ пĕлни те çитĕ. Ан асаплантар хăвна. Пур тĕрлĕ асаплану та хитре курăнмасть. Тата... Мĕн пултăр ĕнтĕ пирĕн хушăмăрта пĕр пекки...

— Мĕн ятлă вăл?

— Мефодий.

— Мефодий?!

— Çапла. Сан яту. Эп ăна ят тупайман енне çеç сан ятлă хунă.

— Мĕн гĕлет сăл ашшĕ ҫинчен?

— Ашшĕ унăн иртнĕ вăрҫăра паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Ҫавăнпа унăн сăнӳкерчĕкĕ пур та ҫак килте.

Нихвати пӳлĕне-пӳлĕне сывларĕ, кăкăрĕ тикĕс мар ҫулпа урапа хăнкăртатса пынă евĕр хăпара-хăпара анчĕ. Вăл, сăпайлăх карти-хурине чухламасăр, чĕтрекен аллипе эрех кĕленчине илсе, ҫăварĕнченех ĕҫме хăтланчĕ.

— Мĕн тăватăн эсĕ, Мефодий? Пĕтетĕн вĕт капла?-- арҫын аллинчи кĕленчене вăйпах тăпăлтарса хăй умне пуҫтарса лартрĕ хĕрарăм, самантлăха та ҫухалса каймасăр.

Нихвати алăк патне сĕнкĕлтетрĕ. Мăшлатса та хашлатса аттине тăхăнма пикенчĕ, тăхăннă чух хăрах ури ҫинче тытăнса тăраймарĕ — сулăнса кайрĕ. Ӳкме ӳкмерĕ — алăк хăлăпĕнчен тĕревленсе юлчĕ. Курткине тăхăннă чух тепĕр хут тӳнеслех сулăнса кайрĕ — хальхинче те тӳнмерĕ — пăтари пальторан уртăнма ĕлкĕрчĕ. Пальто ҫакки, йывăрăша чăтса тăраймасăр, ҫатлатса татăлчĕ, ҫын ӳкмеллехчĕ — хĕрарăм, вăхăтра пырса тăрса, хăй кĕлеткипе тĕрев пачĕ.

— Қаҫар... кĕтмен хăнана...— ҫирĕм ҫул ыгла ĕлĕкрех хăй ытамĕнче тытса ачашланă хĕрарăм кĕлеткитепĕр хут ун ытамна килсе лексен, Нихватин лĕштĕркенĕ ҫанҫурăмĕ пĕҫерсе кайрĕ. Нихвати, аван мар туйăмаҫийĕнчех сĕвĕртес тесе, хĕрарăм кĕлеткинчен сирĕлессĕн тӳрленме хăтланчĕ — тӳрленеймерĕ, урисем лĕнчĕрех кайни ăна хĕрарăм хӳттинчех хăварчĕ.

— Амăшĕ,— нихҫан каласа курман сăмаха ытлăхлăн пăшăлтатрĕ хĕрĕнкĕ арҫын.— Амăшĕ...

Эрехпе тата шухăшпа кушăрханă тути унăн хĕрарăм пичĕ патнех ҫывхарчĕ. Ҫав тери ҫывăхра арҫын шутсăр тăван куҫсене курчĕ. Ҫав куҫсем патне ҫывхарнăҫем хĕрарăм куҫĕсем чĕркĕмĕлленме-шывланма пуҫларĕҫ, шывланнăҫемĕн вата сăн ӳкнĕ питҫăмартисем тăрăх вилĕмсĕрлĕх тумламĕсем — куҫҫуль пĕрчисем йăлтăртатса анчĕҫ.

— Мĕнле япăхса кайнă эсĕ, Мефодь... Хăраса каймалла...

— Эсĕ ан хăра, Лена,— Нихвати тути хĕрарăм питçăмарти çинчи юхса анма ĕлкĕреймен куççуль пĕрчине типĕтсе илчĕ...

— Айван эсĕ, Мефодь, ывăл пекех... тата путишскер,— хĕрарăм, аванмарланса, вăтанăçлăн арçын кăкри çумне лăпчăнчĕ.

Вĕсем каялла диван çине пырса ларчĕç.

— Эпĕ сана малтанхи çулсенче каçармиех çилленнĕччĕ,— шакăлтатрĕ Лена.— Эсĕ сусăрланса юлнине вăрçă хыççăн пĕлтĕм те, ман тарăхăвăм пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн иртсе пычĕ. Сана ахаль те йывăр килнĕ, ытлашши тепĕр çакă ан пултăр, терĕм. Хăв маншăн пулмарăн пулсан та, ачашăн ăшăмра тав тăваттăм. Пăхса ӳстертĕм çапла, пĕчченех...

Нихвати кăкăрне пĕтĕм çанçурăмне канăçлантаракан ăшă туйăм юхса кĕчĕ. Вăл чылайччен çак савăнăçпа киленсе ларчĕ. Киленĕç сĕлкĕшлентерме тапратсан, вăл хыпаланса ӳкрĕ, тĕрев туйине аллине илсе, кайма пуçтарăнчĕ.

— Мефодь, çĕрлене кура ăçта тухса каятăн-ха? Утса çитеймĕн... юл...

—...Тĕттĕм каç. Çарамас çил кассăн-кассăн вĕрсе иртет те, кассăн-кассăн йĕпхӳ сапса хăварать. Чĕрĕ сывлăш Нихвати кăкăрне уçăлтарсах ячĕ.

«Йĕксĕк? Мĕншĕн йĕксĕк? Эпĕ йĕксĕк-и?»

«Эсĕ йĕксĕк! Хăвна, Ленăна, ывăлна улталанăшăн!»

«Ывăл? Манăн ывăл? Çук ман ывăл! Пулман ман ывăл, пулман!»

«Мĕн пулнă вара ман? Мĕн те пулин пулмаллах-çке?»

«Ĕмĕт пулнă!»

«Ĕмĕт? Анчах та вăл тахçанах сӳннĕ-çке! Вăрçă сӳнтернĕ ăна, хаяр вăрçă! Ĕç анчах юлнă ман, ĕç!»

«Ĕç? Ĕç çитмест-им вара мана? Эпĕ атă-пушмак тĕпĕ çапатăп. Çынна ыр тăвататăп. Çитмест-и ку?..»

«Ывăл? Ман ывăл-и? Унăн ĕмĕрĕ урăх, хĕвеллĕ. Манăн пачах урăхла пулнă. Ман ĕмĕре нимĕç йытти çирĕ!»

«Ĕмĕр? Ĕмĕр тетĕп-и? Çын пулма вара ĕмĕр кирлĕ-ши? Ывăлăм, кала-ха?!»

«Ывăл? Ман ывăл-и?.. Маттур вăл, ашшĕ ĕмĕтне пурнăçланă. Пăх-ха — геолог!»

«Ашшĕ? Мĕнле ашшĕ? Эпĕ ашшĕ-и...»

...Ăшчикĕ, кăмăлĕ кĕтмен-çĕртен пăтранма пуçлани Нихватие шĕлтĕрех ывăнтарса ячĕ. Кăкăрĕ хĕссе килчĕ, сулахай хул калакĕ тĕлĕнче темскер йĕппе тирнĕ пек тирсе кайрĕ. Подъезда çитсе ўкме инçех те юлманччĕ — протезлă ури хăяккăнтарах пусăнчĕ те, Нихвати, патаккипе тĕрев парса ĕлкĕреймесĕр, йĕпе асфальт çине тĕшĕрĕлсе анчĕ. Тăрас-тăрас тесе, хăйне вăл пĕр-икĕ хутчен те хистевлесе пăхрĕ — вăйсăрланнă кĕлетки çĕр çумĕнчен пўрпĕрех хăпасшăн пулмарĕ.

Нихвати чуна халсăрлатакан темле канăçлăха кĕрсе ўкрĕ, ун асăнче Ленăпа нихăçан та курман ывăлĕ çунатлă кĕмĕл кайăксем пекваркăшса иртрĕç. Йĕпхў шĕпĕртетрĕ. Кĕрхи ырхан çил вĕрчĕ. Шўнĕ çулçăсем татăла-татăла ўкрĕç.

Чылайччен çапла выртрĕ Нихвати, çанçурăмне сивĕ тытма пуçласан — тăна кĕчĕ. Аякках мар ывтăнса кайнă патаккине хыпашласа тупрĕ, тăчĕ, тăнă чух сулăнса кайрĕ, ўкмерĕ, вара ерипен, ураран ура куçарса, çурчĕ еннелле лăкăштатрĕ.

1968



# ÇАПСА ÇУМĂР ÇĂВАТЬ

ХАКЛА ÇЫННАМА —
ВАЛЯ КОНСТАНТИНОВАНА

Çумăр çапса çăвать, сиввĕн, ăшчике витермелле. Вĕтĕ тумламсем вăхăтăн-вăхăтăн кабина кĕленчине пăчăр-пăчăр хупласа хурaççĕ — касмăкран чӳшкĕнтерне пек чӳшкĕнтерет, «шăпăрсем» ӳркенменни çеç шофера çăлăнăç, унсăрăн машинине çул хĕрне тăратсах çумăр тамаласса кĕтме тивĕччĕ унăн. Çумăр тамаласса вара — аса та ан ил: шавкăнтарать те шавкăнтарать.

Тарас газикне ахаль те асăрхануллăн тытса пырать, çул çинче ун-кун сиксе тухасран умри çутă лаптăкне тинкерет. Çав лаптăкра вĕçĕмех пĕр ӳкерчĕк: çумăр хӳхлевĕ, тумлам ăсран каясла çатăлтатни.

Декабрь çурри çитнĕ тесе те калаймăн: лапра-çĕпре. Çак лапра-çĕпрере темĕн ырă марри упаленет пек. Ăна тытса чарма та, тĕксе яма та хал çитмессĕн туйăнать.

Пĕтĕм таврана хупăрласа илнĕ вăл, тĕм-хура витĕнкĕçпе пĕркенĕ. Тарас кăмăлĕ те сулхăн, ăшăнчăксăр. Унăн кăмăлĕ ĕнтĕ паян кăна мар, чылайранпах, арăмĕ пăрахса тухса кайнăранпах çапла.

Тухса каясса унăн Лидийĕ хăйсем пĕрлешсен иккĕмĕш çулнех пирвайхи хут пăрахса тухса кайнăччĕ, амăшĕ патне, Украинăна.

«Тарас, ан та пырса çӳре, эпир пурпĕрех пĕрле пурăнаяс çук». Тарас вара пурпĕрех пырса çӳрерĕ, пĕрле пурăнма ӳкĕтлерĕ, çемьене аркатма кирлĕ маррине ĕнентерчĕ, ӳлĕм пурте йĕркеллĕ пуласса шантарчĕ.

Тепĕр çултан вĕсен Вадим çут тĕнчене килчĕ. Тарас çĕнĕ кайăкшăн каçсах кайрĕ, пĕлĕт çинчен сикменни çеç, вĕçĕм ачипе, кăнтăр апатне сехетлĕхе килсен те ун койки умĕнчен хăпма пĕлместчĕ.

Пĕрлешнĕ чух çын патне вырнаçнăскерсен, çĕнĕрен хваттер шырамалла килсе тухрĕ: ача сассине юратмасть иккен хуçа арăмĕ — ĕлĕк те йăлăхнă имĕш. Тарас вара хваттер шыраса-туса тăмарĕ, кăшт-кашт пуçтаркаланă укçипе «засыпушка» туянса ячĕ. Çурчĕ пысăкки пысăках мар ĕнтĕ — кĕрсе тухмалăх çеç, пурпĕрех çын патĕнче мар, ир каятăн-и, каç килетĕн-и — хăвăн кĕтес. Çав паха. Ĕçĕнчен тахçан парасси пур-ха, черет тахçан çитет. Тарас пысăк вырăнти çын мар, пĕр кантурти ахаль шофер çеç, хăйĕн пеккисем те унта вуннăн, пĕрин те путлĕ хваттер çук, пурте çамрăксем, такама такам вырăнне хурса такама малтан тыттармалла-ха хваттерне. Чăн та, хваттер тĕлĕшĕпе ку кантурта питĕ тăкăскă вара — çуллен хăрах çемье валли те тивĕçĕнмест. Темме. Ертсе пыракансем хăйсем хваттерсĕр мар та, çыншăн пит çăвар уçсах каймаççĕ. Çавăншăн пуль. Ку — тарам-ха. Ĕçлесен-ĕçлесен, черечĕ ĕлкĕрсен, Тараса та унсăрăнах тăратса хăвармĕç, çавăнпа та вăл ыттисем пек пит хыпăнсах та çӳремест, пурнăçăн паянхи саманчĕпе ăшăнса пурăнать. Пӳрни — шăл çĕмĕрсе кĕрет, пӳрменнине шăналăк карса та тытаймăн.

Хальтăран шăкăл-шăкăл, çăвартан çăвара çеç пурăнмаллаччĕ ĕнтĕ — çук çав, çемье тирĕк-кашăкĕ пурпĕрех шăкăртатрĕ. Çын патĕнче пурăннă чух çын патĕнче темеллеччĕ, халĕ, кирек мĕн калăр та, хăйсен йăви, хăйсен кăмăлне кура кил-тĕрĕш темелле. Лиди хирĕлет, чипер тăнă çĕртех тем пулать ăна — кăтăрса каять, сăлтавĕ пур теесрен — Тарасĕ те савапа якатса тунă пекех: хирĕç мăк та, мак та хускатмасть. Тем çитмест хĕрарăмне?.. Вĕçĕм çĕтĕлет: ку çук та, вăл çук, ăна илсе пар та, кăна илсе пар, Тарасĕ пысăк шалуллă çын тет-ши?

Пĕрлешессе вĕсем чиперех пĕрлешрĕç-ха, пĕрне-пĕри килĕштерсех. Тарасăн çартан таврăнасси те тепĕр çур çулсем кăна юлнăччĕ, çавăн чухне вăл, пĕррехинче, увольнение тухсан, хулари пĕр хĕрпе паллашрĕ те ăна кăмăлласа пăрахрĕ. Ҫайран вара, служба вăхăчĕ иртсен, Лидине чăваш çĕрне илсе килчĕ. Малтан вĕсем ялта пурăнкаласа пăхрĕç, унтан — хулара, Шупашкарта. Темĕн çав, пурнăç пĕр ăнмасан ăнмастех пулĕ çав, вĕçĕм уксахлать. Акă, вĕсен хăйсен кĕтесĕ те пулчĕ темелле — пурăн та пурăн, пĕр пус çумне çур пус хушса, çапах тем çитмерĕ Лидине. Вадимĕ икке пуссан, каллех ашшĕ-амăшĕ патне ăсанчĕ. «Хăлхам ан илттĕр те, куçăм ан куртăр, ӳлĕм таврăнассăм пур — тапранассăм та çук»,— тесех тухса кайрĕ. Ҫу хутĕнче — икĕ çул çурăсем иртсе кайрĕ. Вăхăт хăй еккипех чупрĕ. Тарас сисĕнмеллех чĕмсĕрленчĕ, сăмаха сайра ваклакан пулчĕ. Унăн чĕрине пĕрмаях темĕн вĕчĕрхентерсе тăчĕ.

«...Ҫам пурăнма пĕлет-ши ăна пурнăçа, кам? Ҫамран кайса ăс ыйтмалла-ши? Мĕншĕн пурнăçĕ çапла-ха — пурăнас-пурăнас тенĕ çĕртенех аяккалла пăрăнса кĕрсе каять,— шухăшларĕ Тарас, ăнăçсăрлăхăн тупсăмне тупасшăн тăрăшса.— Тахăшĕ айăплă — те хам, те арăм? Эп Лидăна ӳпкелетĕп, чипер пурăнма пĕлменшĕн, çемье телейне упрама вăй çитерейменшĕн. Çемье çемьех ĕнтĕ вăл — тирĕк-кашăк шакăртатасси пулатех, икĕ тĕрлĕ çын пĕр тĕвве пĕрлешеççĕ-çке-ха, уяс пулать пĕр-пĕрин

кăмăлне. Эпир, ак, уяймарăмăр. Лида шучĕпе, çемьери пĕтĕм кĕрĕс-мерĕс те манран кăна килет иккен, укçа çителĕклĕ мар — эпĕ айăплă, сынсен хĕрарăмĕсенни пек йĕркеллĕ çипуç илсе параймастăп — эп айăплă, газлă, ваннăллă хўхĕм хваттерте усраймастăп — каллех эп айăплă. Пĕрех хут, васкамалла марччĕ манăн авланма, васкамалла марччĕ. Хамăнах тăрри шăтăкрах та çав... Тепĕр тесен, халь тин апла-капла шухăшлама кая юлнă ĕнтĕ, ача пур...

Краçук!.. Мĕншĕн эсĕ те пулин кăшт çирĕпрех пулмарăн-ши! Ма хăвна кăшт та пулин упрамарăч-ши? Юрĕ, вăрласа кайнă тейĕпĕр, ирĕксĕр арăм тунă тейĕпĕр. Вара мĕнех? Унпа кăна тĕнче хупланмастчĕ вĕт-ха? Эпĕ пурччĕ. Шанмарăн, ĕненмерĕн пулмалла çав эсĕ мана. Қапла пулса тухнă хыççăн илмĕ терĕн-ши? Пĕтнĕ пурнăç пĕттĕрех, сыннине кура çапла пўрнĕ, терĕн пулĕ... Пўрни вăл апла та, капла та килет-ха — хăв кăмăлна кура. Пăрахса каймаллаччĕ, çирĕпрех пулмаллаччĕ, Краçук! Пурнăç иккĕленчĕк сынсене каçармасть иккен, каçармасть. Телейĕмĕр патне çил çурса ыткăнман çав эпир, ыткăнман. Телейĕмĕр хăй тĕллĕнех алăк уçса кĕрессе ĕненнĕ-ши? Айвансем! Халь тин мĕн тăвăн, ман — хамăн пурнăç, сан — хăвăн. Çук, ман хамăн та кĕрешмеллеччĕ телейĕмĕршĕн, çапла васкаса авланса лартмаллаччĕ-и? Кама тавăртăм, хама-и? Хамăр телейĕмĕре! Эсĕ те, эпĕ те пурнăç инкекĕ умĕнче нишлĕ пултăмăр. Пĕри те пирĕнтен туйăм лавне тапса туртма хăват çитереймерĕ...»

Икĕ çул çурăсем иртсе кайрĕ, Лидин çав-çавах таврăнас сас-хури пулмарĕ-ха. Тарас асапланчĕ, çунчĕ. Эх, çав сын сăмаххи! Кунашкал пулса тухнăшăн та усал чĕлхесем Тараснех айăпларĕç: «Ыр арçынран мĕнле хĕрарăм тухса тартăр!»— терĕç. Хальхаççăн хваттерне те илмеллеччĕ пек, хăйсемпе пĕрле тăххăрмĕш çул ĕçлекен пĕр шоферăн икĕ пўлĕмлине куçма черечĕ çитрĕ (вăл икĕ ачипе пĕрреллинче пурăннă), анчах та Тараса

мар, урăххине тыттарчĕç çав пӳлĕме. Тĕрĕссипе, ăнах памаллаччĕ те — ачи хăй темлескер, çемйипе йĕркеллĕ пурăнма пĕлмест, терĕç.

Чылай шухăш авăртрĕ Тарас, пурнăçне урлă та, пирлĕ те виççе пăхрĕ, çынсен шайĕпе картрĕ — вара Украинăна, арăмĕ патне ларса тухса кайрĕ. Çавăн хыççăн вĕсем тата çулталăк çурра яхăн пĕрле пурăнчĕç. Çемье тирĕк-кашăкĕ çав-çавах шăкăртатма пăрахмарĕ. Хальхинче вăл хытăрах, кӳршĕсен хăлхине кĕмеллех шакăртатрĕ. Мĕншĕн? Темшĕн... Эх, çав çын ăшĕнчи «темшĕне» пĕлме пӳрсессĕн — çĕр çинчи кашни этем юрласаташласа çеç ирттерĕччĕ те ĕмĕрне, ăш çунни-мĕнне ăнкармĕччĕ, пурнăçĕ — уяр кунри çанталăк пек çиççе тăрĕччĕ. Анчах «темшĕне» пĕлейменнипех пĕтерет.

Пурнăç пĕр ăнмасан ăнмастех çав, вĕçĕм уксахлать. Тарас хăй те сиссе юлаймарĕ, мамăк тӳшек çине сывăрма выртнă çын ир енне çара çĕрте вăранса кайнă пекех пĕччен тăрса юлчĕ. Лиди Вадимне яла, хунямăшĕ патне, леçмелле каятăп тесе тухса кайрĕ те каялла Шупашкара килсе-курăнса та тăмарĕ — унтанах Украинăна тухса вĕçтернĕ. Ку хутĕнче вăл сырăвне вăрăмрах çырнă:

«Тарас, çакăнпа — пăнчă. Çапла, ан чĕн, эп айван пулам. Анчах эс хăвна пĕл-ха! Мĕскер, манăн кунĕн-çĕрĕн, вĕçĕмсĕр хирĕлес килет тетĕн-им? Çилле шăнараймасăр хирĕлетĕп эпĕ, сан имшерлĕхне чăтаймасăр, ăнлан! Манăн санра вăйлă, вутлă çумăр çусан — вутлă çумăр витĕр те пуç çĕмĕрсе ыткăнакан кĕрнеклĕ арçынна курас килет. Тата çав çын хăй хĕрарăмне темĕнле асар-писер йывăрлăх умĕнче те хӳтте илме пултартăрччĕ. А эсĕ?.. Санăн тепĕр çынна хӳтте илме мар, хăвна ху хӳтте илме те хевтӳ кăйттă... Шăши Элекçей пек этем эс, хăвăр ялти çум çакки этем пекскер. Çил çинчи çерçи. Тунмастăп, туртăнатăп эпĕ сан патна, анчах та пĕрле пĕр тăрă айĕнче пурăннă чухне мар, санран аякра, инçетре-инçетре чухне. Пĕрле чухне, сассуна илтсенех, мана çĕтĕлтерме пуçлать, ăшра тем капланса хăпарать,

санăн тимсĕрлĕхӳпе хăюсăрлăхна ватас-çĕмĕрес килет. Темшĕн? Хам та пĕлместĕп. Пур вĕт-ха таçта ирĕк, пите çил çинче тытса утмалли тĕнче?!

Тарас, хуть çурăл, хуть те тем ту — урăх таврăнмастăп, пырса йăлăнсан та. Шыраса пăхатăп-ха çав ирĕк, пите çил çинче тытса утмалли тĕнчене; тупаймасан, тен, таврăнăп та. Ан шыра, саншăн тунсăхласа çитсен, хамах пĕлтерĕп. Çынсем, ав, уйăх çине вĕçеççĕ, поляр ункинче çӳреççĕ, Антарктидăна çăварлăхлаççĕ. Эпир мĕн?..

Вадим халлĕхе асламăшĕ патĕнче ялтах пурăнтăр-ха. Пĕлетĕп, унта ăна япăхах пулмĕ...»

...Çулăн икĕ айккипе вăрман евĕр çĕкленнĕ йывăç ĕречĕсем сивлеккĕн кашласа лараççĕ. Вĕсен çара вуллисем хушшинче йăрă çумăр йăшăлтатать. Калăн: хăйне çĕр касма ăшă хӳтлĕх шырать, тейĕн. Асфальт çинче те чарăнми çумăр — типпе кăларса пăрахнă çăрттан хӳри пек çатăлтатать. Кӳлешет. Анчах та унăн вăйĕ пасăрхи мар ĕнтĕ, тумламсем ырханланнă, хухнă.

Кабинăра ăшă — кăмака ĕçлет. Апла пулин те, фуфайка витĕрех сулахай аякне сулхăн çапнине туйрĕ пулас Тарас. «Хăçан «тихам» валли çĕнĕ «аçам» илсе парĕç — сивĕ перет те перет». Канашран иртсен, вăл газикне çул хĕррине тăратрĕ, тухса пирус чĕртсе ячĕ. Тĕтĕм хĕлхемĕ çăвар маччине ыррăн ăшăтса илсенех, Тарасăн пĕтĕм кăмăлĕ çемçелсе, канăçланса кайрĕ, ăшĕ варкани те иксĕлчĕ.

Кĕрхи тĕттĕм кас йĕпе хирпе лăпăстатса чупать. Хĕл кая юлса ларнă çулсенче те ку вăхăта ялан тенĕ пекех юр хăйне кĕтартаканччĕ. Кăçал тем амакĕ пулнă çантаăка — декабрь çурри çитрĕ ĕнтĕ, çаплах хĕлĕх ала кĕрпи евĕр вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Лайăххи алланса пĕтнĕ ĕнтĕ, сăсăлĕ çеç юлнă, çавăнпа. Пĕрех хут — шăнтса лартинччĕ. Шăнтасси те асĕнче çук. Юрĕ, вăл, вăхăчĕ ĕлкĕрсен, сехечĕ çапсан, тенĕшкел, хăйне кĕттерсех тăмĕ-ха, тунсăх çĕре шурă пир тăрăхĕсемпе сийĕн-сийĕн вите-вите хурĕ. Çапах та хĕл кая юлчĕ кăçал, тивĕçсĕр кая юлчĕ.

Поэт калашле: «Çил тунсăхлать, кĕтсе шап-шур хĕле...»

Акă, пĕр тулли грузовик хула еннелле лӳпперрĕн кĕрлесе иртсе кайрĕ. Таçта лере, айлăмăн тепĕр енче, сăрт çинче, каллех тепĕр машинăн вăйсăр çути çывхарса килни палăрать. Аякка хыпаламалли çути чăхăмланă-ши? Çук шăп. Çур çĕр тĕлĕсем пулма кирлĕ (сехечĕ кая юла пуçланипе Тарас ăна юсама леçсе панă). Ку ЗИЛ-130 пулчĕ, паçăрхи ГАЗ-151 кивĕскерччĕ, халтăртаттарса пыратчĕ, ку — вĕр-çĕнĕскер, Тарас тĕлĕпе чăшт çеç иртсе кайрĕ. Çумăр шĕпĕртетрĕ те шĕпĕртетрĕ. Тарас çунса пĕте пуçланă пирусне ик-виçĕ хутчен техĕмлĕн ĕмсе илчĕ те сурса пăрахрĕ, ларкăч çине тĕплĕн вырнаçса ларса, моторне чĕртрĕ, васкамасăр тапранса кайрĕ.

«...Вадим халлĕхе асламăшĕпе ялтах пурăнтăр-ха. Пĕлетĕп, унта ăна япăхах пулмĕ...»— аса илчĕ Тарас арăмĕн сăмахĕсене каллех.— Пĕр шутласан, хамах айăплă та-ха — арăм тенине ирĕке янă. Чĕлпĕрне кăшт хытăрах тытсан та татăлса каяссăнах туйăнмастчĕ. Йăхра çук намăса кăтартрĕ, икĕ хут кайса çырлахтарса та çырлахмарĕ, асламăшĕ тертленет. Путлĕ япала-и ку? Эпĕ те паян кун çĕр хута сĕтĕрĕнсе çӳреместĕм. Эх, çав Лидăна, утне çитмен туртине, чăпăркаччĕ те! Ав, Вадимĕпе тем сиксе тухнă-ха тата, «Тарас, ачу аптраса ӳкрĕ, çийĕнчех кил», тенĕ телеграммăра. Те виçĕмкунах çитсе выртнă-ха телеграмма ялтан, хам командировкăна тухса кайнă тĕле. Темрен тем сиксе ан тухтăрах. Те час иртсе каяканни ĕнтĕ чирĕ? Ăна пĕлнĕ пулсан, паçăрах машинăна кил еннелле çавăрмаллаччĕ, пустуй Шупашкара кайса кумса çӳрерĕм. Тăвай районĕнчен Канаш урлă тӳрех кунталла çапмаллаччĕ. Кам шутланă-ха ăна? Ăçта ӳкессине пĕлсен, тӳшек сарса хунă пулăттăм.

Çĕрле никамран ыйтмасăр çапкаланса çӳренĕшĕн ĕçре вирлĕ пĕçерккĕ параççĕ акă, кĕгсех тăр. Ху машину мар — патшалăхăн. Ыран тата, акă, каллех района командировкăна каймалла пулнă пулсан? Вăл-ку тарам-

ччĕ-ха, Вадимĕ тĕрĕс-тĕкелех, сывах çӳресен. Эх, анне нихăçан та çапла телеграмма çаптарсах пĕлтерекен марччĕ, чĕре сисет — темскер сиксе тухнах ялта, темскер сиксе тухнах...»

Тарасăн самаях лăш пулнă кăмăлĕ çĕнĕрен вĕчĕрхене, кăмăскалана пуçларĕ. Газ хушрĕ—машина хăвăртрах чупма тытăнчĕ. Вăрахран Тарас шухăшĕ амăшĕ çине ӳкрĕ.

«...Анне... Мĕн ыррине кăтартрăм-ши ĕнтĕ эпĕ сана... Сакăр уйăхри ачупа (манпа) упăшкунтан тăрса юлтăн. Атте вăрçă хирĕнчен таврăнаймарĕ. Çамрăк пуçпа юратнă çынсăр тăрса юлса ача пăхса ӳстересси çăмăлах пулман ĕнтĕ. Мĕн каласси! Çĕрлесерен сахал йĕпетнĕ-и санăн хурлăхлă куççулӳ вĕри минтере... Яш чун яшлăхшăн та тунсăхланă пулĕ, ĕмĕр иккĕ килмест-çке, иртсе каять — чатăр карса та чараймăн. Пурпĕрех чăтнă, чун вутне шалта упраса, çынна кăтартмасăр чăтнă, ывăлĕ ӳссе çын пуласса ĕненнĕ, çав пепкешĕн пурăннă. Астăватăп-ха, уйăхлăха колхоза пулăшма полуторкăпа килнĕ шофер пирĕн пата хваттере чарăннăччĕ те каяс умĕн аннене качча тухма урараи ӳксех тилмĕрчĕ. Ман умрах калаçрĕç. Арçынни темле те ӳкĕтлесе пăхрĕ: сăмаха татса каласан, паян тесен паян хулара пурнăç пуçласа яма, анне килĕшсен, кунтах, ялтах, юлма пулчĕ. «Ачи те хамăрăнах пулĕ, ĕмĕр сив сăмах каламăттăм, ĕнен — чĕре варне кĕрсе вырнаçрăн. Эпĕ те санашкалах тăлăх, арăм икĕ çулхи ачипе эвакуаци вăхăтĕнче нимĕç бомби айне пулса вилчĕ. Пирĕн иксĕмĕрĕн пĕр шăпа, Униççе»,— терĕ вăл, тилмĕрсе. Этемми ку, чăваш хушшинче пурăнса, чăвашла калаçма вĕренкелесе çитнĕ вырăсчĕ. Вăл мĕн калани чиперех хăлхана кĕрсе пычĕ. Эпĕ ун чухне улттăраччĕ ĕнтĕ. Темех ăнланнă пуль, пурпĕрех хирĕç те, майлă та чĕнмерĕм, хушша-хуппа кĕме эп пысăк çын мар, хăйсем татăлччăр, терĕм. Çынни мана хама та килĕшетчĕ, шутсăр манпа выляма юрататчĕ вăл, тата машинăпа лартса çӳретчĕ. Темле ӳкĕтлесен те,

анне унпа килĕшмерĕ. «Ҫапла ӳппĕн-тĕппĕнех хăтланар мар-ха,— терĕ вăл шухăшлăн.— Эсĕ те, эпĕ те пурнăҫ тути-масине курман ҫынсемех мар, ҫитменнине эпир пĕр-пĕрне те питĕ сахал пĕлетпĕр-ха, васкар мар, ӳлĕм курăнĕ. Санăн та шухăшу тĕрлĕ кунра тĕрлĕ пулĕ... Тарас ӳссен мĕн калĕ, тапратар мар ку сăмахха урăх». Темех калана пулăттăм ĕнтĕ. Ӳссен те сив сăмах каласа кӳрентермен пулăттăм. Ҫайран виҫ-тăватă ҫул хушши те тăтăшах килсе ҫӳрерĕ ҫав ҫын, анчах та вĕсем ĕлĕкхи сăмахне урăх тапратмарĕҫ курăнать. Анне тапраттармарĕ.

Пурнăҫна маншăнах пурăнса ирттеретĕн, аннем... Ҫавах ырлăхра усраса кăгартаймарăм-ха сана, аннем, аннеҫĕм... Ывăлу ăнмарĕ. Ывăл ăнмасан, килти выльăхчĕрлĕх те ăнмасть, теҫҫĕ ваттисем.

Чăнах та ҫапла пулчĕ ҫав. Ĕне тавраш̆ĕ иленмерĕ пирĕн картишне, илнĕ-пĕри ӳксе-вилсе пычĕ. Качака чунĕ туянса ячĕ вара анне, сĕт шăршине астивмелĕх тесе. Качаки те темĕскерли лекрĕ: ҫиме упшур пек ҫиет — сĕтне курмалăх та антармасть. Виҫĕ сурăхĕ пур тата аннен, виҫҫĕшĕ те пăранламанскерсем. Виҫ ҫул каялла ăнсăртран пĕри хăрах путек туса пачĕ, вăл та пулин суккăр ҫуралчĕ, ҫитменнине — така. Йăх тăсăмĕ ырăнне пулмарĕ — раштав сивви тĕлне хурана лекрĕ. Хурĕсем, калама та кирлĕ мар, такам хурĕсене хывнă, питĕ вĕҫкĕн, ҫĕвĕн-хĕлĕн кил тĕлне пĕлмесĕр янккаса ҫӳреҫҫĕ. Таҫта мур шăтăкне тăваҫҫĕ ҫăмартисене, астуса та ҫитермелли ҫук, чĕп кăларсан та таҫта ҫухатса пĕтереҫҫĕ чĕпписене, кĕр ҫитнĕ ҫĕре вуннă-вуниккĕрен пĕрреиккĕ ҫеҫ тăрса юлать, астивсе пăхмалăх. Ыттисем е йыт ҫăварне лекеҫҫĕ, е ҫын хурĕсене иленеҫҫĕ. Хăнăхнă ĕнтĕ анне вĕсен хăтланкаларăшĕсене, ҫавăнпа пит хыпăнсах та ӳкмест — телейĕмĕр ҫапла пулĕ, тет. Чăххисем вара аннешĕн чăн-чăн савăнăҫ, пĕринчен тепри кĕре, кăркка пек,— картиш илемĕ. Пусма ларасса та вăхăтра пусма лараҫҫĕ, чĕпписене те ҫу каҫипех куҫран

вĕçертмесĕр пăхаççĕ, вĕçĕм кил тĕлне пĕлеççĕ, анне вĕсене нихçан шыраса хăшкăлман — ăннă, ăнмаллипех ăннă. Сивĕсем çитсен, пӳрт тулли пăслантарать вара чăх ашне анне... Анне... Кĕххĕм... Кĕххĕм...»

Ӳсĕрес килмен çĕртенех пырне тасатмалла ӳсĕркелесе илчĕ Тарас. Тепĕр икĕ айлăм урлă каçсан, асфальтлă çул пĕтет, тăпра çул пуçланса каять,— çав тĕлтен вĕсен ялне çитме тата сакăр çухрăм юлать. Тепĕр пирус чĕртсе ячĕ Тарас. Хальхинче унăн шухăшĕ Шăши Элекçейĕ çине ӳкрĕ.

«...Пăх-ха, ăçтан килсе лекрĕ ара ку çын ман аса? Пулин, этемми путишскер, çавăнпа килсе тухрĕ-ши? Миçесенче пырать-ши ĕнтĕ вăл? Темиçесенче. Эп астăвассах пĕр хĕрĕх çулсенче пек курăнатчĕ те, халĕ те ним чухлĕ те улшăнман, çав тĕспех тăрать. Ял çинче Шăши Элекçейĕ çерçи пек пурăнать,— кирек те кам патне кĕрсе кай — такам та апат лартать ăна. Хăй те вăл чĕнессехистессе кĕтсе тăмасть — кил хуçисене сывлăх сунать те сĕтел хушшине йăпăрт çеç кĕрсе ларать. Намăссăр тес ăна, намăссăр мар вăл — çынни çавнашкал, катăкрахскер. Никам та çилленмест Шăши Элекçейне çапла хăтланнăшăн — хăнăхнă! Апат тĕлне пулаймасан, Элекçей вара хĕвĕнчен çăкăр чĕлли кăларать те (вăл нихăçан та çăкăр чĕллисĕр çӳремест) ăна чапкаса çиме пуçлать, «сирĕн тăварăр ăçтарах ара», тет. Кил хуçи, çакна асăрхаманçи пулса, апат лартмасан, Элекçей ним сăмахсăр ларнă çĕртен тăрать те урамалла танкăлтатать. Çенĕк алăкĕн хăлăпне ярса тытиччен каялла кĕрет, кил хуçине ал тытса тав туса хăварать. «Алă пама мансах кайнă». Ытти чух алă тытмасть вăл — йăли çапла. Утать вара Шăши Элекçейĕ урам тăрăх йăкăртатса, шăши пек, кам патне пăрăнмаллине тĕсесе. Пĕвĕ унăн лутра, виçĕ пăтлă сĕлĕ миххинчен кăшт çеç çӳллĕрех. Икĕ куçĕ шуралса тăрать, те шур илнĕ, те хăйсем çапла. Элекçее сĕм-суккăр теççĕ, икĕ куçĕ те курмасть, теççĕ, кам пĕлет, çав пĕлет пулĕ, эпĕ шантарсах калаймастăп, мĕншĕн

тесен вăл тепĕр куçлинчен те ирттерет — çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ утать, никам калинкки енне те йăнăшпа пăрăнмасть, кĕрсенех ятран сывлăх сунать: «Хветле кума, çӳреççĕ-и?». Уншăн пурте — кум та, хăта та, тăхлач та.

Яланах пĕр тумпа çӳрет Элекçей. Уринче унăн кĕске кăçатă евĕр çăм калуш, тĕпне кĕле çаптарса, хĕррисене сăран сăртарнăскер. Пуçĕнче — хăрах хăлхаллă сăрă çĕлĕк, сулахай хăлхи çук. Çавăнпа вăл çĕлĕкне сулахай енне чалăштарса лартса çӳрет — ик хăлхи те тан хӳтĕре пулччăр! Çĕлĕкне Элекçей шăши тирĕнчен хăйех çĕленĕ пулать (çавăнтанах ячĕ те — Шăши Элекçейĕ), капкăн лартса çĕлĕклĕх пуçтарнă имĕш. Те чăн, те суя ку — халăх çăварĕ çапла евитлет. Çийĕнче — хĕрарăм кĕски манерлĕ пиншак, хĕррисем хăпарса тăраççĕ. Хăй ни çĕнĕ, ни кивĕ — ĕмĕрлĕх пусмаран çĕлетнĕ тейĕн.

Аçтан пирĕн яла килсе лекнĕ вăл, хăш вăхăтра? Ашшĕ-амăшĕ кам пулнă унăн, кам ачи? Çакна никамах та татса калаймасть. Пĕрисем ăна — хăрăм пекех хура пулнăран, чикан ачи, теççĕ, теприсем — чăвашах теççĕ (чăвашлах калаçать вĕт-ха!) — вĕлтрен кайăк. Тахăшĕ тĕрĕс, апла-и, капла-и, хăй пирки вара Элекçей çапла калать: «Шаккур йăхĕ», — тет. Пирĕн тăрăхра авал таврана ят сарнă çав ятлă лаша вăрри пулнă, теççĕ. Хам пĕлейместĕп, çынсем каланине çеç калатăп. Элекçейĕ хăй çыннăнне тĕкĕнме мар, ĕмĕрне никама сив сăмах каласа курман. Пурăнасса та вăл, каларăм ĕнтĕ, ял çинчи çерçи пек, ял хывăхĕпе тăранса пурăнать. Килĕнче ун кăмаки те çук, такама пĕрне мăрье тăрлама шутсăрах кирпĕч кирлĕ пулнă та, — ку турткалашса тăман, хăйĕн кăмакине сӳтсе парсах янă — ăшăнăр, мана та ан манăр. Пӳрчĕн чӳречи те пĕрре çеç. Вăл та пулин кăсăя куçĕ пек кăна, хĕвел хĕртсе пăхнă чух та пĕр хĕлхем çутта шала ямасть. Пӳрчĕ те тахçанах çĕр айне çурри путса анса кайнă ĕнтĕ, халь-халь ишĕлсе анасла ларать, вăйлă çил килсе вĕртĕр — таçтаччĕ çав çурт йĕрĕ! Çултаlăкне иккĕ çĕр каçать-ши вăл хăй килĕнче — паллă мар,

хĕллесенче — çын патĕнче, çулла — хирте сывăрать. (Хирте сывăрса пурăннăран та ăна чикан ачи пуль, теç-çĕ.) Мунчи пур тата, чăх йăви пекскер. Унта пĕр çын та аран-аран хĕсĕнкелесе кĕрет. Çавăнта çăвăнкаласа пурă-нать Элекçей.

Шăши Элекçейĕ пирĕн яла килсе кĕрессе колхоз тунă тапхăрта килсе кĕнĕ. Килсе кĕнĕ те унччен пĕр-икĕ кун маларах çеç çĕре кĕнĕ çĕр çулхи Мархва кинемейĕн мунча пек çуртне вырнаçнă (çав çурт пирки каларăм), такам-ран çур хакпа хĕç пулă пек çинçешке сурăх туянса пынă, алкум уратинчен кăкарса янă. Халь алкумĕ те çук ĕнтĕ — тĕтĕм пулнă. Тепĕр икĕ эрнерен вăл хăйĕн су-рăхне колхоз витине кайса леçнĕ. Ку унăн пĕрлешӳллĕ хуçалăха кĕни вырăнне пулнă — пĕр сурăх хакĕ ăçта каймĕ, тату пурăннине мĕн çиттĕр!.. Çавнашкал пысăк чунлă вăл Элекçей».

...Çумăр лăплачнăпа пĕрех, кассăн-кассăн çеç пĕрĕх-келесе иртет — тӳпе шăтăк ырçинчен юлашки пĕрчисене ывăçласа пăрахать. Пĕлĕт хăяматалла явăна-явăна чу-пать. Лăс-лăс çил тапраннă. Çил тапранни — уяртасса.

«...Çавскер, Шăши Элекçейĕ, пĕррехинче сывмарлан-нă: те шăнса пăсăлнă, те урăххи — паллă мар. Унччен ăна никам та чирленине курман. Утнă çавскер фельд-шер пунктне, çитнĕ ахлаткаласа. Сестра ăна градусник панă, пăртаклăха хул хушшине хĕсгерсе ларма хушнă. Элекçей ларнă. Ларнă-ларнă та, сестра урăх пырасса кĕт-се илеймесĕрех, килне тухса сĕнкĕлтетнĕ, халăхĕ пуçтарăн-нă вăхăт пулнă иккен вăл кун. Тепĕр икĕ кунтан персе çитнĕ хайхискер савăнăçлă сăн-питпе каялла. «Ну, хĕ-рĕмçĕм, хĕр пĕрчи, сăпаççипех сана, эмелӳ питĕ сиплĕ пулчĕ, сывалтăм»,— тенĕ вăл, градусника тавăрса парса...»

Асфальт çул пĕтрĕ,— малалла — тăпраран хăпартса тунă дамба. Урапасем, лепĕркке пылчăка лексенех, су-лăнчăк пара-пара, йăрăлтатма пуçларĕç, пăхса çеç ан

ĕлкĕр — кучи-мачи чикеленĕн, дамби чăнкă. Тĕрлĕ шухăш сӳсленчĕкĕпе арпашса пыракан Тарас пуçĕ янкăх уçăлса кайрĕ, кун пек çулпа машинăна тытса пыма куç сисĕмĕпе ал сисĕмĕ вăйлă кирлĕ. Çумăр лăпланнă. Шĕвĕ пĕлĕтсем çеç пaçăрхилле, пуç тăрне перĕнеслех, катрамăн-катрамăн шăва-шăва иртеççĕ, татти-сыпписĕр, вĕсен вĕçĕ-хĕрри те çук. Хирте качăр пулнă ĕнтрĕк çĕр çуммипе йăпшăнать. Мăн çултан пĕр çухрăм çура пек хăпкаласан, газик умĕнче пĕр çын мĕкĕлтетнине асăрхарĕ Тарас.

Темиçе хут кăшкăртсан та, çынни мĕнле утнă, çаплипех утрĕ, çаврăнса та пăхмарĕ. Çиллине шăнараймасăр, Тарас машинне чарчĕ те, кабина алăкĕнчен пуçне кăларса, кăшкăрчĕ:

— Эс мĕскер, анкă-минкĕ, хăлхасăр-им, машина кăшкăртнине те илтместĕн, пăрăн çул çинчен, мĕн, урапа айне пулас килет-им?

Çынни лӳ те тумарĕ, çаплах танкăшрĕ. Çакна кура тăркач, Тарас тарăхса кайрĕ, çынна хăваласа çитсе, çухаран ярса тытрĕ:— Эс мĕскер, шофертан мăшкăллама-и!..

Çынни хĕрарăм пулах кайрĕ. Арçыннăн ятлас сăмахĕ те пырне ларчĕ.

— Тарас?..— хĕрарăм, эрленсе, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ те ун кăкри çине ӳкрĕ.

Тарас та ăна палласа илчĕ.

— Краçук...

— Ай, турăçăм.

Шăп. Газик çеç пĕр тикĕссĕн лĕкĕртетсе ларать.

— Краçук... мĕнле-ха капла?..

Тӳпе пĕр касă çумăрне пĕрĕхсе хăварчĕ.

— Мĕнле-ха капла... пĕр кĕтмен-туман çĕртен?

Краçук куççульне чармасăр ĕсĕклет.

— Пĕлместĕп...

— Мĕн эпир кунта тăратпăр, машина ăшне атя, унта типĕ, хӳтĕ...

Машинăра, чăнах та, пӳртри пекех — ăшă. Тулта чылай вăхăт хушши пулнă çынна çакă тата ытларах палăрать.

— Эс хыв-ха, хыв плащна, хыв, ак, манăн ваткăллă фуфайкăна тăхăн. Юрĕ, юрĕ, ан турткалаш, мана сивĕ мар... Вăт çапла...

Тарас Краçукпа инкек пулнине чĕрипе туйса илчĕ: кам ырăран çĕр хута ыйхă татса çӳретĕр! Çавăнпа тĕпчемерĕ те.

— Çĕрлене юлтăм, анне телеграмма çаптарнă: Вадим аптраса ӳкнĕ...

Краçук майĕпен-майĕпен ĕсĕклеме чарăнчĕ, лăпланчĕ. Те ăшă пусса килнипе, те туйăмĕсем лĕштĕрех кайнипе, вăл хăй сисмесĕрех кăтăша путрĕ. Тарас сывлами ларчĕ, хăйĕн чи пирвайхи юратăвĕн ыйхине пистерес темерĕ. Çак çынпа пурнăç çыххине çыхма араслааннă ĕнтĕ вăл каччă чухне. Пӳрни мăшăр хăрах утпа хапха умнех кĕрлеттерсе çитсе тăрать, теççĕ те — Тараспа Краçук тĕлне апла килмерĕ, ав, вĕсен шăпине усал çын алли картларĕ. Унтанпа — нумай-и, сахал-и — çичĕ çул иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Краçук та ĕлĕкхи мар халь — чылай тĕксĕмленнĕ, туртăннă, çамкине те ĕшенчĕк йĕрĕсем каса-каса кĕнĕ. Апла пулин те, ку сăн-пит — Тарасшăн тăванран та тăван, чи хакли. Унăн юратăвĕ, чи пирвайхи юрри пулнă-çке вăл. Пулнă?..

Краçук кăшкăрса, шарт сиксе вăранса кайрĕ:

— Вĕлер, çап, хĕне, шыва кайса сикетĕп, пĕтнĕ пуç пĕттĕрех!..

Чун тĕпĕнчен тухакан сасса илтсе, Тарас та шарт сикрĕ, çӳçенсе илчĕ.

— Мĕн эс? — терĕ вăл, аллине ун хулпуççийĕ çине хурса. — Тĕлĕк куртăн-им?

— Упăшкаран тухса тартăм эпĕ, Тарас... Çичĕ çул хушши чăтса пурăнтăм-пурăнтăм, урăх чăтма тӳсĕм çитмерĕ, — пӳлĕне-пӳлĕне каласрĕ Краçук. — Чун сиснĕ пекех, пуян тухса тартăм. Сана курасса пулĕ... Хăçан-

танпа курман... Турăçăм, пĕлесчĕ санăн ман пурнăça!— сасси чĕтрене-чĕтрене тухрĕ Қраçукăн, куçĕнчен каллех куççулĕ шăпăртатса анчĕ.

— Ан йĕр-ха эс, Қраçук, ан йĕр. Куççульпе кăмăла пусараймастăн, лăплан...

Тарас газ хушрĕ, машина çĕнĕрен малалла упаленме пуçларĕ.

— Хыçра машина сассине илтрĕм те, чун сӳлетсе кайрĕ, вăл хăваласа çитрĕ иккен, терĕм, манран ӳсĕр выртса юлчĕ, кăшкăрашрĕ-кăшкăрашрĕ те... арчари пĕтĕм кĕпепе кăларса, пуртăпа вакласа пĕтерчĕ, кăмакана ывăтрĕ. Хама та пĕрре кăна мар вĕлерессипе хăратнă. Ĕçки йĕркесĕр. Урă чухне те ним ĕренкн çук... Çын сăмаххинчен иртейменни хупларĕ, çын сăмаххинчен иртейменни. Пăрахса каймалла пулнă, çиййĕнчех, ним тăхтамасăр. Мĕне кĕтнĕ? Намăсран хăранă ĕнтĕ. Қачча кайса килнĕ ята илтесрен хăранă. Яш чух ытла та ăссем кĕске çав, хамăршăн тăма пĕлместпĕр...

Малтанхи çулсенче чиперех пекчĕ, юлашки çулсенче пăсăлчĕ. Çын валли вутă турттарса килсе парать — ĕçкĕ, районтан мĕн те пулин кĕртсе парса хăварать — ĕçкĕ, сысна çапаççĕ — ĕçкĕ... Халĕ тата уявĕсем те йышлă... Теприсем пур — ĕçмеççĕ, акку пур — курманла пехлет те пехлет. Пăсăлчĕ этем... Қиле килми пулчĕ çĕрлесерен... Хыççăн çӳремен... Қалакалама пăхсан — хăмсарать, алă çĕклет... çавăнпа чĕнмен... Ача çуккипе хăратчĕ, акă халь йывăр çын пулса тăтăм ĕнтĕ.— Именнĕ пек пулса, пуçне пĕкрĕ Қраçук.—...Санăн та пурнăçу латлă килмерĕ, манăн та. Çук, килсе пуççаптăр, йăлăнтăр, хуть те тем тутăр—каймастăп... Çумăр та, ав, чарăнчĕ... Самай лӳшкететчĕ... Тарас... астăватăн-и аслатиллĕ çумăра?..

Тарас сăмах хушма та ĕлкĕреймерĕ, газик, хӳрине вĕлтĕр-вĕлтĕр пăркаласа, пĕр лакăма пашт! çеç анса ларчĕ, моторĕ те, сывлăхсăр çын пек, пĕр-икĕ хутчен кĕххĕм-кĕххĕм ӳсĕркелесе илчĕ те лап сӳнчĕ.

Иккĕшĕ те, шăплăха çурасла, ахăлтатса кулса ячĕç.

— Акă çитрĕмĕр те,— çаплах кулчĕ Тарас.— Ат, истори, чатăр пулсан, чатăр кар та — кăвайт чĕртсе яр, ăнманĕ...

Тарас стартера пускаласа пăхрĕ — мотор шарламарĕ. Вара вăл, капота уçса, пĕр вăхăт унта чакаланчĕ.

Телее, нумаях чакаланмалла пулмарĕ, машина ăшчиккине унтан-кунтан тыткаласа-тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Тарас ручка илчĕ те унпа мотор çунатне пĕрех çавăрса ячĕ — мотор чĕрĕлчĕ. Газик лакăм урлă ӳлесе каçса кайрĕ.

— Тарас, чим-ха, тăхта... Тем, кăмăл пăтранса килчĕ.

Тарас машинне чарчĕ. Краçукăн мĕншĕн кăмăлĕ пăтраннине те тĕшмĕртрĕ вăл.

— Эсĕ выртса кан, лăш пул, ак çакăнти вăрăм ларчăк çине...

— Нимех те мар, иртсе каять... Эсĕ ан чăрман... хамах...

— Вырт, вырт, именсе ан тăр... ак, пуçу айне çакна хур, çемçерех пулĕ...

— Нимех те мар, нимех те мар, иртсе каяканччĕ...

— Эп тухкаласа çӳрем-ха...

Çулпа юнашарах — лупас пек улмури. Кĕрхи хирте çил вылять. Пылчăк кушăха пуçланă. Шăнтать.

«Аслатиллĕ çумăра астăватăн-и, тет-ха... Утă çулатчĕç. Тăххăрмĕш класс пĕтернĕччĕ эпир ун чух. Каникул вăхăчĕ. Ыттисенчен темле майпа тăрса юлнă вара эпир, аннесене пулăшма çӳрекен икĕ ача. Сисмен те — çинесинех аслати кĕмсĕртетсе илчĕ, çумăр тăкса ячĕ. Пăхрăмăр та — пĕлĕчĕ асатте кукши пек çеç. Кĕреплесемпе сенĕксене пăрахса хăварса, çывăхри хӳшĕ патне чупрăмăр. Краçук малта вирхĕнсе пырать, хăй аллисене çӳлелле кăнтарнă,— сухăрать, чарăна-чарăна пĕр вырăнта тăпăртаткаласа илет, каçса кайса ахăлтатать, шултра тумламсене ывăçласа иле-иле, питне пĕрĕхтерет. Ытлăх! Краçукăн пиçĕ урисене курсанах — шалта тем пĕçерсе

каять, тăнлава çĕмĕрттерсе юн кăлтлатма пуçлать, çак хĕрачашăн темĕнле ырă-ырă пулас килет. Вĕçĕмсĕр ырă. Хӳшше чупса çитнĕ çĕре вĕсем иккĕшĕ те касмăка чиксе кăларнă пек шӳнĕччĕ ĕнтĕ, чĕп-чĕр шыв пулнăччĕ. Краçук çаплах çуйхашрĕ, ахăлтатрĕ. Тарас ăна йĕпе хулĕсенчен çатăрласа тытрĕ те хăй çумне пăчăртарĕ, уçăлса тăракан тутинчен чуптурĕ. Анчах хĕрача арçын ача ытамĕнчен çийĕнчех шăвăнса тухрĕ.

— Ан хăйнă пултăр,— юнарĕ вăл Тараса. Вара, кулма чарăнса, хӳшĕ кĕтессине хĕсĕнсе кĕрсе ларчĕ. Эпĕ — тепĕр кĕтессине, умне. Пĕри те пĕр сăмах чĕнместпĕр. А хамăн калаçас-калаçас килет. Çумăр чикĕне-чикĕне кайса çатăлтатать. Пĕлместĕп, çапла çур сехет ларнă-и, пĕр сехет-и,— тулта тĕттĕмленсе килнине асăрхарăмăр, эпир иксĕмĕр те пĕр харăс сиксе тăтăмăр та, пушмаксене хывса, ялалла васкарăмăр. Хамăр пĕр-пĕрин çине куç хӳрипе те пулин пăхса илĕпĕрин... Манăн чĕре çунса тухать хам кунашкал сĕмсĕрле хăтланнăшăн. Қаçару ыйтас-и — каçармасран хăратăп, ӳксе пуç çапас-и (юрататăп сана, Краçук!) — кӳрентересрен шиклenetĕп. Қалама та чĕлхе çаврăнмасть, виçĕ пăтлă кире пуканĕ çакса янă тейĕн.

Çумăр чарăнчĕ. Қанлĕн сывлать çутçанталăк. Хĕвел анса ларасси те инçех юлман. Қаçхи ĕнтрĕк пĕтĕм çĕре хăйĕн канлĕ сĕмĕпе çупăрлать.

Хăйсен тĕлне çитсен, Краçук кĕтмен çĕртен мана сулахай питçăмартинчен чăпăрт чуптуса илчĕ те, калинкке алăкне шатлаттарса хăварса, пӳртне кĕрсе тарчĕ... Эпĕ юпа пек хытса юлтăм... Қăштахран çеç чун кĕчĕ... Эй, тĕнче!.. Краçук... Аслатиллĕ çумăра астăватăн-и, тет-ха... Аçтан манан?!.»

Кĕрхи çил — çӳçентерет, йăлăхтарать. Унран пĕр-пĕр кĕрĕк çанни ăшне тарса кĕрес килет. Улмури тавра уткаласа çӳренĕ хыççăн Тарас каялла таврăнчĕ.

— Краçук, тен, пульницана леçес?..

— Пĕлместĕп...— кăкăрĕ хăпара-хăпара анчĕ хĕрарă-

мăн, сасси улшăнса тухрĕ.— Пуçланчĕ пулмалла... Хуть те мĕн ту... Ах, аван мар-çке...

— Мĕн аван марри... Эс вырт, вырт, ан тăр... чăт ĕнтĕ кăштах... Эпĕ машинăна хытах хăваламăп...

...Ентĕ кăнтăрла иртсе иккĕ çине сулăнни те паçăрах, Тарас çав-çавах больница картишĕнчен хăпмарĕ-ха, сестрасем хыпар тăвасса кĕтрĕ. Чиперех илсе çитерчĕ вăл Краçука, кирлĕ çынсене те хăвăртах шыраса тупрĕ, вырнаçтарчĕ, ак халĕ унăн хыпарне тилмĕрсе кĕтет. Хăй те вăл йĕп çинчи пекех-ха, ăшĕ çунсах тухать: «Темле ĕнтĕ ялта Вадимĕ?» Анчах пăрахса кайма — пултараймасть: тен, пулăшу кирлĕ? Тĕрĕссипе, темпех пулăшĕ ĕнтĕ Тарас Краçука хальтăран?

Хырăмĕ çатăр выçса кайнине туйса илчĕ Тарас. Хăçан çинĕччĕ-ха вăл? Ĕнер, кăнтăр апатне, шăп та лăп талăк каялла. Çул çине илсе çÿрекен пĕчĕк чăматанĕнчен вăл хура çăкăрпа хытнă кăлпасси татки кăларчĕ, сухан шуратрĕ. Тарас запаслă çын, ним те илмен чухне те унăн яланах çăкăрпа тăвар пур. «Хунӳ патне ĕçке кайма тухман — чăрмантармасть!»

Йĕркеллĕ пĕр-ик çăвар та тума ĕлкĕреймерĕ — хирĕç çуртран ăна пĕр шурă халатлă кăнттамас хĕрарăм кăшкăрса чĕнчĕ. Сасси — контрабас сасси пек.

— Ну, ашшĕ, савăн. Ывăл çуратнă ятпа саламлатăп,— терĕ вăл чупса çитнĕ Тараса.— Ку пĕрремĕш-и-ха сирĕн? Тĕреклĕ ача пулать, маттур, тăвата кило та çĕр вунпилĕк грамм таять, амăшне мĕн чухлĕ асаплантарчĕ, шеремет...

Тарас ним калама аптраса тăчĕ. Юлашкинчен çăвар уçса тав тума ăс çитерчĕ: «Спасибо».

— Пире мĕн спаççипи, хăвăр ывăл, хăвăр тăрăшнă... Ну, ан хумханăр, ан хумханăр, пурте йĕркеллĕ пулса пырать... Эсир кайăр ĕнтĕ, кайăр, текех арăмăра нимĕнпе те пулăшма пултараймастăр. Тепре килнĕ чухне ăшă тум илме çеç манса ан кайăр, сивĕтрĕ... Ну, чипер юлăр...

— Итлĕр-ха, сестра юлташ, вĕсем валли куччеңес илсе килсен мĕнле-ши, э?

— Куччеңес? Паянлăха кирлех мар, тепрехинче... Халь канаççĕ-ха вĕсем... Эс луччĕ хĕреснашшĕпе хĕреснамăшне тупса хур. Кун пек ывăлшăн мĕнле ăшшă кĕçтин тумалла, урай хăми аванччен: пăхаттир!..

Ваккат пек сăмах çаптаракан хĕрарăмран çăварне карсах тăрса юлчĕ Тарас. «Те кăшт катăкрахскер пулчĕ ку, ача ашшĕ выранне йышăнчĕ. Пулать этем. Э, тепĕр тесен, çыннине ма кӳренес, ăçтан пĕлтĕр-ха, ман çамка çине çырса хуман вĕт. Юрĕ...»

Краçук ăнăçлă çăмăлланнăшăн хĕпĕртерĕ Тарас.

«Турра шĕкĕр, мĕн те пулин сиксе тухасран чун юлманччĕ. Тинех лăплантăм. Халĕ ĕнтĕ — яла, киле! Ах, Вадимĕ темле ĕнтĕ?..»

Çула тапраниччен малтан вăл РТСа кĕрсе бензин яртарттарса тухрĕ, хушма бакне те тултарчĕ — каялла Шупашкара çитме те çиттĕр!

Çул çийĕ ĕнерхи мар — кĕмсĕркке. Çĕркаçа самаях шăнтнă. Сывлăшра юр пĕрчисем юлхавлăн вĕçкелеççĕ. Çил йăшнă. Машина çăмăллăн юртать, хутран-ситрен муклашка çине лексе сиккелесе илет.

«...Краçук, Краçук... эх... Халь тепле çав, калама та пĕлмелле мар... Лиди тата лере тепле, тем ăспа пурăнать. Пĕр шутласан, Краçукпах сыпмалла та пурнăçа. Э, чим-ха, мĕн калаçатăп çак эпĕ, юрать-и вара апла калаçма Лида пур çинченех. Эпир уйрăлман, расна çеç пурăнатпăр. Манăн хамăн çемьене тĕреклетме тăрăшмалла, капла кучи-мачи шухăшласа пуçа ватмалла мар. А Краçук вăл иртни, çутă ĕмĕт. Ĕмĕт çиçет те — сӳнет. Юрĕ ĕнтĕ, халь мĕн сăмахламалли. Краçукăн та шухăшĕ улшăнĕ, упăшки килĕ те акă... мирлешĕç. Хушшахуппа кĕрем мар... Малтан ăса картмалла пулнă, малтан. Тĕрĕссипе халĕ те кая юлман та-ха, хăй те хирĕçех пулас çук... Пĕрех хут, тытатăп та больницăран тӳрех Шупашкара илсе каятăп ăна хам пата, ачи чармасть,

камран хăраса тăмалла! Иксĕмĕрĕн пурнăç пуласси — паллах!»

Кĕтмен-туман çĕртен хăмла аври пек капланса хăпарнă хăюлăх Тараса çĕклентерсех ячĕ. Сĕлкĕш кăмăлĕ янках уçăлса кайрĕ унăн. Савăкланнипе, сăмси айĕн юрă та ĕнерлеме пикенчĕ:

«А дорога серою лентою вьется...»

«Акă — Краçук унăн арăмĕ. Пĕр-пĕрне вĕсем нихăçан та сивĕ сăмах каламĕç, шăкăл-шăкăл пурăнĕç, çăвартан çăвара, пĕр-пĕрин сăмахне итлесе. Каçсерен, акă, вĕсем иккĕшĕ те ĕçрен таврăнĕç те апата ларĕç, куçран куçа пăхса çийĕç. Краçук именĕ, Тарас çине пăхса йăл кулĕ. Тарас та Краçук çине пăхса йăл кулĕ, хăйĕн телейĕ çитнĕшĕн хĕпĕртĕ. Кайран вара вĕсем вырăн сарĕç, ачисене çывăрттарĕç. Ачи вĕсен пĕрре кăна пулмĕ-ха. Пĕр-пĕрне юратса пурăнсан, йышлă ача ӳстересси те ырлăх çеç. Унтан хăйсем те выртĕç. Ыйха вĕçтерсе, пуç вĕçне лартнă сехет хуллен çăкăлтатĕ. Ыйăхĕ ахаль те килмĕха. Пӳлĕмри шăплăх, чуна тӳлеклентерсе, ерипен-ерипен кăмăлĕсене çавăрса илĕ. Чылайччен çывăрса каяймасăр выртĕç Краçукпа Тарас. Вĕсем иртнине, хĕвел пек хĕм сапса тăракан яшлăх кунĕсене асăнĕç, куç умне кăларĕç...

...Чупать Тарас, акаци тĕмĕсем хушшипе, вĕрене, тирек йывăçĕсем хушшипе вирхĕнсе чупать. Чупать-чупать те тăп чарăнса тăрать — тăнн хытать, пăши пек, шăплăха итлет. Шăплăхĕ — тĕлĕнсе хытса каймалли, чуна çӳçентермелли; çулçă лăпкăлăхĕ, чĕре ынатлăхĕ. Çĕрлехи тӳпе кăваккăн сарăлса выртать. Унăн кăваклăхĕ çамрăк ӳт-пĕве сăрăлтаттарса ярать, темĕнле вăрттăнлăхпа чыхăнтарать. Сад кĕтессинче ăна Краçук кĕтсе тăрать, шурă кĕпеллĕ, вăрăм çивĕтлĕ Краçук. Шăппăн утаççĕ вĕсем садпа, вĕрене, тирек аллеипе, чĕнмесĕр, аларан алла тытса. Унтан Тарас сасартăк сылтăмалла ыткăнса кĕрет те тепĕрçемĕн икĕ чăп-чă-

мăр панулми татса тухать. «Крăçук, тыт, тутанса пăх...» Чĕрисем иккĕшĕн те тĕпĕртетсе тапаççĕ, кăкăрĕсенче — кĕрхи сăйпа сипетленнĕ панулми сĕткенĕ, пиçсе çитнилĕх. Тăкăнасла!

Тăкăнасла çутă уйăх тӳпере çакăнса тăрать, кĕрхи сăйпа сипетленнĕ панулми сĕткенĕ пек ырă çӳçенчĕклĕх сапалать. Чупать Тарас, каллех вăркăнса чупать, ăшĕнчи чиксĕр савăнăçне пытараймасăр, кăмăл çунатне йӳле ярса. Акă вăл çывăхри улмури патне вирхĕнсе çитет те ун тăрне тĕк пек хăпарса каять. «Эй, çут тĕнче, кăвак пĕлĕт, таса уйăх, илтĕр, тăнлăр. Эпĕ Крăçука юрататăп, питĕ хытă юрататăп!» — тесе хыттăн кăшкăрса ярать. Крăçук пуçне каçăртнă та — кулать, каçăхса кайса кулать: «Ухмах, тăрри шăтăк!» — тесе ахăлтатать. Ян! ян! кĕрлет тулли уйăхлă, чĕре еккиллĕ çĕрлехи шăплăх! Ахрăмăн-ахрăмăн! Тарас улмури тăрринчен аялалла мулкач пек пĕтĕрĕнсе анать те Крăçук умне пырса тăрать. Именчĕклĕн тытать вăл унăн аллине, вăта пӳрнине çепĕççĕн, чун сĕмĕпе хыпашласа тупать. «Акă, ме, ил, икĕ кун ăсталарăм, вунпилĕк пуслăх укçаран...— тесе, Крăçука кĕмĕл çĕрĕ тыттарать.— Ку — пирĕн пурнăçăн талисманĕ пултăр, чĕрӳ манран сивĕнсен — хывса пер,ултав кирлĕ мар!..»

Йăрă çăлтăрсем, çĕрлехи тӳпене сивлеклĕх кĕртсе, кас-кас йăрăлтата-йăрăлтата анаççĕ. Садăн кăнтăр енĕ — уçлăх, янк — тем анлăш кăвак тӳпе. Çăлтăр çумăрĕ çăвать. Август уйăхĕ. Тараспа Крăçук пĕр-пĕрин çумне тĕршĕннĕ те çăлтăр çумăрĕнче шыва кĕреççĕ...»

Акă, Сĕнтĕр ялĕ те хыçа юлчĕ. Сĕнтĕртен Тĕркеçе виçĕ çухрăм кăна. Юр çăралчĕ, лапка-лапка çăвать, тавралăха чавка пуçĕ пек çăмламас юр пĕрчисем карса илнĕ. Хĕвел пек хĕм сапса тăракан яшлăх кунĕсен тата хăш саманчĕсене аса илĕç-ха вĕсем? Чылайăшне. Çакна вара, паллах, манса хăвармаççех.

«...Утать ял урамĕ, салтак юррин эрлĕклĕ кĕввине укăлча хапхи енне çавăтса. Кĕрнеклĕн утать, куççуль

кăлармасăр, енчен енне тĕреллĕ тутăр çыххисене авăсса. «Сывă пулăр, айăпласа ан юлăр, ялйыш!» Мĕн куççуль кăлармалли, вăхăчĕ те урăх, самани те тăнăç, тутăр вĕçтерни те ячĕшĕн çеç — йăлине астуса.

Утать ял урамĕ, халăхпа — ватти-вĕттипе, яш-кĕрĕмпе капланса, Тараса çăра ăсатать. Укăлча хапхине тухсан, халăх чарăнать.

Укăлча хапхи: Шухăш шухăшласа пуçăм та шурчĕ. Тем те илтме, тем те курма тиврĕ хамăн вăрăм ĕмĕрĕмре. Çамрăкчĕ эпĕ, яшчĕ — ватăлтăм, чалăшрăм. Шăмшак сурать, шăмшакка ним хĕрхенми çумăр ислентерет, юр çĕрĕштерет, çил ласкать. Пурнăçĕ те ласкать. Пĕр канăç çук. Пурпĕрех ларатăп çапла, ырра ырăпа ăсатса, усала усалпа кĕтсе илсе. Инçе çула ăсанакансене никама та усал сунман эпĕ, ырă çеç суннă. «Чипер çаврăнса килĕр, çĕрле те, кăнтăрла та ман хапхам яри пулĕ». Тĕрлĕ çынсен шăписем те тĕрлĕ пулчĕç. Пуйма каякан та вилсе килчĕ, вилме каякан та пуйса килчĕ. Пĕтет текен çын пĕтмерĕ, пĕтмест текен çын пĕтрĕ. Ырă ятпа тухса каякан усал ятпа таврăнчĕ, усал ятпа тухса каякан ырă ятпа таврăнчĕ. Таврăнманнисем тата мĕн чухлĕн пулчĕç. Пĕрисем — халăх сăмахне вырăна хумасăр пуç касăртса тухса кайрĕç те — сасси-хури те сарăмсăр таçта кайрĕ. Теприсем, çĕршыв евитлесен, тĕрлĕ усал-тĕселе хирĕç кар çĕкленчĕç те — пуçĕсене хучĕç, халăх асне тивĕçлĕ пулчĕç...

Эх-хе-хей, саманисем саккăр, тамашисем тăххăр килчĕç çав Пурнăçăн! Куççульпе тухса каякан кулăпа çаврăнса килчĕ, кулăпа тухса каякан куççульпе çаврăнса килчĕ.

Паян, акă, Униççе ывăлĕ Тарас çара ăсанать. Ашшĕ те, çирĕм пĕррерискер, çакăнтанах вăрçа ăсаннăччĕ — таврăнаймарĕ. Ывăлĕ шăпи йĕркеллĕ килтĕрех...

Ĕнтĕ çамрăксем пĕр ăстрăм ташласа та илчĕç, пĕр çавра юрă та юрларĕç. Акă, тапранма та вăхăт. Тарас ялйышпа сывпуллашать, кашнинех алă парса çаврă-

нать. Краçук тӗлне çитсен, вӑл ӑна çупӑрласа илет те, укӑлчари халӑхран, тӑванӗсенчен, тантӑшӗ-пӗлӗшӗсенчен именмесӗр, тутинчен хыттӑн чуптӑвать. «Краçук, кӗт, пӗр ӗмӗр, иккӗ, виççӗ кӗтмелле пулсан та — кӗт, манмӑн-и?» — тет вӑл çине-çинех. «Кӗтетӗп, мӗн чухлӗ кӗтме пӳрсен те — кӗтетӗп, кӗтетӗпех, манмӑп»,— пӑшӑлтатать хӗр тути.

Тараса амӑшӗ çул курки тыттарать. Тарас ӑна тӗппипех ӗçсе ярать те аякка-аякка ывӑтать. Кӗленче курка ванмасть, ку — тӗрӗс-тӗкел таврӑнасса. Амӑшӗпе сывпуллашать.

Лав тапранса каять. Тарас аллинчи тутӑр çыххипе сулать, сулать, сулать. Краçук та аллине сулать, сулать, сулать...»

Кӗрекеç çырми урлӑ та чиперех каçса кайрӗ газик. Юр сайралчӗ. Укӑлча хапхи умне çитсен, Тарас машинине чарсах тӑван ялӗ çине пӑхса тӑрасшӑнччӗ, анчах та вӑрӑм урам кӗтессинчен, хӑйсен тӗлӗнчен, капламӑн-капламӑн халӑх йӑтӑнса тухнине асӑрхасан, малалла вирхӗнчӗ.

Хирӗç — тупӑк йӑтса килеççӗ. Тарасӑн ӑшӗ пӗçерсе кайрӗ, çанçурӑмне вӗри çапрӗ. Тем ырӑ мара сисрӗ унӑн чӗри, кӑкӑрӗ ӳслӗкпе чыхӑнчӗ. Халӑх урам хӗреслеһнӗ тӗле çитсе перӗниччен вӑл газикне сулахай тӑкӑрлӑка пӑрма ӗлкӗрчӗ те кӗçӗн урампа килӗ енне çил пек вӗçтерчӗ. Тарас чӗтремех пуçларӗ. Моторне чарса хӑвармасах вирхӗнсе кӗчӗ вӑл пӳртне. Ывӑлӗ, Вадим, урайӗнче теттесемпе йӑпанса ларнине курсан, питне аллисемпе хупласа макӑрса ячӗ. Амӑшӗ, Униççе, тӗлӗнсе чӑр-р пӑхрӗ Тарасӗ çине.

— Кам вилнӗ ара?— хӑйӑлтатрӗ Тарас.

— Э-э, Шӑши Элекçейӗн тупӑкне хирӗç пултӑн пулӗçке эс. Виçӗмкун вилчӗ,— сывлӑш çавӑрчӗ Униççе.

— Пурнӑçне путишле пурӑнса ирттерчӗ те, вилме те çаплах вилчӗ. Такам ухмаххи кулма шут тытнӑ çав, тӑлӑппа мунча кӗрсен — куçу куракан пулать тесе

илёртнĕ. Лешĕ, айванĕ, пӳрт урайне сӳтсе мунча хутнă, ислеhсе кайиччен хăй тăрăх вĕри шыв чӳшкĕнтернĕ, хăва милĕкпе çапăннă. Унтан Пренкке пĕвинче çур сехет шампăртатса тухнă. Вĕри мунча хыççăн сивĕ шывпа сивĕнмелле пулнă иккен — унсăрăн куракан пулаймастăн, тенĕ. Кайран вăл, лĕштĕрех кайнăскер, çырма хĕрринчех выртса çывăрнă. Уралаhаймарĕ вара...

— Анне, Вадим мĕнпе аптрать ара?

— Аптрани-мĕнĕ... çӳрекелетпĕр-ха. Сана, Тарас, ĕнерсемех кĕтсеттĕмĕр. Пит килсех те куркаламастăр та кăчухне. Ни хыпар тумастăн. Ачи чип-чиперех-ха, сывах. Ху мĕнле? Ĕнтĕ пĕр-пĕрне кун чухлĕ йăлăнтарсан çитет пулĕ, çемье чăмăртасчĕ, ялйышран намăс. Хăвăн та хула енне пит тĕмсĕлсех пăхмалла мар, хула пурнăçĕ вăл хулаллах, çавăн чухлĕ пурăнса та хăвăра хула ăшăтмарĕ пулсан, урăх унта ыррине кĕтсе лармалли те çук, яла куçмалла. Шофер ĕçĕ ялта та хисеплĕ. Эпĕ те текех вăйпитти мар ĕнтĕ. Шутларăм-шугларăм та телеграмм çаптартăм, сирĕн ялтах пурнăç çавăрмалла пек, çапла, ывăлăм. Кине те, упăшки пур çинчех, тĕнче кассa çӳрени сăпайлă мар. Ăна та хыпар тутарнăччĕ те, ĕнер каçхине, ав, вăл та çитрĕ...

Униççе хăйĕн сăмахне вĕçлеме те ĕлкĕреймерĕ, тĕпелти чечеклĕ чаршав хыçĕнчен, ыйхă тĕлĕшпе упăшки сассине илтсе, Лида аялти кĕпе вĕççĕнех урай варрине юхса тухрĕ. Хăй савăнăçлă...

Тарас, алăк умĕнче хытса тăраканскер, ăна курсан, кутник сакки çине лакках кайса ларчĕ.

1970



## ÇАВСЕМЕХ ТАТА ВĂЛ

Ĕç хыççăн та Мĕтри кăмăлĕ яра кунхиехчĕ: пăсăкчĕ, тӳрлетсен, тӳрлетсе пĕтермелле мар канăçсăрччĕ, ăмăр çанталăк пекрехчĕ, те уяртасса, те уяртмасса кĕтмелле-ччĕ. Халĕ, ак, аслă урампа Атăл хĕрне пырса тухсан, унăн кăмăлне сасартăках янкăрлăх çупăрласа илчĕ. Чул карлăк патне çывхарса çитеспе унăн пичĕ умĕпех сарă çулçă вĕлтĕртетсе иртрĕ. Çавăн вĕçевĕ савăклан-тарса ячĕ те ĕнтĕ ăш хыппи этеме. Çулçа ытараймасăр сăнарĕ Мĕтри. Пĕр саманта арçын хăйпе мĕн пулса ирт-нине те тавçăраймарĕ, вăл пĕшкĕнчĕ те асфальт çумне халь-халь каялла çĕкленесле лăпчăннă çăка çулçине алла илчĕ. Тепĕрçемĕн унăн чĕри çутă-çутă, ку тарач-ччен ăна час-час иленмен ахах-мерчен керменĕн ăшшипе капланчĕ. Туйрĕ Мĕтри — чылай вăхăт кару тытса пынă пурнăçне тăнăçлăх килчĕ.

Атăл — çарамас пике. Мăн юханшыв — çӳçенчĕк, кăчăрланнă пӳне ăшăтасшăн кĕрмешет вăл. Кĕрмешни сая: хумпа мĕн чухлĕ витĕнме тăрмашать, çавăн чухлĕ витĕнеймест хăй. Мĕтри пĕр-пĕр япала çине аяккинчен, тепри асăрхаса пĕтерейменнинчен пăхма юрататъ. Ку унра суя мăнкăмăллăх та çураткалать. Паллах, мăнкăмăллăхне çын çине кăларма, таса мар шыва кӳршĕ алкумĕ умне кайсах тăкма хăйăвĕ çитеймест унăн. Ку хăйăва вăл çĕнтересшĕн те мар. Капла шанчăклăрах — ху ăшăнти хăв ăшăнтах юлать, çын пĕлмест, сисмест. Çавăн пек чух ăна хăй ăшĕнче такам, ăслăраххи пур пек те, çав ăслăраххи иментерсе тăрать пек. Тӳрех, сăмаха пат татса калас-тăк, Мĕтри пĕртте япăх çын мар. Кӳрши-аршипе нихçан урлă пулса курман вăл, чăкăлташни çук, пуçлăхсемпе те пуçлăхсемле, вĕсене хăйĕнчен мала та хумасть, кая та лартмасть, пĕрле ĕçлекенсемпе те пĕрлелле. Пĕр сăмахпа каласан, тикĕс пурăнать Мĕтри, шăв-шавсăр, тулăклă. Çук, вăрттăн чунлă çын та темелле мар Мĕтрие. Вăрттăн чунлă пулма пĕрне-пĕрне вĕчĕ те тытса пурăнмасть вăл. Йĕркеллĕ пурăнасшăн Мĕтри, никампа харкашмасăр, никам умĕнче айăпа кĕмесĕр. Пурнăçĕ те унăн çаплалла пулас — ни унталла, ни кунталла... Çине тăниех те, алăран яниех те сисĕнсех каймасть, лаши туртсан, лавĕ шăвать, туртмасан — вырăнтах тăрать, тенĕшкел. Мĕтрие иккĕленчĕк, пиçмен çын вырăнне хурса куçран калас пулсан, çилленмелли-пех çилленĕччĕ вăл. Аçтан калăн-ха ун пек? Çынни тепĕр ик-виç уйăхранах виç пӳлĕмлĕ хваттер илмелле те... Унашкал çынна хурласа калаçмалли çуках. Хваттерне ăна пасарти кукăль пек ыйтан-пĕрнех тыттармаççĕ те... Тепĕр тесен, тем каламалла Мĕтри çинчен, ăнланса пĕтермелле мар этем пуль вăл? Пулаççĕ вĕт-ха унашкаллисем те...

Мĕтри Атăл хĕррипе тăвалла хăпарчĕ. Аналла-тăвалла анакан-хăпаракан пăрахутсене чылайччен сăнаса тăчĕ вăл. Сивлекрех çанталăк та, пăрахутсен

сывпуллашу туйăмлă сасси те хуйхатмарĕ, кичемлетмерĕ ăна. Паçăр вăраннă савăклăх ӳссех пынине туйрĕ арçын.

Çăка çулçи, асфальт çине вĕçсе ӳкнĕскер, çын аллине лексе пăртак пурăнма пӳрнишĕн хĕпĕртесе, текех çилпе утьăкка сикрĕ.

— О-о-о, Мĕтри тем! Миçе хĕл, миçе çу! — çывăхрах янăраса кайрĕ хĕрĕнкĕрех хулăм сасă.

Мĕтри сасă илтĕннĕ енне вăрт тăлпăвне пăрчĕ те Самаровпа пите-питĕн тĕл пулчĕ.

— Салам çĕнĕ çĕрсене!— тăснă алла ирĕксĕртерех-хĕн чăмăртарĕ вăл.

— Ия çав, командировка укçи илтĕм, çав ятпа пăртак сыпса лартрăм-ха. Ыран тепĕр ушкăн Çĕпĕре ăсататпăр, эп — вĕсене леçсе яраканни. Қайччăрах, каяссисем килсен, мана кунта та лайăх, ĕç укçи аван. Шутлапшутлап та, мĕн ырри пур çав таçти мур шăтăкĕнчи Çĕпĕрте. Ăсататпăр, ăсататпăр — каяс текеннисем тупăнсах пыраççĕ, иксĕлмеççĕ. Хам эп укçине пахучĕлех парсан та тапранассăм çук. Ĕçле-ха унта... Қалас-тăк...

Мĕтри Самарова тăрăх пăхса илчĕ те чутах сасăпа кулса ямарĕ: Самаров ăна кăнтăр кунĕнчи тăмана пек туйăнса кайрĕ. Пичĕ-куçĕ тăртанса ларнă, çӳçне-пуçне мăкла така пек лăпăстаттарса янă, пиншакĕ йӳле. Хăй лăпăс-лăпăс тума хăтланать — вĕçеймест — ытла çутă. Çутăпа Мĕтри хăйне танлаштарчĕ. Анчах та çыннине куçкĕрет хисепсĕрлетсе тăма аванах маррине ăнланчĕ те, хĕрĕнкĕ арçын сăмахне малалла чупма реххетленсех ирĕк пачĕ.

— Қалас-тăк... Итле-ха, Мĕтри, атя пĕр икçĕршер грамм кайса хаплаттарар, тĕл пулнă ятпа. Ĕçмен тесе калаймас хама — ĕçнĕ. Ĕçнĕ-тĕк, анабиос шайне çитерес. Анабиос мĕнне пĕлен пуль? Пурнăçпа вилĕм хушшинчи чикĕ вăл. Астăватни, хаçатсенче çырчĕç, темиçе пин çул тĕлĕрсе выртнă хыççăн икĕ тритон чĕрĕлсе тăнă тесе. Эпир — хăть пĕрре вилсен тепре чĕрĕлес çук та, пурпĕрех тĕтĕм йăсăрлантарса илни пăсмасть.

— Çук пуль, каçар та, ĕçместĕп эп, вĕренмен тесе каламалла-ши, пăрахнă тесен тĕрĕсрех пулать-ши...

— Ан тĕлĕнтерсем, Мĕтри. Эс хĕрарăм мар вĕт чиперленсе тăма. Атя, атя, çур литр илтĕм те никампа пушатма аптраса çӳретĕп. Пĕччене нумай мана, хăвах куран, яркаланă эп маларах та. Пĕр юлташа пĕр ĕç туса панăччĕ, вăт çав пычĕ те атя та атя, тет. Хĕртĕмĕр вара самай, ĕç вăхăтĕнчех. Çынна ăçтан кӳрентерен, ӳкĕтлетех пулсан. Хам та турткалашсах тăмарăм, эпĕ ăна татах та кирлĕ пулас çын та...

— Ан çиллен те, пач кăмăл çук эрех таврашне. Эп, ак, уçăлса çӳреме тухнăччĕ.

— Мĕтри, ăнланса пĕтерейместĕп эп сана. Темле çын эс, тепĕр чух çынни çын евĕрлех, тепĕр чух кикен çиетĕн-няк. Юрĕ, урăх ӳкĕтлеместĕп. Тепĕр тесен, хисеп ту ара мана — арăм виççĕмĕш хĕрача çуратса пачĕ вĕт!

— Ху-у? Саламлас апла сана, саламлас.

— Мĕн саламламалли, ывăл çуратса парсанччĕ хăть.

Самаров сăмахĕ тӳрремĕнех Мĕтрие те пырса тивни ăна аванмарлатса ячĕ. Самаров сăмахĕ ун ăшне пĕр кашăк тикĕт сапнă пекех пулчĕ. Пурпĕрех Мĕтрири çутă тĕнче тĕксĕмленмерĕ. Унри çутă савăклăх тĕлкĕшрĕ, хыпса кайма пултаракан чунне лăпкăлăх кĕртсе тăчĕ.

— Санăн та пĕр хĕрчĕ-и-ха? — тĕпчерĕ Самаров.

Мĕтри хурав тумарĕ. Арăмĕ виçĕмкун çеç тепĕр хĕрача çуратса панин савăнăçне ют çынпа пайласси килмерĕ унăн. Самаров — çăмăлçах çын, Мĕтри чĕрине ăнланаяс çук. Самаров çинчен вăл яланах çапла шутлать. Институтра вĕреннĕ чухне те çаплаччĕ этемми — çиелтен пурăнма юрататчĕ.

— Хĕрачи пĕррех пуль-ха, ку тем мар, ну, атя, ман йăх тăсăмĕ çуралнине палăртса ӳпĕнтерер пĕрерĕшне, кафене кĕрсе,— хăй çав вăхăтрах ихĕлтетсе илчĕ.

Кафене кĕрсен, Самаров икĕ çăмартапа икĕ кукăль туянчĕ, эрех ĕçнĕ хыççăн сыпма тесе, ик алтăр сăра

ăстарчĕ. Ларасса Самаровĕ верандăнах тухса ларасшăнччĕ, унта пĕр пушă сĕтел те тупăнманнине кура, кунтах, пĕр кĕтессе хĕсĕнкелеме тиврĕ вĕсен.

— Илтнĕ-и эсĕ, Мĕтри, Çинук качча тухнă вĕт,— тĕнчере çук чаплă хыпар пĕлтерсе шалт тĕлĕнтересле каларĕ Самаров çакна, стаканпа чăп-чăммиех эрех тултарса ĕçсен.— Эп хам та малтан ĕненмерĕм. Ара, тĕрлĕ арçынпа пурăнкаласа вăтăр урлă каç та — черкке сăнлă капăр каччă тупса яр. Шуткă мар вĕт ку!.. Паçăр ресторана пĕрле çавтăнса кĕрсе кайрĕç. Çинукĕ паллаштарман пулсан, çав сар сăмсана упăшки вырăнне хураяс та çук, чат чĕчĕ пăрушех ĕнтĕ. Хăй именет, хĕреле-хĕреле каять, Çинукĕ çинчен куçне илеймест, Çинук каланă сăмахсăр пуçне çĕр çинче урăх нимĕн те çук тейĕн çав. Лайăх çаклатса янă вара, хĕрарăм темерĕн, пурăнма пĕлет, каяннăй пуçĕ! Каччине шел. Антарассăн туйăнать иккĕшĕ. Çапла ĕнтĕ пурнăçра — çемьере пĕрин ăсларах пулмалла. Ăсли кунта — Çинук!

— Ним те калама пĕлместĕп. Тен, чăнах та, ăс кĕнĕ пуль Çинукне те. Пĕрехмай çил хăвалласа та, хывăх аллаcа та йăлăхтарать пулĕ. Ури çине ĕне пуснă-тăр,— Самаров пелкенине итлес килмен çĕртен хăлхине чиксе ларчĕ Мĕтри.

— Эс, мĕн, çак, шаклатрăмăр пулать те, ĕçмесĕр ларатăн ара? Çын куриччен ӳпĕнтерер, тавай.

Веранда кантăкĕ витĕр пĕр çамрăк мăшăр апат çисе ларни курăнать. Хальтерех пĕрлешнĕскерсем пулас. Тем çитмен, иккĕшĕ те тутине тăснă. Туйрĕ Мĕтри — çамрăк мăшăр ăш хыпипийĕ вăхăтлăх кăна.

— Пĕлетĕн-и эс тата, Мĕтри, Лаксимовсем уйрăлнă. Илтмен-и?

— Илтĕнчĕ. Ахаль пĕлместĕп, теме пула...

— Вăт, ĕнер Вени япалисене турттарса тухса кайрĕ, тет, пĕр ача туман хĕрарăм патне киле кĕме, имĕш. Хăйпе курса калаçаймарăм, пĕлсен — тĕплĕнрех каласа парăп. Вали те вара, арăмĕ ĕнтĕ, икĕ ачипех тепĕр ар-

çын патне куçрĕ. Арçынни мĕн тет-и, урçа тет-и. Нихăшне айăплама та пĕлмелле мар. Иккĕшĕ те чĕкеçсем пек пурăнатчĕç. Çич-сакăр çул тăрăшса йăва çавăрчĕç. Халь, ак, пăх та пĕççе çапса тăр — çемье пурччĕ — пăнч салан-са кайрĕ. Эс, Мĕтри, çынна питех ан шарла-ха, сăмаххи атту мана лекĕ,— Самаров, сассине пусарса, Мĕтрие кăчăк туртрĕ.— Мĕн тет-и, Вали Венине ют хĕрарăм патĕнче тытнă, тет-и. Вали Венине шифоньертан туртса кăларса пăскăртнă тенĕ сас-хура та пур. Пурăнма çавах текех пурăнаймăпăр, килти çӳп-çапа урама шăлса кăларса çынна калаçтарар мар, тесе, сăмах татнă пулать хăйсем. Лăпкăн уйрăлнă та — ĕçĕ те пĕтнĕ. Арăмĕ шалăп панă пулсан, Венине хытă лектеретчĕç... Пĕлекенсем Валине те çылăхсăрах темеççĕ те-ха, ахальтен кам тӳрех хваттерлĕ арçын шыраса тупайĕ...

Мĕтри арăмне асне турĕ. Паян пĕрре пулнăччĕ вăл ун патĕнче. Çимеллисем леçсе панăччĕ ача çуратмалли çурта. Ачине те кăтартнăччĕ Тоня иккĕмĕш хутри пĕр чӳречерен. Мĕтри, пĕчĕк кĕмерккене лайăхах уйăрса илеймерĕ пулин те, пуçне каçăртса савăнăçлăн кулкаласа тăнăччĕ. Паян тепĕр хут каясшăнччĕ — ĕлкĕреймерĕ. Ыран ик-виççĕ те пырса кайĕ ун вырăнне. Ывăл кĕтетчĕ Мĕтри — кĕтни пӳрмерĕ, ав. Хĕрача çуралнă тенине пĕлнĕ-пĕлменех кăмăлсăрланса та илнĕччĕ вăл, ку туйăм унра нумай тăмарĕ, тӳрех сĕвĕрĕлчĕ. Ара, ачи хăйсен-çке, çĕнĕ чун, çĕнĕ кайăк, текелерĕ хăй ăшĕнче хĕпĕртесе. Вара тӳрех Тоньăна хавхалануллă çыру çырса пачĕ.

— Итле-ха, Мĕтри, мĕн эс, савăнса лармалла чухне сĕнксе ларатăн çак, э?

— Тем, шухăша кайнă пек пултăм-ха... Савăнăçĕ ман та пысăк ку чухне — хĕрача çуралчĕ, иккĕмĕшĕ.

Самаров, ларнă çĕртен хĕрӳллĕн çĕкленсе, «саламлатăп, саламлатăп» текелерĕ, унтан, тенкелĕ çине лаках ларса, тин çеç хăй мĕн калавине манса кайнăн, çапла лаплаттарса хучĕ:

— Çемьери ытлашши пыр ĕнтĕ, мĕн калас пур. Çăкăр çитерсе ӳстер те вĕсене, ашшĕне сăпаçипĕ те каламĕç — качча тухса вĕçĕç. Мĕн усси вĕсенчен. Çын валли ӳстеретпĕр вĕт. Ывăл тесен, урăх калаçу хăть. Йăх тăсăмĕ темелле. Вăл çапла-ха, хĕрачисĕр те йăх тĕпĕ малалла тăсăлмасть,— Самаров, ытлашширех лĕпĕртетсе кайнине хăех ăнкарса илчĕ пулас та, сăмахне урăх еннелле пăрма пикенчĕ.

— Ачи-пăчи тарам-ха. Вĕсене çуратса янă — ӳсĕç. Хамăр мĕнле пурăнкалăпăр — вăт,— ку сăмахсене вăл Мĕтрие чеереххĕн пăхса каларĕ, ăна пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç çинчен систерес пекех.

— Итле-ха, Мĕтри, ав, верандăра апатланса ларакан мăшăрăн пурнăçĕ шакăлтатсах пырĕ тейĕн-и? Çук, пыраймĕ!

— Ма пыраймĕ-ши?

— Çук, пыраймасть. Пăх-ха пĕрне-пĕри юраттарасшăн епле хăшкăлса лараççĕ. Ун пек чух пурнăç ăнмасть, каларĕ тесе калăн, хам пĕлеп.

— Қапла каласа, теме шахвăртатăн ĕнтĕ эс?— Мĕтрие Самаров сӳпĕлтетĕвĕ йĕклентерсех çитерчĕ. Унпа кафене кĕрсе ларнăшăн вăл хăйне ăшĕнче вăрçса та илчĕ. Самаров сăмаха хăш еннелле сулăнтарнине те пĕлет Мĕтри. Самаров — тирпейсĕр этем, çемьен тирпейлĕ пурнăçне ĕненмен çын, уншăн — пурте пĕрешкел, пурте хура, çут тĕнчере ним çутти те çук.

— Пурнăçа ăна майласа пыма пĕлмелле. Вăл тикĕт сĕрмен урапа евĕрлех, вăхăтра сĕрмесен, хăлхана йӳçĕхтермелле чĕриклетет,— Самаров самаях хĕрчĕ курăнать.— Эп çемье пурнăçĕ пирки-ха. Çапли çаплах ĕнтĕ — юратмасăр пĕрлешмен, анчах ĕмĕр тăршшĕпе юратупа пурăнма çук, пĕр савăт-сапа йăлăхтарнă пекех, пĕр арăм та йăлăхтарать.

— Э-э-э...

— Атя, юлашкине ĕçер те...

— Çитрĕ мана, тавах сăйушăн...

— Э-э, тавпах ёç тухмасть-ха. Пăх-ха, сана, тем, эрех витмест курăнать. Эп, ак, чалăшрăм. Ку тепĕр стаканĕ те сана нипочем-ха. Ĕç, ĕç, юнтарса ан лар... Итлеха, эс çав Петр Сидорч арăмне паллаймастăн-и?

— Паллап-çке. Хамăр начальник арăмне те палламасан...

— Çавсемпе пĕр ĕçкĕре пулма тӳр килчĕ. Çаксĕер çулăхма пуçларĕ, Ангелина... Мĕнлеччĕ-ха, хĕрарăмĕ?

— Ангелина Петровна.

— Аран хăпса пĕтрĕм,— Самаров канăçлăн ихĕлтетрĕ.— Эс тем ан шутла, арăмĕ мар-ха, эп хамах çыпăçкалама хăтланса пăхрăм, çирĕп хĕрарăм, мур...

Верандăри çамрăк мăшăр, апатланса, каферен тухса кайрĕ.

— Итле-ха, Мĕтри? Сана эп тус та тус тетĕп. Пулăш-ха пĕрре. Шифер кирлĕ пулчĕ мана. Çав тери. Хăвах пĕлен — ăна уйрăм çынна сутмаççĕ. Сана ал май, ара, унта ĕçлетĕн те-ха. Çавăнтах ĕçлетĕн пуль халь те?

— Çавăнтах-ха.

— Вăт-вăт, ун пек-кун пеке наччасрах майлаштарма пултаран эс. Хакĕ пирки калаçсах тăмăпăр. Хамăрăнне хамăр чухлăпăр унта. Халиччен никам та ӳпкелесех калаçмастчĕ-ха ман çинчен,— тутине чăп-чăп тутарса, Самаров савăнăçлăн ихĕлтетрĕ. Вăл ихĕлтетни карта хушăкне хĕсĕннĕ качака сасси пек илтĕнчĕ Мĕтрие.

— Шифер?— Мĕтри талăрса кайрĕ ăшĕнче. Анчах та кăмăлне палăртмарĕ. Куркалана. Самаров пек çынсемпе асăрханса калаçмалла. Унашкалсем усал тунине ĕмĕрне манмаççĕ. Каласа пăх-ха тӳррине, шифер тупса пама пултарайманнине — чĕррĕн хышласа ярĕ, вĕчĕ тытса пурăнĕ. Чăннине каличчен унашкалсемпе — суя çур пурнăç.

— Шифер-и? Пăхкалăпăр шухăшласа.

— Пăх çав, пăх шухăшлакаласа. Тус вĕт эсĕ ман, студент çăкăрне чейпе çемçетсе пĕрле çинĕ те. Эс хăть ик-

кĕмĕш курсран пăрахса Мускава кайнăччĕ пулас-ха. Çапах-та — туссем-çке.

Чăн та, Самаровпа Мĕтри пĕр институтра вĕренетчĕç. Учитель пулма хатĕрленетчĕç. Çавна систерчĕ те ĕнтĕ вăл. Мĕтри икĕ çул вĕренчĕ те хăй учитель пулма пултарайманнине тавçăрса илчĕ. Каях юлман, ӳлĕм, мĕн ватлăхчен ӳкĕнсе пурăниччен тесе, инженера вĕренме тапратрĕ. Вĕренсе те тухрĕ — ĕçĕпе те кăмăллă.

— Унта куç курĕ,— текелесе, шифер çинчен пыракан калаçăва путарса лартма хăтланчĕ вăл.

— Юрĕ, эппин, сăмахху тăн-тăн пултăр. Юлашкине тултарас-и?

Мĕтри тăчĕ. Ăна кура Самаров та, стакансем çине ӳпĕнтерме пиккеннĕ бутылкине пальтин шалти кĕсйине чăмтарса, тухма пуçтарăнчĕ.

Самаровпа курнăçиччен Мĕтри хăйне пĕр самант хĕпĕртӳллĕ çын евĕрех туйса илнĕччĕ, халĕ — темле каламалла — икĕ тĕплĕ витрери пек. Тем лайăх марри, этем ĕренкĕсĕрри пытарăннă Самаровра.

Тухрĕç. Самаров хирĕç килекен арçынна елпĕрсех сывлăх сунчĕ. Тепĕрин тĕлне пулсан, хăртмăш арпи вĕçтерекен пасар матки майлах, унпа шапăлтатса кайрĕ. Самарова Мĕтри кирлĕ те пулман тейĕн, тĕл пулнă çын çумне вăл сăвăс пекех çыпçăнчĕ, çĕр çул курмасăр пурăннă тăванĕ, тейĕн. Вĕсем, кĕрхи шăплăха хуйхатмалла кĕрлесе тăркаласан, Мĕтрипе сывпуллашрĕç те каялла кафене уттарчĕç.

Тинех лаш! сывласа ячĕ Мĕтри. Вăл, Самаров хуса çитесрен шикленнĕ евĕр, скверпа васкаса анчĕ, урама тухрĕ, халăхпа хутшăнса кайсан тин уттине çемçетрĕ.

«Мĕн амакĕшĕн сĕтĕрĕнсе килмелле пулчĕ-ха Атăл хĕррине. Эй, апла мар-ха. Кăмăл та ман Атăл хĕррине тухнипе çеç çуталса кайнăччĕ. Самаровĕ, Самаровĕ тата... Кай, ним çинчен те шухăшлаттарас мар-ха пуçа, пĕрех хут...»

Кĕрхи хĕвел ăшăнкисĕр. Анса ларасса та вăл часах

анса лармалла. Кĕрхи хĕвеле хĕне кайма пуҫланă хитре хĕрпе танлаштарма пулать. Хĕвел-хĕр, иртнĕ ырлăх кунĕсене аса илсе, сайра хутра питне кулăпа ăшăта-ăшăта илет, ҫав вăхăтрах шет ĕмĕри кĕскелсе ҫитнине те ăнланса тăрать.

Сулхăн ҫилпе ҫулҫă татăла-татăла ÿкет.

Мĕтри шухăшĕ, шухăшлас мар тенĕ ҫĕртенех, Самаров ҫине ÿкрĕ.

«Лартăм вĕт-ха вăл сÿпĕлтетнине чăтса! Кунта ăна мар, мана хама пăскăртмалла мар-ши йÿнелсе кайнăшăн, хамри мĕскĕнлĕхе ҫĕнтерсе, Самарова пăрахса утма хал ҫитерейменшĕн. Эп хĕрĕнкĕ-и? Чĕптĕм те! Самаров сисиччен эрехне эп кĕтессе тăкса пыма ĕлкĕртĕм. Ҫук, эп чыссăрла калаҫса курман, никам умĕнче те. Апла ма пит сынсен ҫемйи ванчăкĕсем ҫинчен палкаНине хăлхана тăратса итлеме хăю ҫитертĕм?.. Эп мĕн те мар, суеҫĕ-ултавҫă та мар. Кам вара эпĕ? Эпĕ-и?.. Ҫук, манăн кунта нимĕн чухлĕ айăпăм та ҫук. Мана пĕртте айăплама юрамасть. Мĕншĕн тесен... мĕншĕн тесен Нинăн хăйĕн ҫаплалла кăмăлĕ пулнă-тăр. Нина-и? Нина качча каяйман ват хĕр-ха вăл. Пĕрле ĕҫлетпĕр эпир. Ҫук, пирĕн хушăмăрта нимĕн те пулман. Аҫтан пулма пултартăр-ха? Эп ҫемьеллĕ сын, ача ашшĕ. Нина вара? Нина-и?... Юрĕ тейĕпĕр, «Н» тесе ал пусса сырнă ҫыру илнĕ пулам. Ҫырăвĕнче вăл кинона пыма йăлăнса ыйтнă тейĕпĕр. Эпĕ каймарăм-ҫке. Кайнă пулсан? Кайнă пулсан, мĕн япăххиччĕ-ши? Кино пăхса пĕтереттĕмĕр те иккĕн ик еннелле пăрăнса утнă пулăттăмăр. Аванччĕ-и вара мăшăрăм пур ҫинчех ют хĕрарăмпа киносем тăрăх сĕтĕрĕнсе ҫÿреме! Ун чух мăшăрăм сукчĕ, кăнтăра ачапах канма кайнăччĕ. Анчах та вăл унта ĕмĕрлĕхе кайманччĕ-ҫке; каялла та таврăнмалли ҫынччĕ. Эпĕ-и?.. Кăмпана та каймарăм эпĕ Атăл леш айккине. Йыхăрчĕ «Н», каллех тĕмсĕлсе ҫыру ҫырчĕ. Кайнă пулсан?.. Кайнă пулсан, мĕн япăххиччĕ-ши? Ҫапах та каймарăм-ҫке...

Самаров — йӗксӗк, пӗтнӗ ҫын. Анчах та вӑл хальхи пек тирпейсӗр ҫуралман вӗт-ха. Ҫураласса та ҫуралман-тӑр та — институтра вӗреннӗ чухне еплерехчӗ! Пӗр студенкӑпа явӑҫсах кайнӑ, тетчӗҫ. Ӑҫаларса ямаллах тунӑччӗ те, студентки патне киле кӗрсе юлма ӗлкӗрнӗ, тӳлтӳк. Пурӑнасса унпа ҫулталӑк та пурӑнмарӗ. Тепре авланса ячӗ, кайранхисене пӗлсех пӗтерейместӗп. Пӗлекенсем ку арӑмне пиллӗкмӗш теҫҫӗ-и? Лешсенчен ачи пулман та — тухнӑ та вӗҫнӗ, кунран час хӑпаймӑн, ҫырӑннӑ — алимент шӑйӑраҫҫӗ. Чеи те чее ӗнтӗ, мӗн каласси. Яла каймарӗ-ха, хуларах юлчӗ. Ҫулталӑкне пӗрре ӗҫ улӑштарать. Халӗ тата тупнӑ ӗҫ — выртан каскана тӑрӑх ҫавӑрса хумалли — чӑвашсене Ҫӗпӗре ӑсатать, имӗш. Хӑвна сана пилӗк авма пӗр-пӗр стройкӑна кайса ярасчӗ. Пӗр шутлатӑн та, йӑвансах каймалла — тем тӗрлӗ ҫын та пур ҫут тӗнчере. Нумайӑшӗн ӑшӗсем питӗрӗнчӗк. Мӑйӑр пек — хуппи чиперех — шалта темле, те пур вӑрри, те, пур пулсан та хуртлӑ? Ҫавна пӗлесси хӗн...»

Мӗтри, аслӑ урампа тӑвалла утнӑ май, куран-тӑвансене пуҫӗпе сӗлтсе сывлӑх сунса пычӗ, хӑшӗ-пӗрне алӑ тытсах ирттерсе ячӗ, ача кӳми тӗртнӗ ҫамрӑк мӑшӑра тӗл пулсан, чарӑнса тӑрсах, вӗсемпе сӑмахларӗ. Ивановсем пулчӗҫ-ха кусем — Мӗтрипе пӗр ҫуртра пурӑнакансем. Лешсем Тоня сывлӑхӗ пирки ыйтса пӗлчӗҫ, Тоня патне ача ҫуратмалли ҫурта кайса хисеп туса килессе юмахларӗҫ, вӑл хӑҫан тухасса хистесех ыйтрӗҫ. Сӑмахюмах шала кӗрсех пӗтмерӗ пулин те, пӗрне-пӗри шутсӑр юратакан ҫынсем пек пушӑ вӑхӑтра пырса ларма йыхӑрса (ытларах Ивановсем тӑрӑшрӗҫ-ха, Мӗтри вӗсене итлесе ҫеҫ тӑчӗ), кӑмӑллӑн, калаҫа-калаҫа, ейӗлсе уйрӑлчӗҫ.

«...Акӑ тата тепӗр ҫемье... Пӗр ҫуртрах пурӑнатпӑр вӗт-ха, виҫҫӗмӗш ҫул. Виҫӗ пуслӑх пӗлеп-и вӗсене? Пӗлместӗп, ҫур пуслӑх та. Ҫын ҫинче вӗсенчен ҫепӗҫҫи, япшарри те ҫук. Тӗл пулан — пӗрне пилӗк авса

сывлăх сунаççĕ, сăмаххи епле пыл пек юхса пырать тата... Тĕлĕнмелле! Шалт тĕлĕнмелле! Кÿршисем калаççĕ вĕт-ха — Ивановсен çÿç тустарса хирĕлмен кунĕ те иртмест тесе. Пĕр пуçласан, пĕтĕм саватсапине ватса пĕтереççĕ, теççĕ, ÿсĕрпе те мар, урă пуççăнах, теççĕ. Темме, кам пĕлет. Кур-ха хăйсене, кушакпа хăйма пек урамра. Ивановсенчен сăпайлă мăшăр çĕр çинче ку таранччен пулман та, пулас та çук, тейĕн çав аптранă енне...»

Мĕтрие хăй ĕçлекен завод директорĕ асне килчĕ. Тĕрĕссипе завод директорĕ те мар-ха, унăн алапаш арăмĕ. Алапашши алапашах ĕнтĕ, ăна пурте курнă, пурте пĕлеççĕ. Анчах ку хĕрарăмăн кăмăлне пурте пĕлейместĕ çав. Эй, епле пĕçерккĕ пачĕ вăл пĕррехинче упăшкине чаc таврăнманшăн. Çав кунхине пуху пит кая юлса пĕтнĕччĕ те, çавăншăн мăкăрлантарнăччĕ ăна арăмĕ. Эпĕ, пĕр кĕнеке илме тесе, çула май çеç кĕнĕччĕ. Эй, ятларĕ, эй, ятларĕ. «Сана кунне миçе шăнкăравлама калана — пилĕк хут, а эсĕ? Телефон ларттартăн пулсан — пĕтĕмпех пĕлтерсе тăрас пулать арăмна, пăх-ха эсĕ ăна—лÿпперленсе кайнă! Санăн шăнкăравласа тăмалла киле, ман мар. Эп сан хыççăн йĕрлесе çÿреместĕп. Кĕт, кĕт, шăнкăрав сасси çук та çук. Юри хам шăнкăравламарăм. Мĕн тăвать-ха ку, тетĕп. Санăн, килрен писнĕскерĕн, арăм шухăшĕ те çук иккен». Упăшкине çăвар та уçтармасть. Эс капла иртĕхме пуçласан, асту, çÿлтисене пĕлтеретĕп, унта мĕн тумаллине пит аван пĕлеççĕ мансăрах»,—тет. Ангелина Петровни те хаяр та, директорĕ те чупать пулĕ çав, ахальтен ма мăшăрĕ тĕк татнă пек хирĕлĕ, çурăлас пек хĕремесленĕ.

Мĕтри директорăн килти пурнăçĕпе çыхăннă шухăшĕсене те сирсе яма тăрăшрĕ. Сирсе яма пикенсех çитнĕ пек çĕрте ăна каллех ача кÿми тĕртнĕ Ивановсем кĕтсе тăчĕç. Ивановсем те нумай тытăнса тăмарĕç ун асĕнче, килсе çакланчĕç те, кĕрхи çавраçилпе хуйханнă çÿп-çаплă, самантрах таçта çухалчĕç. Халĕ Мĕтри пуçне никам

та мар — хӑй, улт-ҫич ҫул каялла ача кӳми тӗртсе ҫӳрекен Мӗтри килсе ҫыхланчӗ.

Ах, мӗнле тӗртсе ҫӳресси килместчӗ унӑн ача кӳмине ун чухне. Ача кӳмине мар, кире пуканӗсем тиенӗ лава тӗксе пынӑнах туйӑнса пыратчӗ ӑна. Мӗнлерехчӗ Мӗтри пурнӑҫӗ авланиччен — ҫӑтмахчӗ! Ҫирек мӗн тӑвас килетчӗ — ӑна тӑватчӗ, кинона, театра-и е урӑх ҫӗре — хӑй еккине кура ҫеҫ. Пурӑнма хваттерӗ те реххетлӗччӗ, общежитире пӗччене пӗр пӳлӗмре савӑшса пурӑнатчӗ. Авланчӗ те, ҫак ҫӑтмах йӑлт арпашса кайрӗ. Авлансанах арпашса кайманччӗ-ха вӑл, ача ҫуралсан нимле мар пулса кайнӑччӗ. Ӗҫ хыҫҫӑн пӗччен тухса ҫӳрес тесен — арӑмӗ яхӑнне те ямарӗ, пӗччен ҫӳресси пирки ҫӑвар та уҫтармарӗ. «Пӗрлешрӗмӗр-тӗк — нуши те пӗрле пултӑр, савӑнӑҫӗ те»,— ҫапла пулчӗ арӑмӗн сӑмахӗ. Малтанласа виҫ-тӑватӑ хутчен те тухкаласа кайса пӑхрӗ Мӗтри — парӑнмасла. Тоня хирӗлчӗ, унтан, ҫапла хӑтланкалани илемлех курӑнманнине тавҫӑрса, пӗччен тухса ҫӳресси ҫинчен урӑх ҫӑвар та уҫмарӗ. Тӗртрӗ вара вӑл ача кӳмине — иртерех авланнишӗн, тӗрӗсрех каласан, ҫемьеллӗ пурнӑҫшӑн пиҫсех ҫитейменшӗн хӑйне хӑй тулхӑрса. Ача кӳмине тӗртсе ҫӳреме тивнӗшӗн вӑл никама та мар — арӑмне ятларӗ, арҫын ӗҫӗ мар пек туйӑнчӗ ӑна ҫак чыс. Ашшӗ тивӗҫӗ Мӗтрире каярахпа тин йӑл илчӗ. Йӑл илчӗ те чунӗпе мӑнаҫланса кайрӗ вӑл. Ҫын ӳстерес тивӗҫпе хӑпартланчӗ!

— Дмитрий Васильевич, ырӑ каҫ пултӑр. Ним пӑхмасӑр утатӑр та, таптаса кайиччен пӑрӑнса ӗлкӗрес, терӗм...

Мӗтри пуҫне ҫӗклерӗ те хӑй умӗнче Зина тӑнине курчӗ. Зина Мӗтри юлташӗн, Петӗрӗн, арӑмӗ.

— Зина-ҫке, сывлӑх пултӑр. Ӗҫ хыҫҫӑн уҫӑлмалла тесе Атӑл хӗррине кайрӑм та, унтан хӑпаратӑп,— ыйтнӑ пекех каласа ӑнлантарчӗ Мӗтри.

— Эпӗ лавккана тухса кӗрес тесеччӗ... Тоня мӗнле? Эп виҫӗмкунсем ҫитсе килнӗччӗ ун патне, халь, ак,

вăхăчĕ те тупăнкалаймарĕ. Хамăр та иккĕмĕш хут çавăнталла хатĕрленетпĕр те,— Зина, хĕрелсе, пуçне пĕкрĕ.

— Чиперехчĕ. Кунне иккех кайса тăнăччĕ. Паян ерçеймерĕм, ирпе кĕрсе тухрăм та... Тепĕр виç кунтан кăлараççĕ тесе çырать хăй.

Пĕр хушă Мĕтрипе Зина чĕнмерĕç. Мĕтри ку хушăра Зинăн, упăшкисĕр тăрса юлнă хĕрарăмăн, савăках мар пурнăçĕ çинчен шухăшларĕ. Упăшки унăн, Петĕр ĕнтĕ, ялта отпуск вăхăтĕнче чухне пĕр ачана пушартан çăлса вилнĕ. Пуçĕ çине пĕрене ишĕлсе аннă унăнне. Ачине пурпĕрех йăтса тухма тухнă хăй, тухсанах çĕре тĕшĕрĕлсе аннă.

Зина та ку хушăра Петĕрĕ çинчен шухăшларĕ пулмалла.

— Хĕрĕх кунĕ ыран...— Зина куçĕсем шывланчĕç. Анчах та хĕрарăм, çийĕнчех хăйне алла илсе, хыпаланса ÿкрĕ.— Ачана та пĕчченех хăварнăччĕ, васкам-ха...

«...Акă, каллех тепĕр пурнăç... Самаровсен, Ивановсен пурнăçĕпе танлаштарма та май çук пурнăç! Куçа уçса пăх та, тĕлĕнсех каймалла — такам та пур санпа юнашар: паттăрĕ те, йĕксĕкĕ те. Иккĕленсе пурăнаканĕсем те шаршанĕ-шаршанĕпех. Ырри те çитсех пĕтмест вĕсенче, усалĕ те пĕтсех пĕтмест. Çыннине пĕлетĕп тесех пурăнатăн-ха, çук-мĕн — пĕлме те пуçламан... Акă, Петĕрех... Ачана çăласшăн пурнăçне пĕтерчĕ. Вилме пултарасса шуглана-ши вăл çавăн чухне? Калама хĕн. Паттăрлăх-и ку? Сăмах та çук, паттăрлăх!»

Мĕтри ăшне каллех вут тиврĕ, чунĕ вăркарĕ. Петĕрĕн тĕпчесе пăхакан куçĕсенчен пытанасшăн вăл — ниçта пытанма пĕлмест, хÿтлĕх çук. Петĕр вилĕмĕ çинчен нумай шухăшланă Мĕтри. Акă, Зинăна курчĕ те... Каллех унра канăçлăх çĕтрĕ. Пултарайĕ-ши вăл юлташĕ пек кирлĕ чухне вута кĕме? Пур-ши Мĕтрире Петĕр хăюлăхĕ?



## ÇУЛЛЕН ÇЕÇКЕ ÇУРАТЬ...

Çӳллӗ тусем çинче улма йывăç,
Авса татаймасăрах каç турăм.
*Г. Т. Тимофеев. «Тăхăрьял».*

— Пурнăç вăл, тăванăм, ача вăййи мар. Пӗрре такăнтăн-тăк — ватлăхчен. Пурнăçăн хӳри пăрнăç тесе ахальтен каламан ӗлӗкхи çынсем. Непуç, пӗрре тăрăслаттарсан — çӳре вара ун хыççăн пархатар кӗленсе... Ме-ха, тытса пар, ан турткалаш,— терӗ те Мирун çăварӗ патне ӗçмех илсе пынă иккӗмӗш стаканне ман умма шап! лартрӗ.— Ямпах урам талккишпе, тенӗ пек, çулӗ кӗскех мар, славнăй каймалăх пур. Юрӗ, юрӗ, сан сăйна та курасси пулӗ ӳлӗм, халӗ, ак, манне тутанса пăх. Питех мар та, пырӗ, терӗм. Рупь двелӗххи, «Портвейн». Қăлпассипе çырт, лаша кăлпассипе! Мӗн, анмасть-им, тем, тутуна пăркаласа ларан? Ме-ха, тыт-ха, хамăрла пулас пулать ăна кăштах, ăрçынла, атту, пăхап та.

Мирун хӗрлӗ эрех стаканне, чӗр ҫылам тенӗ пек, ман сӑмса кутнех тӗксе пычӗ.

— Тытса парасси, анасси-мӗнӗ, хӑнӑхаймарӑм-ха,— терӗм эп, Мирун аллине хирӗҫлесе.

— Э-э, апла ҫеҫ-и? Эп, тем, ҫероснӑйтараххи тесе. Хӑвӑра хӑвӑр шанмастӑр пулсан, ӑт, вара ун чухне урӑхла титти-митти. Ӗҫме пӗлмесен. Кун пекшӗнех сӑмах туса ҫӑвар тутине сая яни те харам. Хӑнӑхмалла ӳпӗнтер, эппин, пӗрне, э?

— Ҫук пуль, Мирон Петрович. Ку тарана ҫитсе те хӑнӑхайманскер, хӑнӑхманах юлам. Тавтапуҫ, хӑвӑра пултӑр.

— Хам алӑри япала хама юласси паллӑ-ха вӑл. Эппин, ӗҫместӗр пулать?

— Ҫук, ӗҫместӗпех...

— Ӑт, капла та мухтатӑп. Молодцом! Миҫере-ха эсӗ?

— Вӑтӑрпа пыратпӑр.

— О-ой, эп кӗҫӗнтерех тесе. Молодцом, молодцом. Халь ӗҫмен арҫын сайра тӗл пулкалать те... Молодцом! Хӑнӑхман-тӑк — ҫӑварна та ан ил, эппин, ия! Эп, ак, ҫав аҫа ҫапасшӗ шӗвекне пӗрре иленнӗ те... Пырӗ-ҫке, тепӗр тесен, эпир анчах мар ҫӗр ҫинче... Ҫӑна, кӗленче тӗпӗнчине, ырана хӑварас, мухмӑра. Турран килесшӗ, ирсерен пӗтерет пуҫ хӗссе, чӗр асап вара ҫак шӗвексӗр...

Мирун, пуҫланӑ кӗленчине хутпа пӑкӑласа, хӑй йышӑннӑ сентре кӗтессине майлаштарса лартрӗ, кӑлпассине ҫул сумккине чӗркесе чикрӗ. «Чӑрмантармӗ. Ирччен шӑршлансах каяс ҫук». Ҫул сумккине лартма кармашсан, вӑл лӗкӗрт какӑрчӗ, ырӑ мар шӑршӑ тухрӗ. Уншӑн каҫару ыйтрӗ. Вара, чӳрече кутне меллӗрех вырнаҫса ларса, шӑрпӑк пӗрчипе шӑл хушшисене чакалама пикенчӗ. Ку «ӗҫпе» арҫын чылайччен муталанса ларчӗ. Йӑлӑхсан — тӑчӗ. Купере каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрерӗ, кантӑкран карӑнса пӑхса пычӗ-пычӗ те, чугун ҫул хӗррипе ҫуртсем, хуралтӑсем курӑнса кайсан, аллине лаштах

сулса, хавассăн «Çĕрпÿ» тесе кăшкăрса ячĕ. Вара, вĕçнĕ пек, алăк патнелле танкăлтатрĕ.

— Ёлĕк чух вакун-ресторана шăп та лăп çак хула тĕлĕнче уçаканччĕ. Вырăн йышăнма ĕлкĕрес,— тенине çеç илтсе юлтăм эпĕ, çынни тухса та сирпĕнчĕ.

Пуйăс Çĕрпÿре пилĕк минутран ытла тăмарĕ. Унăн ураписем каллех пĕр тикĕссĕн эстрада кĕвви калама пуçларĕç: тÿкĕл-тÿкĕл-тÿк, тÿкĕл-тÿкĕл-тÿк, тÿкĕл-тÿкĕл-тÿк. Çурхи тĕнче хавасĕпе хĕрĕнкĕленнĕ, тейĕн, пуйăс та чалак тур лаша пек малтан мала каясшăн талпăнать. Куç анлăшĕпех ем-ешĕл тĕнче. Хĕл çивиттине сирсе ывăтнă, çутçанталăк екки янă. Йăмраллă-хурăнлă инçет кăваклăхĕнче çуллен этем чĕрине илем кÿрекен пурнăç çеçке çурать...

Ман чĕрене çеç эрлĕк пусса тăрать. Икĕ кун пурăнтăм эпĕ килте, Шупашкарта, çемьепе пĕрле. Халĕ ĕнтĕ Шупашкарне те килех темелле. Ултă çул патне черетре тăнă хыççăн Верăна тинех ĕçĕнчен пĕр пÿлĕмлĕ хваттер памалла турĕç. Çав сăлтавпа, çĕнĕ хваттере куçас сăлтавпа, килсе курма телей пÿрчĕ-ха Шупашкарне ку яхăнта. Хваттерĕ хулан кăнтăр-хĕвелтухăç енне пулчĕ, пĕр пÿлĕмлĕ пулсан та, хăтлăскер лекрĕ. Кутемĕн мĕнех кирлĕ пултăр пире урăх, виç çынна. Катя пĕчĕкрех-ха, пиллĕк тултармалла кăçал. Çÿрессе вăл ача садне çÿрет, пурпĕр Верăна пĕччен унпа кансĕртерех, ирлĕ-каçлă ăна пăхса тăмалла, садике леçсе ямалла, кайса илмелле, кĕпе-йĕм çумалла, тата ытти те. Çапла, ача тени нушасăр ÿсмест. Çитменнине Вера та кăçал аспирантурăна заочно кĕме хатĕрленет. Çăмăлах мар ĕнтĕ иккĕн тан вĕренесси, мĕн тăвас тетĕн. Чун туртать пулсан — вĕренмеллех, ĕмĕт патне çитмелле. Укçи-тенкине те вĕçе-вĕçпе анчах сыпăнтаратпăр-ха кухаллĕн. Тÿррипе, тин савăнмалла кăна, çын патĕнче мар, хваттерлĕ пултăмăр тенишĕн те.

Виççĕмĕш çул пурăнатăп ĕнтĕ Мускавра çемье ăшшисĕр. Чĕлхеçĕ пуласшăн хăшкăлатăп. Наукăсен ака-

демийёнче аспирантурăра вĕренетĕп. Тепĕр икĕ уйăхран диссертаци хӳтĕлемелле те — киле, чун тĕпренчĕкĕсем Катяпа Вера патне, тăван Чăваша, Шупашкара, тус-сем-пĕлĕшсем патне, яланлăхах! Тар тăкса, çанна тавăрса ĕçлемелле пулать, чĕлхене наука вĕрентнĕ пек системăламалла. Чĕлхе — халăх чунĕ, унăн пуласлăхĕ...

— Кама мĕ-ĕн? Апельсин кирлĕ-и, мандарин-и, лимон та пур, сĕт те, яшка та? Кам мĕне ухата-а-а?.. Кама шоколад, кама чăкăт кирлĕ? — янкăлтатса кайрĕ вакунра апатпа кучченеç сĕнсе çӳрекен хĕрарăм сасси. — Эсир мĕн илме кăмăл тăватăр? Яшка илместĕр-и, тен, хырăмăр выçнă? — купе алăкĕнчен пуçне чиксе кăн! пăхрĕ хĕрарăм ман çине.

— Тавтапуç, выçман-ха. Шупашкарта çини те шăранса ĕлкĕреймерĕ. Пылак шывсем мĕнлисем пур сирĕн? Лимонад çук-и?

— Минерал шывĕ кăна. Парас-и?

— Пит аван. Парăр, эппин, çавна.

— Сирĕнтен 22 пус.

— Тархасшăн.

— Кама мĕ-ĕн? Апельсин кирлĕ-и, мандарин-и, лимон та пур, сĕт те, яшка та? Кам мĕне ухата-а-а?.. Кама шоколад, кама чăкăт кирлĕ?.. — вакун тепĕр вĕçнелле кăлтăртатса кайса çухалчĕ апатпа кучченеç сĕнсе çӳрекен хĕрарăм сасси.

Пуйăс Кĕçĕн Çавал урлă хывнă тимĕр кĕпере тăкăлтаттарса хăварчĕ: тăкăл-тăкăл-тăкки-тăкăл-тăкăл-тăк, тăкăл-тăкăл-тăкки-тăкăл-тăкăл-тăк, тăкăл-тăкăл-тăкки-тăкăл-тăкăл-тăк... Ку сасă мана мĕльюн салтак таканлă аттисемпе хĕртнĕ тимĕр çинче çĕнтерӳ ташшине ташланă пек туйăнать. Çак ташăра ырă кăмăллă этемĕн шăнăрлă аллин никам парăнтарайми хăвачĕ пур. Çак кĕвве тăнлама тухаттăмăрччĕ эпир, аттесене кĕтсе илеймен, вăрçă хыççăнхи усĕмри ачасем. Çыран хĕрринче пуйăс иртсе каясса сехечĕ-сехечĕпе хуралласа лараттăмăр. Урапасем, шыв çинче çакăнса тăракан хурçа перĕнсе, пи-

рĕннисем харăслатса пулеметран пенĕ пек мăнаçлăн тăкăртатма пуçласанах эпир, çак шава саламласа, «ур-ра» кăшкăрса тăраттăмăр: «Фашист, çĕлен — чĕтре! Аттесем виличчен персе ĕлкĕреймен пульăсемпе хăвăра хăналатпăр, чыхăн, йытă пуçĕ!» — теттĕмĕр...

Тăван анат чăваш тăрăхĕ, çуралнă енĕм! Чĕре екки эсĕ манăн, чун савăнăçĕ! Кунти кашни сакăлтапа тĕмес-кенех, кашни варпа çырма-çатранах пĕлетĕп эпĕ. Аслă çерем, Кивтар, Кĕрекеç, Етенке, Паттал варĕ, Çиртлĕ, Кӳчĕм — мĕн тери чуна çывăх хĕпĕртӳпе те тунсăхпа чăмăртаннă кунти вырăн ячĕсем. Кивтар лаппинче пĕрре алла kастарнăччĕ, çурлапа, аннепе пĕрле жнейкăран юла-кан кĕтесе вырма кайсан. Алăкпа хӳрине хĕстернĕ кушак пекех хӳхленĕччĕ вара ун чухне, мăнтарăн. Аса илме те намăс... Анне, аманнă пӳрнене саппун аркине çурса çыхса ячĕ те, йăпатса: «Эсĕ те ĕç тĕлне пĕлекен пултăн иккен, ывăлăм, ан йĕр, авланиччен тӳрленет. Куршанак çыпăçнипе вăл»,— терĕ. Çавăн хыççăн эпĕ суранлă алă-па тăхăр кун ачасем хушшинче мăнкăмăлланса çӳрерĕм. «Куршанак çыпçăннă-çке-ха», ĕç тĕлне пĕлекен пулнă...

Ачалăх мыскарисем... Тен, çав ачалăх мыскарисенче-нех юратăвăм та çуралчĕ пулĕ. Çав çулсенче эпĕ Верука шуtсăр кăмăлласа пăрахрăм. Çавăн çинчен ăна, иксĕмĕр институтсене вĕренме кĕрсен, çыру ярса пĕлтертĕм. Юратăвăмăр чăн-чăнниех пулчĕ курăнать пирĕн: пĕрлеш-рĕмĕр, ачаллă пултăмăр. Çемьерен вăхăтлăха уйрăм пурăнма тивнĕрен чĕрене эрлĕк пусарать тепĕр чух...

Вера, Вера, Вера... Телейлĕ саманара пурăнатпăр эпир санпа, чипер, ырă-сывă, ĕмĕтпе. Ĕмĕт... Мĕн чухлĕ пулĕ çĕр çинче пурнăçланайман ĕмĕтсем, пурнăç лутăр-канă шăпасем...

Пуйăс Канаша çитсе чарăнчĕ. Купене тепĕр пасса-жир кĕчĕ. Эпĕ, пĕччен ларса йăлăхмаллипех йăлăхса çитнĕскер (Мирон Петрович вакун-ресторана тухрĕ те — çĕтрĕ. Çитменнине, хĕрĕнкĕччĕ ĕнтĕ вăл, хĕрĕнкĕ çынпа сăмах-юмах килĕшсе, чĕлхе-çăвар çыпăçса пымасть

ман), çын хутшăннăшăн хĕпĕртесех кайрăм. Çавăнпа çыннине те сăнасарах пăхрăм. Пĕр хĕрĕх-хĕрĕх пилĕк çулсенче пулĕ вăл, яп-яка хырăннă, пăхасса уçăмлă та таравáт пăхать, тӳррĕн, куçне тартмасăр. Çӳçĕ самаях кăвакарма ĕлкĕрнĕ, çамки лĕпкине çурри таран хыпашласа кĕнĕ. Хăй хура костюмпа, çӳхе плащпа. Аллинче — çул çинче çӳремелли çăмăл чăматан, ваза. Эпĕ çĕмĕрт çеçки ӳкерсе хунă ваза çине тĕлĕнерех пăхрăм, анчах та ыйтма хăяймарăм. Мĕн тума кирлĕ пулнă çула тухакан çынна ваза, час ванма пултаракан савăт?

— Кĕме юрать-и? — терĕ вăл малтанах.

— Мĕншĕн юрамасть пултăр, юрать, паллах, вырăнне тĕллесех кĕтĕр пулсан.

— Ана тĕллесех-ха. Чăваш пуль?

— Чăваш.

— Апла, юрăри пек, «çул çӳреме шанчăклă», татах та аван. Мускава çитиех каятпăр-и?

— Мускавах.

— Пĕрле, эппин... Вырăнĕ тахăшĕ пушăччĕ ĕнтĕ кунта?

— Пурте пушă. Хăвăр кăмăлăр. Çак ман тăрринчине кăна пĕр пассажир йышăнчĕ. Тухрĕ-ха вăл. Çук.

Çĕнĕ пассажир, чăматанĕнчен ик-виç хаçат кăларса, сĕтел çине хучĕ.

— Паянхисем. Вулама пултаратăр. Кĕнеке кăмăллатăр пулсан... Акă Кнут Гамсун çырнисем. Çул çинче уçкаласа хупма тесе Франсуа Вийона та чиксе тухрăм.

— Гамсун? Вийон? Эсир мана шалт тĕлĕнтерсех пăрахрăр. Эпĕ ку кĕнекесене куçпа курма мар, куçпа курасси çинчен те ĕмĕтленмен. Мускаврa питĕ тупса илме хĕн кунашкал кĕнекесене. Çăмăлах мар пуль тупма?

— Эп, мĕнле калас, хама пит кĕнеке ăшне путнă çынах теейместĕп. Ялти шкулта математика вĕрентсе пурăнатăп та. Кĕнекисене кусене Шупашкартан ярса парса тăраççĕ-ха. Вăрçăра пĕрле çапăçнă юлташ кĕнеке

магазинĕн директорĕнче ĕҫлет те, вăл маншăн тăрăшать. Савасса иксĕмĕр те литературăна саватпăр.

— А-а-а?..

Эпĕ Вийон сăввисене ыйтса илтĕм.

Паллашрăмăр. Ана Георгий Самуилович тесе чĕнеҫҫĕ иккен.

— Қаҫарăр та, сирĕн ăнсăртран йĕппе ҫип тупăнмĕши?— терĕ вăл тепĕртакран.— Костюмăн хăрах тӳмми лĕнчĕртетсе тăрать. Ялтан автобуспа ҫапса хĕснĕ пек килтĕмĕр те, ҫавăнпа пушанчĕ пуль шеремет тӳмми.

— Яланлăхах япала ҫук ĕнтĕ нимĕн те. Йĕппи те, ҫиппи те пурччĕ-ха. Вĕреннĕ те ҫарта чух чиксе ҫӳреме...

Пуйăс, «ларăр камăн лармалла, пирĕн инҫе каймалла», тенĕшкел, виҫĕ хутчен вăрăммăн кăшкăртрĕ те (чăпăрккине туртса ҫапрĕ!) урапisемпе шакăлтаттарма пуҫларĕ. Қанаш та хыҫа юлчĕ. Пирĕн купене урăх ларакан-тăвакан пулмарĕ.

Георгий Самуилович тӳммине хытарса лартрĕ. Эпир тĕнче хыпар-хăнарне шĕкĕлчерĕмĕр, иксĕмĕр те, пĕр шухăш йĕрĕ тупнăскерсем, литературăпа искусство ҫинчен касса-кайсах калаҫрăмăр. Мана ҫĕнĕ кӳршĕм ку чухнехи чăваш литератури ҫинчен мĕн шухăшлани кăсăклантарчĕ. Ҫавăнпа эпĕ унран:

— Георгий Самуилович, хальхи чăваш поэчĕсенчен эсир хăшне чи пысăк хисепе хуратăр?— тесе ыйтрăм.

— Ман шутпа,— терĕ вăл, чӳрече умĕпе вĕлтлетсе юлакан йывăҫ капламĕсем ҫине чылайччен шарламасăр тинкерсе пăхса пынă хыҫҫăн,— Хусанкай пулма тивĕҫлĕ... Йывăр тăпри ҫăмăл пултăрччĕ. Эпĕ унăн поэзине ачаранпах кăмăллатăп. Вăрҫă ҫулĕсенчех унăн «Таня» поэмине вуласа савăннăччĕ. Вăл ҫырнисенчен чуна чи ҫывăххи — «Тилли юррисем». Пирвайхи хут «Ялав библиотекинче» Илпек умсăмахĕпе ҫапăнса тухсанах мана ку япала шалтах тĕлĕнтерсе пăрахнăччĕ. «Мехел тени мĕскер тени пулать» текен пĕр сăввиех мĕне тăрать—хăй шедевр! Халăх кунҫулĕ, шухăшлавĕ, сăпайĕ-чиперĕ, ирĕк

кăмăлĕ поэзи хăвачĕпе илемленнĕ çав юрăсенче. Кашни сăввиех, чуна илемлĕх туйăмĕпе çупăрланисĕр пуçне, тарăн шухăша ярать. «Юман хăма çуртартăм, тупăк турăм, хамран юлакансем чăрманмасса...» Этем тивĕçне мала хуракан поэт анчах çапла калама пултарнă.

— Георгий Самуилович, Айхи поэзийĕ пирки эсир мĕн шутлатăр?

— Эпĕ унăн тухнă-пĕр кĕнекинех вуласа пынă. Аста тăлмачă та вăл. «Франци поэчĕсем» ятлă чăвашла антологишĕн те Франци наукисен академийĕ ăна хăйĕн премине те памалла тунăччĕ пулмалла-ха. Хаçатсенче çырчĕç.

— Çапла, пысăк ĕç турĕ вăл чăваш поэзийĕшĕн. Çак антологие куçарма вăл ятарласа французла вĕреннĕ...

— Кама мĕ-ĕн? Апельсин кирлĕ-и? Мандарин-и, лимон та пур, сĕт те, яшка та, ăшаланă пăру чĕлхи те. Кам мĕне ухата-а-а?.. Кама шоколад, кама чăкăт кирлĕ? — кăлтăртатса кайрĕ вакун пуçĕнче апатпа кучченеç сĕнсе çӳрекен хĕрарăмăн янкăс сасси.

Те çав сасса илтнипе çатăр выçса кайрĕ хырăм.

— Тем, каçхи апат туса пăрахар мар-и?.. У-у, саккăр çине кайнă та вара,— сĕнтĕм эп кӳршĕме.

— Хырăмĕсем ют çыннăн мар — хамăрăн. Ма кӳрентерес. Чĕре сури туса илер, эппин. Хула шăртанне те чиксе тухнăччĕ-ха эп,— пĕчĕк чăматанĕнчен хаçат сарнă сĕтел çине йĕкĕр ал чăмăркки пысăкăш шăрттан, пĕр кĕленче пылак шыв, виç çăмарта, çавра çур çăкăр кăларса хучĕ Георгий Самуилович.— Хăналанăр, ас тивсе пăхăр.

Çутă çутса ятăмăр.

Эпĕ те мĕн пуррине кăларса хутăм.

— Ресторана каяс темерĕмĕр ĕнтĕ эпир?

— Мĕн ресторанĕ, хамăр вăйпах улпутран кая мар апатланăпăр ак. Чимĕр-ха,— терĕ те çĕнĕ пĕлĕшĕм икĕ черккепе пĕр çур литр кĕленчи туртса кăларчĕ.— Коньяк! Эрменсен. Апата антараканни. Тиркеместĕр-и?

Эпĕ ĕçмерĕм. Георгий Самуилович умлăн-хыçлăн пÿрнеске пек черккипе виçĕ сыпкăм ĕçрĕ те кĕленчине каялла пуçтарса лартрĕ.

— Эп эрехпе-мĕнпе иртĕхсе курман. Апат анмалăх тенĕ пекле анчах. Тухтăрсем те ун пеккине хирĕçлесех каймаççĕ. Вар чирĕ ман...

Мана çĕмĕрт çеçки ÿкерсе хунă ваза канăç памарĕ. Мĕн сăлтавпа çула илсе тухнă-ши вăл ăна?

— Георгий Самуилович, каçарăр та, тем нушапа илсе тухнă ĕнтĕ эсир çак чечеклĕ вазăна, питĕ хитрескерне?— терĕм.

Çĕрлехи пуйăсра — килти пекех лăпкă, хăтлă. Урапасем, чуна канăçлăх кÿрсе, шакăлтатаççĕ, кĕр кăмăлĕпе çырлахнă хресчен тăпачи пек танлăн та хĕпĕртÿллĕн шăкăлтатаççĕ вĕсем.

— Ваза пирки ыйтрăр-ха, эппин,— кăштах шухăша кайнă пек пулса ларнă хыççăн çăвар уçрĕ кÿршĕм.— Ваза вăл хăй пĕр истори, калав, тĕрĕсрех — юрă, темелле. Чун юрри, кăмăл çуначĕ!

Эпĕ, ун пек-кун пеке итлеме хавасскер, хăлхана чанках тăратрăм, ваза историне каласа пама йăлăнтăм.

Георгий Самуилович турткалашса тăмарĕ.

— Пĕрре-пĕрре ма каласа парас мар. Çынран пытармалли, вăрттăнни нимĕн те çук унта. Йăлт ал тупанĕ çинчи пек. Çын курса çын пуç таймалли шăпа пушшех,— терĕ вăл, каçхи апат туса сĕтел çине пуçтарнă май.— Шмидт лейтенант юратăвĕ çинчен илтмесĕр тăман ĕнтĕ эсир?

— Вуланă та, çырăвĕсене. Ун çинчен кино та пурччĕ пулас. «Почтовый роман» ятлă пек астăватăп.

— Çавă. Шмидт лейтенант пуйăс çинче пĕр хĕрарăмпа паллашать те ăна мĕн юлашки сывлăшĕ тухиччене юратса пурăнать. Пĕрре курнипех. Эп каласа парас тенĕ çыннăн юратăвĕ те пĕрре курнипех хыпса илнĕ. Тĕл пуласса анчах вăл пÿрнĕ юратăвне, Шмидт лейтенант пек, пуйăс çинче мар, хирте, яла каякан çул çинче тĕл пулнă...

Георгий Самуилович, апат хыççăн чĕлĕм мăкăрлантарса янăскер (вăл «Золотое руно» табак туртать), кантăка уçса купене уçăлтарчĕ. Чĕлĕм мăкăрлантарнăшăн хăй ман умра аванмарланса та илчĕ:— Аптрашки ĕнтĕ çав япалапа. Туртмасан—туртман пек, тем çитмест пек. Пĕрре пикенсех пăрахмалла та-ха. Хал çитерейместĕп тулĕк... Вăл-ку юрĕ-ха, тарам, хам нуша... Каласа парам, эппин... Хĕрĕ — Уçтук ятлă, каччи — Володя...

...Июнь хĕвелĕ—çатма çинчи çу: тырă пуссисем çине ăрша тăкать. Утмаçулăн пĕр енĕ — тулă, тепĕр енĕ — вир. Утать Уçтук, çутçанталăкăн чуна ӳсĕртсе яракан хĕпĕртĕвĕпе киленсе утать. Ĕнер анчах вăл студенткăччĕ, паян — учительница. Канашри педучилищĕрен вĕренсе тухса каякан студентсем çĕркаç асăну каçĕ ирттерчĕç. Çĕрĕпех ташларĕ телей савăнăçĕпе минренĕ яшкĕрĕм. Кăвак çут килеспе вĕсем чăрăшлăхра, хула паркĕнче, уçăлса çӳрерĕç, баян кĕввипе çунатланса, тĕрлĕ юрă юрларĕç. Уçтук, тăван ялне каяссине ырана хăварса (вăл Йĕпреç районĕнчен, Кĕлĕмкассисем), хăй кĕркуннесем ĕçлеме пуçлас шкула паянах çитсе килме шут тытрĕ. Учительсемпе, вĕсем канма саланса пĕтмен пулсан, курнăçса калаçасси килчĕ унăн. Малтанах паллашса хуни чăрмантармĕ, терĕ. Мĕншĕн тесен Уçтукăн ӳлĕм Ухманра ĕçлемелле пулать. Çĕнĕ вырăн — урăх çынсем. Темле кĕтсе илĕç ĕнтĕ çамрăк учителе шкулта? Çак ыйтупа пĕрле тепĕр ыйту та шухăшлаттарать-ха ăна, пĕве çитнĕ хĕре. Пĕр-пĕр лăпкăрах, кансĕрлементерех çĕре хваттере вырнаçасшăн-ха вăл, каçсерен кĕнеке вулама, тетрадьсем тĕрĕслеме майĕ пултăр, тет. «Шанса панă ĕçе шăли-вали тăвас мар, ĕçлеме янă-тăк— ĕçлемеллех, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳрени те килпетлех пулас çук. Атя, курмалла, ялне паянах çитсе килем, пурпĕр пĕрре каймалла»,— терĕ те Уçтук, кăнтăрласем тĕлнелле вара, çĕркаçхи ăсану каçĕн сĕрĕмне кăтăш пулса сирсе янă хыççăн, Канашран ултă çухрăмра ларакан Ухман ялне тухса уттарчĕ.

Чуна çу кунĕн сипечĕпе антăхтарса, тăрисем тăрăлтатаççĕ. Çав сасса тăнласан, чăн тӳпене çăтмахăн пин кĕвĕрен пĕр кĕвĕ шăратакан селĕм шăнкăравне çакса хунă, тейĕн. Хĕр пуçĕ çине, кăкăрĕ, кĕлетки çине хĕвел тĕнчи ахах-мерчен тăкать. Янкăр! Утмаçул, тулăпа вир пуссипе ярăнса пыраканскер, чечеклĕ улăха чупса анса кайрĕ, тăпăлкка кăна юханшыв умне çитсе перĕнсе, чĕлпĕрне карт туртса карăнтарчĕ. Улăх ытамĕнче, ачан кăн-кăвак куçĕ пек, тăп-тăрă шыв шăнкăртатса выртать: шăнкăр-шăнкăр-шăнкăр, шăнкăр-шăнкăр-шăнкăр. Тăнлăсан шыв пуплевне — халь-халь сăвă каласа ярассăн туйăнать. Юханшыв урлă ансăр каçă. Уçтук пушмакĕсене хыврĕ те, каçă çинче ярăнса пăхрĕ. Сăпка пек лăнкăр-лăнкăр тăвать вăл.

Хĕр урисене шыва ярса ларчĕ. Шывĕ — лĕп. Шыв сулăмĕ, ура тупанĕсене перĕнсе, çурхахланать, çурхахланса, икĕ еннелле ярăмланса, чĕнкĕлти сас кăларать. Уçтук çав илемлĕ сасса пĕчĕк ачалла итлесе ларчĕ. Ури вĕçĕнчех, шывра,— пĕр пĕлĕт татăкĕ. Шыв çулĕ — хĕр çивĕчĕ. Шыв ăна явать те явать, пĕлĕт татăкне чуччу сиктерет.

— Çӳллĕ валак пуçĕнчен шăнкăртатса шыв юхать. Силпи чăваш ялĕнче Нарспи ятлă хĕр ӳсет. Қам пулать çав пирĕшти, э? — илтĕнсе кайрĕ сасартăк хăлха çывăхĕнчех пĕр тăн-тăн сасă. Уçтук, шарт сиксе, сасă илтĕннĕ енне вăрт çаврăнчĕ те хĕрелсе кайрĕ, ним калама аптрарĕ. Унтан, çухалса кайнине çĕнтерсе, ура çине сиксе тăчĕ, пушмакĕсене илме пĕшкĕнчĕ те, тытăнса тăраймасăр, шыва чăма пачĕ. Юрать, шывĕ пакăлчакран кăшт çӳлерех кăна. Çакна кура тăркач, килсе тухнă çын варне тытсах янраттарса кулса ячĕ. Сасă хуçи каччă пулчĕ, салтак тумĕпескер. Хĕр, шывпа исленме ĕлкĕрнĕскер, çыран хĕрне утса тухрĕ те каллех ним калама аптраса тăчĕ. Каччă юмаххине малалла çаптарчĕ:

— Пирĕн ялта ĕлĕк, эп çураличчен, чипер Крахъян пурччĕ. Çав мар-и эс, э? Вăл та Чичиварне, çак çырма-

на, хитре пулас тесе пит çума килсе çӳренĕ, тет. Хам илтмен те, кукка улпут каланине тăнланă... Эс, мĕн, çăварна канфет хыпнă пек тăратăн çак? Ха, пирĕн ял çырминче чăпăл пулчĕ те халь калаçасшăн та мар. Пăх-ха эс ăна, юнтарать тата! Атя, эппин, паллашар. Эп хăшпĕрисем пек мăн кăмăллă мар, простой этем. Мана анне Улатимĕр, тет, çарти юлташсем Володя, теççĕ. Эсĕ темле чĕнĕн ĕнтĕ, пĕлместĕп?

Хĕре те чун кĕчĕ.

— Ну, хыткукар та вара эс. Ура чиксе кăларнипех шывушăн вилсе кайнă, кĕсъене чиксе каятăп-им эп ăна? Чичивар терĕн-и-ха, асласун мар пуль ку çырма?— каччă хуравне хирĕç тинех лаплаттарса хучĕ Уçтук тепĕртакран, именни, хăрани пекки иртсе кайсан.— Ятăма пĕлессӳ килсен, ятăма та калама пултаратăп. Анне мана Уçтук, тет, пĕрле вĕреннĕ юлташсем Устя, теччĕç. Эсĕ темле чĕнĕн ĕнтĕ, пĕлместĕп?..

Каччă, шăл шуррине кăтартса, каллех ахăлтатрĕ. Тулли кăмăлпа, çамрăклăх савăнăçĕпе ахăлтатрĕ вăл, çырма лапамне чĕрĕлĕх кĕртсе.— Э-э-э, эпĕ сана, тем, сасартăках килĕштерсе пăрахрăм-ха. А, патька, кастаратăн та чĕлхӳне! Ху мăйăр хуппи пек анчах, чĕлхӳ вара— тиякăнни пек, курак та çур çухрăмран хăраса тарĕ... Эс ăçталла каян? Канашалла-и? Ухманалла-и?

— Таçталла каймалла ĕнтĕ? Те Ухман еннелле кайсан аван, те Канаш енне кайсан? Çавăн çинчен шухăшласа лараттăм-ха каçă çинче. Эс килсе чăрмантартăн, ав.

— Эппин, яра пар манпа пĕрле Ухманалла. Пирĕн хитре хĕрсем шутсăр нумай, эсĕ — тепри пулатăн. Каçсерен пĕрне ăсатса ярсан та чике тăршшĕ шур сухал пуличченех танккаса çӳремелле. Каччисем вара — шутра. Эс пурпĕр ан кулян. Эп сана тупса паратăп. Ман аннен пĕртен-пĕр ачи мĕне тăрать, çавăнпа çӳрĕн. Юрать-и?

— Ман валли çуралнă каччи валашкара шыва кĕрсе

ларать, тет-ха. Ман аннен те пěртен-пěр хěрě çав ÿсессе кěтет. Унччен вăл ачасене вěрентсех шкулта ватăласшăн-ха.

— Ăт. пěлтěмěр те! Эсě пирěн яла килетěн, шкула вěрентме. Учительница, эппин. Тěрěс-и?

— Илле пророк пекех тăнлă-çке эс, витěр курса тăратăн. Çипуçран пăхсан, пророк пулас çук-ха эс, салтак тумěпе, курма таврăнатăн-и?

— Ай, патька! Тěлěнтерсех пăрахрăн-ха эс мана. Пурне те пěлет. Ман аннен хěреснамăшě кам, кала-ха, ăна та пěлетěн пуль эс, турран килесшě, ăслă çамка, э?

— Кăна вара аннÿнтен кайса ыйт.

— Атя, эппин, кайса ыйтар. Хěвелěн те хырăмě выçнă пулмалла, килнелле сиккипе вěçтерет. Ав, куратăн-и, хыçěнчен тусан çеç мăкăрланса пырать.

Ухманалла утрěç. Володя çăмăлçахланса, сăмаха вěçтеререх калаçса пычě. Ăна кура Уçтук та парăнас темерě, йěплě сăмаха йěплě сăмахпах витсе-çатлаттарса пычě. Володя аллинче — кутамкка, Уçтук аллинче — пушмаксем. Аякран пăхсан, вěсене лармаран таврăнакан çамрăк мăшăр темелле: иккěшě те стайлă, именчěк, тарават.

Яла çитрěç. Пуяккассинелле (урамě çав ятлă) пăрăнса юлас умěн каччă хěрпе каллех çуллăн калаçма муталанса пăхрě.

— Итле-ха, тăхлачă,— шăл йěрчě вăл, паçăрхи пекех паттăрланса,— эсě мана хăвна кěçěр кам хапхи умне кěтме тухмаллине каламарăн-ха, э? Улюна кинемей хапхи умне-и? Юрě-çке, тепěр тесен, эс ăна ху та пěлейместěн-ха халлěхе. Хваттерне тупса парěç-ха унта шкултисем. Ниçтах та тупаймасан, Варук аппуна ыйт. Ман анне вăл. Эп тепěр вунă кун анчах пурăнатăп, отпуск вăхăтне. Кайран — хăвăра ирěк. Ну, юрě, сÿпěлтетсе тăрам мар. Каçчен, эппин, Нарспийěм,— терě те Володя, те астăваймасăр, хěре аллине тăсса пачě. Хěр те, турткалашса тăмасăрах, капăртма пек кăпăшка аллине хирěç тăсрě.

Аллисем пĕрлешсен, иккĕшĕ те çӳçенсе илчĕç, кăкăрĕсене кăвар тумларĕ. Володьăн сасси темĕнле чĕтренсе тухрĕ:

— Шкулĕ вăл ав çав, чиркӳ çуртĕнчен пăсса тунăскер. Эп уттарам-ха, эппин,— текелесе, часрах хĕреслĕ урама пăрăнма васкарĕ.

Виçĕ çул пулман тăван ялĕнче Володя. Служба çулĕсем унăн лайăх иртсе пычĕç. Командовани ăна ырă тĕслĕхшĕн пĕрре кăна мар мухтанă, хальхинче, акă, килне килсе кайма та ирĕк пачĕç. Çитменнине, ун патне амăшĕн сывлăхĕ хавшакланни çинчен те çырса пĕлтерчĕç кӳршĕсем.

Колхозăнне тăтăш вăрман касма çӳресех шăнса пăсăлчĕ пулмалла Варук аппа, хĕлĕн-çăвĕн пĕр ĕçрен те юлмарĕ, каласан—кайрĕ. Сивви те çунтарнă, йĕпи-сапи те ислентернĕ, пурпĕр арçынпа тан ĕçлерĕ вăл. Теприсем пур — арçын хӳттинче пурăнаççĕ. Варук аппана ун пек телей пӳрмерĕ, ав. Упăшки граждан вăрçинчен аманса таврăнчĕ те, ури çĕрнипе, нумаях пурăнаймарĕ, пăртакранах çĕре кĕчĕ. Çулталăкра юлнă ачине пĕчченех пăхса ӳстермелле пулчĕ Варук аппан. Ывăлĕ, унăн чун тĕпренчĕкĕ, Улатимĕрĕ, такам курса такам кăмăлласа пăрахмалла тăн-тăн та яшăм, сăпай çитĕнчĕ. Кас хĕрĕсем кам-кам кăна уншăн чĕрисене çунтарман пулĕ, ыйхăсăр каçсем ирттермен. Çук, каччă пулса ӳсрĕ — хĕр калинкки енне сукмак такăрлаймарĕ Володя, хăйĕн чунне çывăх çынна тĕл пулма ĕмĕтленчĕ. «Пӳрни — шăл çĕмĕрсе кĕрет, пӳрменнине — шăналăк карса та тытаймăн», текен шухăшпа пурăнчĕ.

Тавралăха кас сăнĕ çапрĕ. Телее, Уçтук пырса кĕнĕ çĕре шкул директорĕ унтах пулчĕ. Вăл ăна кăçал пуçласа шкула каякан ачасен хушамачĕсене çырнă хута пачĕ, хăйсемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе ыран-тепĕр кун (вăхăтăр пулсан!) килрен киле çӳресе паллашма сĕнчĕ. Пăртак калаçкаласа ларнă хыççăн Улюна кинемей патне хваттере ертсе кайрĕ. Шкул ун патĕнче хваттер тытать-мĕн.

Уçтук, паянах Канаша каялла кайма тĕв тунăскер, директор сĕнĕвĕпе килĕшсе, ыран-тепĕр кун килсем тăрăх çӳреме шутласа хучĕ. Туххăмах килĕшнин тепĕр шутсăрах пысăк сăлтавĕ те пулчĕ, унсăрăн мар. Володьăна курнипех хĕр чĕринче темĕнле ăша вăркаттаракан туйăм капланса хăпарчĕ. Çав темĕнле туйăм Уçтука самантсерен хăйĕн шалти вĕрилĕхĕпе çупăрласа, канăççăрлантарса тăчĕ. Улюна кинемей патне çитсе вырнаçтарса хăварсанах, директор тухса кайрĕ. Директор тухса кайсан, Уçтук ним тума пĕлмесĕр аптăраса ларчĕ, унăн халех, çак самантрах Володьăна курасси килсе кайрĕ. Ăна курасшăн урама тухса чупма та хатĕрччĕ вăл, анчах та, капла туни хĕре тивĕçлĕ маррине ăнланса илсен, лăпланчĕ. Володьăна курни ăна тĕлĕк пек, çывăрмасăр курнă тĕлĕк пек, туйăна пуçларĕ. Хĕр чĕри вĕчĕрхенчĕ. «Ухмах, тăнсăр хĕрача»,— лăплантармалла хăйне ятласа илчĕ Уçтук. «Эпĕ уншăн анраса ларатăп. Тен, вăл паçăрах савнийĕ арки çинче ларать пуль. Çавăн чухлĕ ял каччи савнисĕр мар ĕнтĕ...»

Çиччĕллĕ краççын лампине çутса касхи апат тунă хыççăн тулта кĕçĕн алăк сасси илтĕнчĕ. Пӳрте Володя кĕрсе тăчĕ.

— Ман килес. Çӳреççĕ-и?— терĕ вăл, кăмака кукринчен кăштăртатса тухакан Улюна кинемее ал парса.

— И-и, Улатимĕр таврăннă-çке. Анн̆ӳ те, Варук йăмăкăм, килесле калаçатчĕ çав. Çитрĕн пулать апла. Нумайлăха-и? — хыпкаланса ӳкрĕ çитмĕл урлă каçнă карчăк.

— Тепрер çултан пуçĕпех яраççĕ, ак, Улюна аппа. Эп, мĕн-ха, сирĕн пата хăна хĕрĕ килнĕ, терĕç те...

— Э-э-э, учитлĕ пирки калатăн пулĕ-ха эс. Паян килсе çитрĕ, тирехтор вырнаçтарса хăварчĕ. Савăт-сапа çăвать-ха вăл, апат çирĕмĕр те. Маттурскер пулмалла, тӳрех ĕçе кӳлĕнчĕ. Эс лар-ха, лар, тĕпелелле ирт, мĕн алăк патĕнче тăратăн. Канашран çуранах килтĕн пуль, лав-мĕн тавраш тĕл пулаймарăн пуль çав?

— Мĕн вăл, улт çухрăм, пирĕн вăхăтри çынла, Улюна аппа, пĕрре пикенсе утмалăх çеç. Çуранах утрăм.

— И-и, çапла пуль ĕнтĕ, çапла пуль. Пăх-ха эсĕ ăна, мĕнле ўссе кайнă. Мачча каштине перĕнетĕн... Килессисем тепрер çул юлнă терĕн-и-ха? Çапла ĕнтĕ, çапла пулмасăр, мĕн каласси. Самани хуть ку яхăнта лăпкă тăрать те-ха, эп хаçат-мĕн таврашне тавçăраймастăп та, тем тесен тĕрĕс. Чикĕ леш енче çапăçаççĕ, тет-и? Çав усал япаларан турă сиртĕрех... Чим-ха,— Улюна кинемей, Володьăна вăйпа тенĕ пек тĕпелелле иртерсе, çенĕке тухрĕ.— Эп наччас...

Улюна кинемей, çитмĕлтен иртнĕ пулин те, вăр-вар карчăк. Вăл чăлана тухнă-тухманах, Уçтук чаршав хыçĕнчен курăнчĕ.

— Хăна пур-çке, эп савăт-сапапа аппаланса, çын килнине те сисмен,— Улюна кинемейпе Володя калаçнине илтмен пек пулчĕ хĕр.

— Кĕçĕр çăлтăр суйламалли каç. Ахтуруй пумай тухса тулнă, тулă пĕрчи пек — чăх сăхса пĕтерейми. Хирĕçлеместĕр пулсан, атьăр, тухса шутлар. Эп, мĕн-ха...— хĕр çине йăпăрт пăхса илчĕ те каччă, чĕлхи такăнчĕ. Унăн калас тенĕ сăмахĕ таçта, пыр шăтăкне чăлханса ларчĕ.

Хĕр каччă пăлханнине сисрĕ. Уçтук ячĕшĕн «Çĕр хута ыйхă татса çўремесен те пырĕ», текелесе, хирĕнкелесе тăркаларĕ те — урама тухма килĕшрĕ.

Алăк урати урлă каçнă чух çамрăксене тăвараллă çу йăтнă Улюна кинемей хирĕç пулчĕ:

— Каятăр та-и? Лармаллаччĕ-ха пăртак. Килнĕ хăнана апат та лартаймарăм. Эй, капла аванах та пулмарĕ-ха. Çапла ĕнтĕ пирĕн, карчăксен, ĕç тума пикенсен, тўрех çаврăнкалаймастпăр. Ыран килме ан ман, эппин, Улатимĕр, килмесен çилленмеллипех çилленетĕп, асту,— пăшăрханса илчĕ кинемей.

Урама тухсан, Володя Уçтука хулĕнчен тытрĕ. Уçтук хирĕçлемерĕ. Çак каччăпа унăн темле çывăх-çывăх пу-

лас килет. Мĕншĕн апла-ши ку? Хăйĕнчен хăй тĕлĕнет хĕр. Çур кун каярах кăна Уçтук Володя çинчен чĕрне хури чухлĕ те пĕлместчĕ, пĕлме мар — вăл çĕр çинче пуррине-çуккине те тĕшмĕртместчĕ. Ак халь, хĕр чĕри чуччу ярăннă пек. Савăнăç!

— Тем тесе чĕнмелле ĕнтĕ сана, чăннипе? Устя тесе-и, Уçтук тесе-и? — шăппăн сăмах хушрĕ Володя, ял урамĕпе чылайччен шарламасăр пынă хыççăн.

— Ăçталла утатпăр çак эпир, эс мана, тем, Канаша каялла танкăлтаттармастăн-и? — çăвар уçрĕ хĕр те, сăмаха аякалла пăрас шутпа.

— Çук-çке. Вăтакасра йăмрасем нумай, çавăнталла утмалла пуль, терĕм те. Çăлтăрсем йăмра çулçи витĕр лайăх курăнакан. Сакĕ те пур унта.

— Э-э-э... Устя тесе чĕнен пуль, эппин. Уçтук тесе аннех чĕнтĕр... Тем, хĕстерсех лартнă-ха эсĕ хула, пăчă, яр-ха, — сулахай аллине каччă хулĕнчен вĕçертесшĕн туртkалашрĕ хĕр.

Çĕрлехи тӳпе — ала. Ала шăтăкĕсенчен, çăлтăрсенчен, куç çути пек пиншер-мĕльюншар çутă çĕр çине тумлать, чуна, кăмăла хăй асамĕпе çӳçентерет. Хĕрпе каччă сак çине пырса ларчĕç. Чĕнмеççĕ. Володя, пуçне каçăртнă та, çăлтăр сăвать.

— Каçĕ епле лăпкă кĕçĕр. Ку лăпкăлăха сывласа хуйхатма та хăрамалла, — хăй тĕллĕн калаçать Уçтук. — Темшĕн мана çакнашкал каçсем анне утьăкка сиктернине асилтереççĕ. Эпĕ таçта, темĕнле вĕçĕмсĕр пушлăха чăматăп, чăматăп пек...

— Анне калать: амăшĕ чĕрçи çинче утьăкка сикнине астăвакан телейлĕ пулать, тет.

— Кур-ха, кур, çăлтăр ӳкрĕ!

— Эппин, каллех тепĕр çын пурнăçĕ татăлчĕ.

— Тĕрĕс мар пуль вăл, çăлтăр ӳксен, çын чунĕ тӳпене вĕçсе каять, тени?

— Ĕлĕкхи тĕне кĕмен чăвашсем шутласа кăларнă ăна. Этем пурнăçĕ — çăлтăр пек, çуралать те сӳнет, çути

куçа шартса хăварать. Çын тивĕçне сума сăвакан халăх анчах çапла ăслама пултарнă пулĕ, тетĕп эп.

— Лайăх каларăн: этем пурнăçĕ — çăлтăр пек, çуралать те сӳнет, çути куçа шартса хăварать.

— Ав, çав Алтăр çăлтăр аврипе тĕлме-тĕл тăлăх çăлтăра куратăн-и, кăвайт пек кăвак çутăпа çунакансkepe?— кĕлеткипе хĕр енне сулăнса, шĕвĕр пӳрнипе мерчен çутипе куçăхтаракан масмак-тӳпене тĕллерĕ Володя.— Ăт, пирĕн енче халап çӳрет. Çав çăлтăр тахçан авал хĕр пулнă пулать имĕш. Каççерен, хĕвел анса уйăх хăпарсан, укăлча хапхине савнă каччине кĕтме çӳренĕ, тет, вăл. Пĕррехинче çапла, хăйне хур тăвассинчен тарса, çав хĕр пĕлĕт çине хăпарса кайнă.

— Мĕнле-ха апла, эпĕ кунашкал халапа пуçласа илтетĕп. Анне уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕр çинчен каласа паратчĕ, кунашкаллине вара — илтмен.

— Хĕрĕ вара ирхи сывлăм куçĕ пек таса та çемĕрт çеçки пек хитре пулнă, тет. Такам курса, такам ытармалалла марскер-мĕн. Ун пеккине пирĕн «пĕр кашăк шывпах çăтса ямалла», теççĕ. Каччи пулнă унăн—хыр вулли пек яштака та ыраш кĕлти пек хӳхĕм йĕкĕт. Каччи Атăл тăрăхĕнчи пĕр пысăк пăлхав вăхăтĕнче ялтан тухса тарнă та — урăх унран нимĕнле сас-хура та пулман. «Савниçĕм, мăшăр çунатăм, кĕт, Пикмăрса пуянăн пуçне татма килетпĕрех»,— тесе хăварнă вăл. Хăйсен пĕртен-пĕр хĕрне ашшĕпе амăшĕ, ĕмĕр нушара асапланса, çын картне лартма ĕмĕтленнĕскерсем, таврари çĕрме пуяна, Пикмăрсана, парса яма тĕв тунă пулнă. Хĕрĕ — килĕшмен. Çур çул та пулин тăхтама ыйтнă. Ашшĕ-амăшĕ яхăнне те яман, итлесшĕн те пулман. Хĕрĕ йăлăннă, тархасланă, макăрнă, çĕре ӳксе пуççапнă — пурпĕр ашшĕ-амăшĕн хытă чĕри çемçелмен. Хĕр асапланнине кура вара ялти пĕр шурсухал ăслă канаш парать: уйăх тулса çитсен, виçĕ каç та виçĕ ир тулли алтăрпа укăлча хапхине тухса, каччине каялла тавăрма йăлăнса, вĕри сăмах калама сĕнет. Икĕ каç та икĕ ир çӳрет хĕр укăл-

ча хапхине, инкек ҫитнине пӗлтерсе, савнӑ каччине хӑй патне вӗҫсе килме йыхӑрать. Виҫҫӗмӗш каҫхине, тулли алтӑрпа хӗвелтухӑҫнелле тинкерсе юрату сӑмахӗ каласа тӑнӑ чухне, ӑна ашшӗпе амӑшӗ пырса тытаҫҫӗ. Хӗрне вӗсем тапа-тапа хӗнеме, ҫӳҫӗнчен туртма-сӗтӗрме пуҫлаҫҫӗ, алтӑра ҫӗре ҫавӑрса ҫапаҫҫӗ. Ҫак мӑшкӑла тӳсеймесӗр, хӗр эрленсе йӗрсе ярать. Хӗрӗ куҫҫульне курса анраса кайнӑ ашшӗпе амӑшӗ пӗр самант шак хытса тӑраҫҫӗ. Мӗншӗн тесен ҫав куҫҫуль пӗрчисенчен ҫӗр ҫинче хӗр пӗвӗ пек чечен чечек шӑта-шӑта тухнӑ, тет. Чечекӗсем вара, чӗнкӗлти сасӑ кӑларса, темӗнле асамлӑ кӗвӗ ӗнерме пикеннӗ, тет. Ҫак самантпа усӑ курса, хӗр, ҫӗрте йӑваланса выртакан алтӑрне ҫавӑрса тытать те, мӗнпур вӑйран хирелле тарать. Лешсем, ҫӗрти-ҫӳлтине хӑвармасӑр ятлаҫса, ун хыҫҫӑн. Пӑхать хӗр: умра — тарӑн ҫырма... Ҫак тӗлте ӑна тулли уйӑхлӑ тӳпе хӑй ытамне илет. Телейлӗ вӗҫленеймест ҫав ку халап: темле майпа алтӑр хӗр аллинчен тухса ӳксе юлать, хӑй, хытӑ чупса сасартӑках чарӑнайманскер, тӳпе тӑрнех хӑпарса каять. Ав, пӑх-ха, Алтӑр-ҫӑлтӑрӗ аялarах, ӑна тӳртӗн пӑхса лараканни, пӗчченни,— ҫӳлерех. Темӗнле тӑрӑшсан та вӑл алтӑрӗ патне таврӑнайман, ӑҫта чупса ҫитнӗ, ҫавӑнтах хытса ларнӑ. Каччипе тӗл пулайманшӑн халӗ те эрленсе куҫҫуль тӑкать, тет, вӑл, кӑн-кӑвак куҫӗнчен ҫӗр ҫине кӑн-кӑвак мерчен тумлатать, тет...

Майра ухатникӗ пек ҫил ҫулҫӑсене лӑп-лӑп-лӑп тутарса хӑварчӗ. Шӑп. Тавралӑх пӗтӗмпех ҫӑлтӑр тӳпине ӳпӗннӗ.

— Анне калать, ача чухне эпӗ ҫав алтӑрпа ҫӑлран шыв ӑсасшӑн пулнӑ, тет. Ача темерӗн... Пурте вӗсем, юмахсем, хурлӑ шӑпаллӑ пурнӑҫ ҫинчен. Мӗншӗн аплашӗ вӑл? — лӗп ҫил сулӑмӗпе ҫӳҫенкелесе илчӗ Уҫтук.

— Сулхӑн ҫапмарӗ пуль те? — хӗр хулпуҫҫийӗсене сиктеркеленине курса, хыпӑнса ӳкрӗ Володя.— Пиншак уртса тухӑпин, капла манран каччӑ ятне ҫӗртсе ҫӳрени ҫеҫ. Тен, уткаласа ҫӳрер пӑртак?

Вĕсем, лаштра йăмрасем айне пытанса ларнă сак çинчен тăрса, ыйхăллă урампа çĕр çине пуси-пусми утса кайрĕç. Володя Уçтук аллине хыпашласа тупрĕ. Уçтук алли çурхи салам пек ăшă-ăшă. Ăна тин анчах йӳçме янă кулавккапа танлаштарма та пулать — хăмлаллă, ӳсĕртет.

— Йĕрки-арки çапла пулнă ĕнтĕ ĕлĕк: ĕмĕр нушапа хуйхă хушшинче тертленнĕ чăваш çынни, савăк пурнăç мĕнне чухлайман. Çавăнпа тĕшше ларайман ĕмĕтне юмах-халапра курнă, тăварлă куççулĕпе шăварнă,— хĕр аллинчен ӳтне вĕри çапнипе пăлханса сăмахларĕ Володя. Пырне тата, халь-халь ӳсĕрттересле, тем пӳлĕнтерсе, кĕçĕттерсе тăчĕ унăнне. Ӳсĕрес тесе те пăхрĕ — ӳслĕкĕ тухмарĕ.

Çĕрлехи урам — янк. Шăрчĕсене пусарнă улăм тăрăллă пӳртсем, çăлтăрсене чуччу сиктерме, кантăкĕсене йӳле янă. Çăлтăрсем сывлăм куçĕсене чăмнă: чăпăл-чăпăл. Сывлăм сапнă çăра çерем çинче икĕ çын ури йĕрри пичетленсе юлать.

Мал енче — çĕнĕ кун тăрăлать. Пĕлĕт хĕрри çĕрçĕн тутăр пек — çӳçеллĕ, кăн-кăвак. Хĕрпе каччă асăрхамасăрах уя тухрĕç.

— Çут тĕнче япали кирек ăçта та пĕрешкелех-мĕн. Лере, чикĕ хĕрринче, тӳпи те, çăлтăрĕсем те пирĕннишкелехчĕ,— терĕ Володя, ирхи импе анаслакан тавралăха тинкерсе утнă май.— Сывлăшĕ анчах урăх, нӳрĕ.

— Таçтарах ĕнтĕ вăл — унашкал çанталăк.

— Утатăн вара хăйăрлă çыранпа, Балти тинĕс хĕррипе, Эстони чиккипе. Эстонецсем пĕлтĕр анчах хăйсен çĕршывĕнчен мул хуçисене хăваласа ячĕç, халĕ унта рабочисемпе хресченсем хăйсем хуçа, пирĕн патăмăрти пекех. Çĕнĕ пурнăç тăваççĕ. Тĕрлĕрен лазутчиксем çавçавах чикке пăсма хăтланаççĕ-ха. Вĕсем çĕн влаçа хăйсене шар кăтартнăшăн тавăрасшăн.

Пăрчăкан пек утма çул хĕрпе качча Илтерек шывĕ хĕррине çавăтса тухрĕ. Илтерек — сывлăм пек тăрă та

хĕр пек йăваш юханшыв. Тухăç çулăм капламĕ хăпартать.

— Тăхта-ха,— терĕ те Володя, ярăнса утакан хĕре хулĕнчен тытса чарса, хăй тăварах чупса хăпарса гимнастеркипе шăлаварне çерем çине хывса хучĕ, унтан, хĕвелпе пиçнĕ çанçурăмне ялкăштарса, пĕррех пуçхĕрлĕ шыва сикрĕ. Тепĕр темиçе самантран каччӑн хаваслӑ сасси леш çырантан янăраса кайрĕ:

— Уçтук-у-ук... Шывĕ ăсла пек ăшă, кил, ишсе ка-аç!— кăшкăрчĕ вăл.

— Ой, хăратăп çав эп, ишме пĕлместĕп,— хирĕç кăшкăрчĕ Уçтук. Володя ку енне, хĕр патне, ишсе каçрĕ.

— А эсĕ ан хăра. Ишме вĕренесси вăл утма вĕренесси мар, атя, кил, сик. Туххăмрах вĕренĕн,— хĕре шыва кĕме тилмĕрчĕ вăл.

— Путсан?..

— Путсан валли туртса кăларакан пур.

— Ху та путсан?..

— Сан çинче шанчăк — эс туртса кăларăн.

— Лерелле пăрăн-ха, эппин, эс...

Уçтук та шыва сикрĕ. Вăл кăларса хăварнă хум, лĕп-лĕпĕç-лĕп-лĕп тутарса, ункӑлана-ункӑлана ешĕл çырана лӑпкарĕ. Хĕр шурӑ пулӑ пек шуралса ишрĕ.

— Пăх-ха, пыр та калаç санпа. Ăт, суеçĕ... Эпĕ пур, шыва чăмсан, мĕнле туртса кăларас кăна, тесе тăраттăм. Маттур!

— Çит, хăвала!..

Пуçланчĕ вара тĕркешӳ-çуйхашу. Пĕтĕм çырма тăршшипе çуй тăрать. Володя хĕре ярса тытма патнех çитет. Уçтук урипе пĕр иккĕ-виççĕ каччӑ пуçĕ умĕнчех палтăрраттарса илет те, лешĕ, шыв шампăр-шампăрĕпе чыхăна-чыхăна кайса, ахăлтата-ахăлтата, каялла тапса сикет. Çур сехет пек çуйхашсан-çуйхашсан, иккĕшĕ те, çырлахнă кăмăлласкерсем, çырана йăшăлтатса тухрĕç. Пĕлĕт хĕрри вĕр-çĕнĕ хĕвел пĕçерсе кăларать.

Алла-аллăн тытăнса, укăлчана çитиччененех чупрĕç

вӗсем. Улюна кинемей хапхи умне ҫитсен те вӗсен пӗр-пӗринчен уйӑрласси килмерӗ.

— Уҫтук, манӑн ыран Канаша каймалла, военкомата, пымӑн-и? — юратса пӑхрӗ Володя хӗр куҫӗсенчен.

— Ыран эпӗ килсерен ҫӳресшӗнччӗ. Кӑҫал пуҫласа шкула каякансен ашшӗ-амӑшӗсемпе паллашасшӑнччӗ, курса калаҫасшӑнччӗ. Темле ӗнтӗ...

— Апла, пыратӑн. Ҫаккӳлӗм кайса килӗпӗр, хула курмалла. Унччен эсӗ те ху ӗҫне пӗтерӗн, юрӗ-и?..

Хӗр ҫӑвар уҫса ним калама та пӗлмерӗ. Ашӗнче вӑл каччӑ сӗнӗвӗпе паҫӑрах килӗшрӗ-ха. Ҫӑвар уҫса тӑрук килӗшме анчах хӑраса тӑчӗ. «Пӗлсе пӗтер-ха каччӑсене, кулма пуҫласан, ӑҫта кайса кӗрес. Луччӗ чӗнем мар. Илсе каясси килсен, ӳкӗтлесе пӑхтӑр пӑртак. Йӗкӗте ӳкӗтлени килӗшет», — хӑй ӑссӗн шухӑшларӗ Уҫтук, савӑнӑҫ имӗпе тапакан чӗрине тӑнласа.

Ял урамӗ чӗрӗле пуҫларӗ.

Улюна кинемейрен ик кил урлӑ пурӑнакан Микихвер матки Матӗрне икӗ сурӑхӗпе пӗр шӗвӗр сухаллӑ качакине кас кӗтӗвне яма урама хӑваласа кӑларчӗ. Хирӗҫри Туння, колхоз бригадирӗ, чӗлӗмне паклатара-паклаттара, правлени енне васкаса уттарчӗ. Такамӑн ӗни, апатсӑр тӑрса, ир ҫитессе кӗтсе ӗшеннӗскер, ҫӗн куна саламласа, вӑрӑммӑн мӗкӗре-мӗкӗре илчӗ. Юнашар касра кӗтӳҫ пушши шартлатрӗ. Инҫех те мар тус-тантӑшӗсенчен сӗнксе юлнӑ ҫурӑк саслӑ автан, Турикасри Хӗветутӑн ватта кайнӑ хӑрах куҫлӑ автанӗ пулмалла, хӗвел тухмасран шиклeнсе ӑсран кайнӑ пек, пырне хайӑрттарса авӑтса ячӗ. Пӗр юланутҫӑ уялла сиккипе вӗҫтерчӗ. Улюна кинемейӗн тӑр-пӗччен хурӗ, картиш сасси (юрварне карчӑк кӳршӗрен илет), ҫул ҫинче ӳккелесе юлнӑ мӗн-килчӗве пуҫтарма ратланса, вӗрлӗк хапха айӗнчен тухмашкӑн мӑйне тӑсса какӑлтатать.

Володя, Уҫтука хӑй ҫумне туртса илсе, хыгӑ-хытӑ чӑмӑртарӗ, унӑн шанчӑкпа ҫиҫекен тарӑн-тарӑн куҫӗсенчен тинкерчӗ, темле айӑплӑ ӗҫ тунӑ чухнехилле, хӗр

тутинчен хăюсăр чуптурĕ. Хĕр тути нӳрĕ, уçă. Курăк çине ӳкнĕ сывлăм пек тута качча ӳсĕртсех ячĕ.

Уçтук, капла пулса тухнинчен именсе, пуçне каччă кăкăрĕ çине пĕкрĕ. Икĕ чĕре, пирвайхи хут юратун пылак çимĕçне астивсе, танлăн та васкаварлăн, хытăн тапрĕ.

Шалта алкум алăк сасси пулчĕ. Уçтук хыпаланса ӳкрĕ, унăн питне тепĕр хут пĕрлĕхен пек хĕм тапса тухрĕ; вăл, каччă ытамĕнчен вĕçерĕнсе, пӳрте кĕрсе тарчĕ. Володя та, чĕрине капланнă çĕкленӳллĕ кăмăлпа, килне ярăнса утрĕ.

Пĕтĕм çĕр чăмăрне ялкăштарса, хĕвел хăпарчĕ.

Володя алăк урати урлă каçса пӳрте кĕнĕ çĕре амăшĕ те вăраннă иккен, вăл тĕпел кукринче тем кăштăртатать. Ывăлĕ çине амăшĕ ытарлăн пăхса илчĕ те апла та-капла та чĕнмерĕ.

— Анне, салат хыв, авланатăп! — лаплаттарса хучĕ Володя, çывăрма хатĕрленсе гимнастеркине пăтаран çакса янă май.

Варук аппа, çӳхӳ пĕçерме хатĕрленсе кăмака умĕнче аппаланнăскер, аллинчи çатмине кăпăлтах урайне кăларса ӳкерчĕ.

— Чăнах, чăнах, анне, пĕр суймасăр калатăп. Сăрине çур пăт салатран ту та — çитĕ. Хам кайиччен тăвансене пуçтарăпăр. Колхоз та пулăшĕ-и-ха пăртак. Эс мĕнле шутлан, анне?

— Хĕрĕ вара кам таврашĕсем пулать-ха? Эс, ывăлăм, пуçпа шутласах тăватăн-и ку ĕçе? Капла ытла тăрук.

— Хĕрне эсĕ, аннем, курмах та ĕлкĕреймерĕн пулĕ-ха. Кĕркунне пирĕн ялта вĕрентме пуçлать, учительница. Халь Улюна аппасем патне чарăннă. Ĕнер паллашрăмăр.

— Темĕн, ку мана пĕртте пӳтлĕ япала пек туйăнмасть. Çыннин кăмăлĕ темлескер-ха. Хĕрарăм тĕрли пулать, ачам. Пурнăç çавăрмаллине суйласа илесчĕ.

— Эсĕ, аннем, ан кӳрен, ыран хăв курса хăв хаклăн. Сăнĕ-пуçĕ те — питĕ чипер. Кăмăлĕпе вара, аннем, санах хывнă. Йăваш этем. Çын чĕрине курма пĕлет... Тем, ман хырăм хыр тăрне кайрĕ-ха, хуппипе çĕрулми юлман-и унта? Çĕркаçхи питĕ ăша пынăччĕ, аннем...

— Çиччас, çатма çинче ăшăтса парам.

Варук аппа ĕнерхи çĕрулмине наччас çатма çинче шатăртаттарса илчĕ.

Чĕре сури тусан, Володя çенĕке, арча çине, тухса выртрĕ, пăртакран — ăшă-ăшă ыйха путрĕ. Çывăрса кайнă-кайманах вăл тĕлĕк курчĕ.

Володьăна авлантараççĕ пек. Тĕрĕсех мар-ха, Уçтука качча параççĕ пек. Кама качча параççĕ-ха хĕре? Каччи Володя хăех пек-ха, мĕншĕн тесен унпа юнашар хĕр пĕркенчĕкĕ пĕркенсе ларакан хĕр Уçтуках-çке. Апла хĕр куçĕнчен мĕншĕн куççуль шапăртатать, эрлĕк-хӯхлев куççулĕ. Анланмалла мар япала пулса иртет-ха кунта, кăмăла вырнаçмалла мар япала. Вĕсен туйĕнче пĕр савăнăçлă çын та çук, пурте пуçĕсене усса лараççĕ, халиччен ĕçекенĕ те ĕçмест, купăсĕ те нăрлатса ура тупанĕсене кĕçĕттерсе тăмасть. Пĕр-пĕрне савакан чĕресен туйĕ капла иртмелле мар-çке. Савăнăç сапса тăмалла.

Хĕвве хупмалли самант та пиçсе çитет. Ку тата мĕнле япала? Çамрăк мăшăра хĕвве хупмалли кĕлете мĕншĕн Володьăна пĕчченех çавăтса каяççĕ? Уçтук вара кампа юлать? Уçтука темĕнле тĕсĕр мĕлкесем хупăрласа илнĕ? «Чимĕр-ха, ялйыш, туй халăхĕ, мĕн хăтланатăр эсир? Ма эсир мана кăна хӯптĕрлетĕр? Уçту-у-ук?!» — тилмĕрсе кăшкăрасшăн каччă, анчах та, темĕн чухлĕ кăшкăрас-кăшкăрас тесе тапаçлансан та, пырĕнчен сасси тухмасть унăн.

Володьăна кĕлете шăлтăр-шалтăр питĕрсе лартаççĕ. Кĕлетре шăршлă, пăчă, сывлама сывлăш çитмест. «Намăссăрсем, кĕççепитсем, ханттарсем, камсем сире çапла хăтланма ирĕк панă, уçăр!» — тарăхнипе каллех пĕтĕм вăйне пухса кăшкăрасшăн Володя — кăшкăрай-

масть. Сасăсем йăлт чул пулса ларнă. Володя çав чула пыр шăтăкĕнчен тĕртсе кăларма патнех çитет, чулĕ, темшĕн-çке, пĕрехмай пулă пек, каялла лачлатать. Алăк тул енчисем, шăлĕсене шатăртаттарса, сĕлекисене юхтарса, ухмах ташши ташласа, татти-сыппипсĕр тем ахăрашаççĕ, янăрашаççĕ. Володя хăлхине çăмлă хÿрисене пĕлтĕртеттерсе, çĕтĕк сăхман ташшине ÿхĕлтетсе тĕпĕртетекенсен сăмахĕсем пырса кĕчĕç. «Сан чунна тимĕр атă кĕлли айне тума çичĕ тинĕс леш енчен хăрушă ашапатман килет. Юнлă туй тăватпăр ун чухне, юнлă туй!»— акă мĕн ÿхĕлтетеççĕ иккен çав тискерсем. Каччă, хăйне куçкĕрет юнанине чăтаймасăр, пĕтĕм вăйне пухса, чышкине чăмăртать. Унăн чышки ÿсет-ÿсет те, тем пысăкăш чăмăр пулса тăрать. Çав чăмăрпа вăл алăка хÿнтлеттерме пуçлать...

...Шан-шан-шан! тутарать алкум алăкне такам. Володя шартах сиксе вăранса кайрĕ. «Каллех çав шашулкка хирĕнсе ларнă иккен, аптрашки! Хам килте чухне çĕнни улăштарса лартмалла пулать»,— ыйхи янках уçăлса çитсен, шухăш вĕççе иртрĕ ун пуçĕнче. Алăка уçса янă-яманах Володя кăкри çине шурса, кăвакарса кайнă амăшĕ тÿнчĕ:

— Ывăлăм, вăрçă!..

Çийĕнчех Уçтук та чупса çитрĕ.

— Паян ир çинче, тăватă сехетре, фашистла вăрăхурах пирĕн çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ,— пăлханчăк сасăпа, халь-халь йĕрсе ярасла пĕлтерчĕ усал хыпара вăл та.

Паçăр анчах хĕпĕртÿ тăракан кил-çурта сасартăк тĕксĕм çапрĕ. Варук аппа, вырăн çине пырса сĕвенме хал çитернĕскер, пĕр вĕçĕмсĕр ахлатрĕ, тем хÿхлесе, чĕрине хыпаларĕ.

Володя пÿрт варринче пĕр самант юпа пек хытса тăчĕ. Пăртакран, мĕн пулнине ăнкарса илсен, ик сăмах çеç каларĕ: «Апла, эппин», терĕ. Тÿрех çула пуçтарăнма пуçларĕ.

Тепӗр сехетрен вӑл, салтак хутӑсне ҫурӑм хыҫне ҫак-са, Канаша тухса утрӗ. Варук аппа, кӗтмен хуйхӑпа лаштӑрах кайнӑскер, ывӑлӗнчен ни вилӗ, ни чӗрӗ вырт-са юлчӗ. Володьӑна ӑсатма Уҫтук пычӗ.

Ял шӑпланнӑ, лӑпчӑннӑ. Унта та кунта, хапха умӗ-сенче, виҫшерӗн-тӑватшарӑн ушкӑнланса тӑнӑ. Хӑшӗ-пӗри колхоз правленийӗ еннелле васкаса утать. Пурте пусӑрӑнчӑк, сӑмаха виҫсе, тайтарса калаҫаҫҫӗ.

Чичиварӗ. Унӑн шӑнкӑр-шӑнкӑр шывӗ паян хӑнкӑр-хӑнкӑр туса юхнӑ пек илтӗнет. Тӗсӗ ҫӗтнӗ ӑшхыппи чӗлтӗрти шывӑн. Чичивар урлӑ каҫнӑ чухне Володьӑпа Уҫтук ӗнерхи хаваслӑ тӗлпулу самантне куҫ умне турӗҫ. Вӗсем, чарӑнса, шӑнкӑр-шӑнкӑр ҫырман хӗр ҫивӗтне явакан шывӗ ҫине нумайччен тӗмсӗлсе, шухӑша кайса пӑхса тӑчӗҫ. Хӗрпе каччӑ чӗринче ӗнерхи ҫепӗҫ кӗвӗллӗ перкелешӳ сӑмахӗсем сӗрме купӑс сасси пек тӗлкӗшсе чӗнкӗлтетрӗҫ.

«Ҫӳлӗ валак пуҫӗнче шӑнкӑртатса шыв юхать. Сил-пи чӑваш ялӗнче Нарспи ятлӑ хӗр ӳсет. Кам пулать ҫав пирӗшти, э?»— тени те, «Ятӑма пӗлессу килсен, ятӑма та калама пултаратӑп. Анне мана Уҫтук, тет, пӗрле вӗ-реннӗ юлташсем Устя тетчӗҫ. Эсӗ темле чӗнӗн ӗнтӗ, пӗлместӗп?..»— тени те, «Ӑт, пӗлтӗмӗр те! Эсӗ пирӗн яла килетӗн, шкула, вӗрентме. Учительница. Тӗрӗс-и?»— тени те, «Илле пророк пекех тӑнлӑ-ҫке эс, витӗр курса тӑратӑн. Ҫипуҫран пӑхсан, пророк пулас ҫук-ха эс, сал-так тумӗпе, курма таврӑнатӑн-и?» — тени те, «Ай, пать-ка! Тӗлӗнтерсех пӑрахрӑн-ха эс мана. Пурне те пӗлен. Ман аннен хӗреснамӑшӗ кам, кала-ха, ӑна та пӗлетӗн пуль эс, турран килесшӗ, ӑслӑ ҫамка, э?»— тени те, «Кӑна вара аннӳнтен кайса ыйт...» тата ытти те.

Талӑк каялла анчах кӑвар сапса янӑранӑччӗ ҫакӑнта каччӑпа хӗр сӑмахӗ. Халӗ, акӑ, вӗсен чӗрисенче эрлӗк, ҫамрӑк пуҫ ҫине кӗтмен ҫӗртен йӑтӑнса аннӑ хурлӑх. Ҫул тӑршшӗпе те пӗри пӗр сӑмах чӗнмерӗҫ, шӑпӑрт, чӗм-сӗр утрӗҫ.

Канаша та вĕсем çаплах çитрĕç. Володя военкомата кĕрсе тухрĕ. Вакунсем çине ларма вăхăт çапсан, Уçтук, ăшĕнчи туйăм капламне тытса чараймасăр, макăрса ярса, Володя кăкăрĕ çине ыткăнчĕ, ăна мăйĕнчен ытала-са илсе, унăн тути çумне лăпчăнчĕ.

— Володя, чунăм-тăванăм, кăвакарчăнăм, каçар,— теме çеç пултарчĕ вăл.

— Мĕн эсĕ, Уçтук, Уçтукăм, лăплан,— куççульне çăтса, пăшăлтатрĕ каччă.— Асра çук çĕртен тупăннă телейĕм, юратăвăм... Эпир çеç мар хурланатпăр паян, лăплан...

Хĕр куççулĕ пушшех шăпăртатса анчĕ.

— Володюшка, хăвна упра, тархасшăн...

Тапранма паллă парса, рельса тимĕрне виçĕ хут чанклаттарчĕç. Пуйăс кăшкăртса ячĕ. Пăравус хырă-мĕнчен перрон çине пăс палкаса тухрĕ.

— Чим-ха,— терĕ те Володя, Уçтука вакунсем патĕн-чех тăратса хăварса, хăй вокзал кĕтессинче чечек çых-хипе тата хутаçпа тăлăххăн тăракан ватă хĕрарăм пат-не чупса кайрĕ, ăна тем калакаларĕ, вак укçа сĕнсе пăх-рĕ — лешĕ илмерĕ курăнать, вара утмăлтурат çеçки тултарнă чечеклĕ пĕчĕк вазăна, çинçе пилĕкĕнчен ывăçласа, каялла вĕçтерсе килчĕ.

— Ывăлне ăсатма тухнă пулнă та — кунти паллака-нĕсем патне йăпăртлăха кĕрсе тухам, тенĕ карчăк, пуйă-сĕ кайнă çав вăхăтра, тăрать халь карчăк ним тума пĕлмесĕр... Ку сан валли, Уçтукăм,— утмăлтурат çеçки-не тултарнă чечеклĕ пĕчĕк вазăна хĕре тыттарса, вакуна ларма хыпаланчĕ каччă.

Пуйăс хускалчĕ. Вакун урапisем, асап, куççуль чул-не вырăнтан тапратнă евĕр, тӳрккессĕн, чанклатса хаш-латрĕç, нăйкăшрĕç.

Володя Уçтука, хăй çумне туртса илсе, хытă-хытă чăмăртарĕ, вĕри сывлăшпа кушăрханă тутипе хĕр куç-çульне чуптăва-чуптăва типĕтрĕ, унăн ярапа пек икĕ çивĕтне пӳрнисемпе асăрханса сĕртĕнчĕ. Вара тапранса

кайнă пуйăс хыççăн чупрĕ. Ик-виçĕ алă ăна теплушкăна туртса хăпартса лартрĕç.

— Уçтук, эпĕ сана юрататăп. Эс кĕт мана, кирек мĕнле пулсассăн та кĕт! — янăрарĕ чугун урапа сассин шавĕпе пĕрлешсе кайнă Володя сасси.

— Володюшка-а, кĕтетĕ-ĕп, темĕн чул кĕтме тивсен те кĕтетĕп, сывă пул! — çав сасса хăваласа тытасла, пуйăс хыççăн ăнтăлчĕ Уçтук сасси.

Пуйăс çухалнăçемĕн çухалса, кун анинчен çĕтсе пычĕ, унтан пуçĕпех каçхи сĕме чăмса кĕрсе кайрĕ...

— ...Çапла, юратун тĕтресĕр имĕпе чылаях савăнма пӳрмен çав Вĕсене — вăрçă тухнă. Мĕн савăнăç çинчен каламалли унта, пĕр-пĕрне курса тăранмалăх вăхăчĕ те пулман çамрăксен. Вĕсен тĕлпулăвĕ — ирхи шуçăм çути пек: таса та лăпкă, шевли вара — яланлăха, — терĕ те Георгий Самуилович, хаш сывласа (те хăй каласа панине тепĕр хут чĕри патне çывăх туйса тăнăран), вăрахчен чĕмсĕрленсе, шута кайса ларчĕ.

Пăртакран, кĕлне шаккаласа, чăпăкне вĕркелесе, чĕлĕмне çĕнĕрен тивертсе ячĕ вăл. Ку табак шăршăсăр, туртман çыннăн кăмăлне те йĕклентермест.

Эпĕ те, Георгий Самуилович калавĕпе хĕвеллĕ асамлăха лекнĕскер, купери шăплăха хуйхатма шикленсе, сывламасăр тенĕ пек лартăм.

Пурнăç! Эсĕ вăйлă та таса, эсĕ çут тĕнче çутнă пуççавăрмăш хĕвел!

— Ăçталла пыратпăр çак эпир? — кăштахран сăмах чĕнчĕ Георгий Самуилович.

Эпĕ, чӳрече каррине сирсе, тулалла тинкертĕм.

— Муром хирĕсем урлă каçатпăр пулмалла, ахăртнех... Ия, çавăнталла пыратпăр пек туйăнать, — терĕм, тӳрем хирсене асăрхаса.

Пирĕн пата урăх ларакан-кĕрекен пулмарĕ. Иксĕмĕрех, никамшăн та чăрмав пулмасăр, хамăр шухăшăмăрсемпе хамăрах чăлханса пытăмăр.

— Пирĕн тепри çĕтмеллипех çĕтрĕ курăнать, çухал-

чĕ,— хăйпе хăй сăмахланă евĕр каласа хучĕ манăн кӳршĕм, чĕлĕмне ĕме-ĕме.

— Май уйăхĕ... Чăвашсем, эпир ăна çу уйăхĕ тетпĕр: çутçанталăк çеçке çурнă вăхăт...

Георгий Самуилович хăй калавне малалла тăсассине эпĕ чăтăмсăррăн кĕтсе лартăм. Вăл нумаях кĕттермерĕ.

«Эпир час-часах çакнашкал япала куратпăр»,— терĕ те сăмахне малалла сыпăнтарчĕ.

— Ку чухнехи чылай çамрăк «юрататпăр» теççĕ те тӳрех кирлĕ çĕре, сырăнма! Тепĕр икĕ-виçĕ уйăхран пăхатăн та, çемье тĕсĕ те çук, сĕвĕрĕлсе пĕтнĕ, çухалнă. Пĕри пĕрне йăлăнтарать, тепри — тепĕрне. Пĕрре ЗАГСра пулнă хыççăн çур çул пекрен унта тепре лăкăштатса пыракан та туллиех, пымасан — хĕрарăм арки хыççăн çил хăвалама тухса чупаççĕ. Килте лараканĕ те, иçмасса, куçкĕрет арăмне улталать, мăр-мăр кушакла, ют нӳхрепрен хăйма çиме вĕренет,— куç хупанки тĕлĕнче ниçталла каяймасăр çакăнса тăракан чĕлĕм сĕрĕмне сылтăм аллипе авăсса, хĕрӳленсе калаçрĕ Георгий Самуилович.— Володьăпа Уçтук юратăвĕ вара чăннипех те этеме тивĕçлĕ юрату, этем тивĕçне çӳле çĕклекен юрату. Пурнăç вĕсене пĕр хутчен анчах курнăçтарнă. Ун çинчен эпĕ каласа патăм ĕнтĕ, вĕсен пирвайхи тĕлпулăвĕ çинчен. Урăх вĕсем нихăçан та куça-куçăн тăрса калаçман, пĕр-пĕрин çăварĕнчен тухакан вĕри сăмахсемпе йăпанман. Апла пулин те, вĕсен туйăмĕ самантлăха та иксĕлмен. Иксĕлме мар, пушшех хăйĕн шалтти çутипе ӳснĕ, чăмăртаннă çав туйăм. Мĕншĕн тесен икĕ чĕре кăварĕ, вĕсем хушшинчи çĕршер те çĕршер çухрăма парăнтарса, юратăва вăй парса, ялкăштарса тăнă...

Юрĕ, йĕркипех каласа парам, эппин,— Георгий Самуилович, çамки çине усăнса аннă çӳçне ал лаппипе лăп-лăп тутарса майлаштарса хучĕ те, пуçланă калавăн шанчăклă йĕрĕ çине тепĕр хут ӳкрĕ.— Савнисемшĕн малалла тунсăх — асап вăхăт пуçланнă. Ăшĕсем çунние çамрăксем сыру урлă пусарнă... Акă çав сырусем...

Георгий Самуилович, çав çырусене тахçан авал хăй çырнă пек, вĕсенче мĕн çырнине аса илсе калама пуç-ларĕ.

*«1941 çул. Июль уйăхĕ.*

Савнă Уçтукăм, шурă хута хуратса, йÿç кăмăла пăтратса, тенĕ пек, çыру çырап васкаса.

Кăмăлăм вара манăн питĕрех те йÿçĕк. Ĕнтĕ сана курманни те уйăх çитрĕ. Эпĕ çав-çавах ун чухне хампа мĕн пулса иртнине тĕппипех тавçăрса илейместĕп-ха. Йăлт тĕлĕкри пек туйăнать, Чичивар каççи çинче эсĕ траканкки сиксе шыва чăмни те, Ухманăн çăлтăрлă каçĕ те, пурте, пурте. Ниушлĕ ку çаплах, чăн пулнă, тетĕп эпĕ. Чĕрем çавна ĕненмех ыйтать.Ăçтан тÿрех ĕненем-ха, Уçтукăм? Пĕтĕмпех ăнсăртран пулса тухрĕ-çке-ха, ыттисенни пек мар. Сана курнипех манра сасартăк темĕнле чи кирли, халиччен кĕтсе пурăнни çуралчĕ. Хамра кĕтмен çĕртен капланнă туйăм çинчен калаймарăм та пулĕ сана, айăп ан ту. Тин ăнлантăм: чĕрем ăшшине эпĕ пĕр сана çеç парăп, саншăн анчах упрăп.

Кунти пирки калам тата. Эпĕ хамăр чаçа лекеймерĕм. Унти вырăнсене тăшман тытса илнĕ ĕнтĕ. Пĕрле чикĕре тăнă тус-юлташсем те пирвайхи çапăçусенчех пуçĕсене хучĕç пулĕ...

Пирĕн эшелона Канашран тÿрех Чулхулана илсе кайрĕç. Кунта ирсĕр Гитлер салтакĕсене хирĕç тăма çĕнĕ вăй пуçтарăнать. Пурăнасса палаткăсенче пурăнатпăр, пирĕн хыççăн килекенсем валли çĕрпÿртсем чаватпăр, вăрçă вăййисем иртеретпĕр. Кун каçа ураран ÿкичченех ĕшенетпĕр.

Фронтран кашни кун кичем хыпар килсе тăрать, тăшман Тăван çĕршыва шалтан-шала шăтарса кĕрет. Çынсем вилеççĕ, хуласем, ялсем çунаççĕ. Чĕрем хаярлăхпа тулать. Часах пирĕн çул та — фронта, çапăçу хирне...

Сана чунтан-вартан хисеплекен *Володя»*.

*«1941 çул. Август уйăхĕ.*

Володя, варлийĕм! Капла каланăшăн çилленместĕн пулĕ, тетĕп. Пĕрле чухне çав сăмаха та каласа курай-марăм сана. Питĕ, питĕ каласшăнччĕ — калаймарăм, иментĕм. Мĕн тăвас тейĕн, çапла çав эпир, хĕрсем, хăю-сăр халăх. Канаш перронĕ çинче пĕччен тăрса юлсан, ăсран каятăп пуль, терĕм. Сана урăх нихăçан та, нихă-çан та курма пӳрмесле, ăшăм çунчĕ, чĕрем сиксе тухас-ла тапрĕ, куççуль шăпăртатрĕ. Сана илсе кайнă пуйăс та тахçанах куçран çĕтнĕччĕ ĕнтĕ, эпĕ çав-çавах, эсĕ халь-халь каялла персе çитес пек, хĕвеланăçнелле теме кĕтсе, теме шанса пăхса тăтăм. Володя, парнӳне, çеçке çурнă çĕмĕртлĕ вазуна, ĕмĕр-ĕмĕр упрăп, эсĕ çĕнтерӳпе таврăничченех, хамăр ватăлса ларичченех. Вăл манпа пĕрле сана кĕтĕ. Кĕтĕ-кĕтĕ те кĕтсе илĕ. Эсĕ таврăнатăн вĕт, Володя, çапла-и? Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен эпĕ сана чи çывăх çыннăма кĕтнĕ пек, савнине, упăшкана кĕтнĕ пек кĕтетĕп... Ĕнен, пĕртте ӳс-терсе каламастăп, чăннипех çапла. Эпĕ ĕнтĕ хамăн яш пурнăçăма ĕмĕрлĕхех санпа çыхрăм.

Çырăвна кĕте-кĕте вилсех каятăп пуль, терĕм. Кас-кас усал шухăш пуçа пырса кĕрет те — хăрасах каятăп. Енчен те эсĕ çĕр çинче пулас çук пулсан, пурăнма мĕнле хал çитерейĕп-ши эпĕ?.. Уйăха яхăн килте пурăнтăм, анне патĕнче. Тăван ялта нумаях пусăрăнса пурăнай-марăм, чун Ухманах туртрĕ.

Часах сентябрĕн пĕрремĕшĕ. Ĕмĕрте пирвайхи хут ачасене вĕрентме тытăнатăп. Кăштах хăратăп та...

Аннӳ патĕнче, Варук аппа патĕнче, пулаймарăм-ха. Каçма аван мар пек. Юри сĕкĕнсе çӳренĕ пек туйă-нать.

Володя, хăвна упра, тархасшăн. Çырăвна чун пек кĕтсе юлатăп.

Сана чунтан-вартан телей сунакан *Уçтук».*

*«1941 çул. Сентябрь уйăхĕ.*

Савнă, ытараймми Уçтукăм!

Паян ирпе санăн çырăвна килсе пачĕç те хăвпа юнашар ларса калаçнă пекех туйăнса кайрĕ. Эх, пĕлесчĕ, мĕн тери манăн сана курас килет, чăтайми. Анчах нимĕн тума та çук — вăрçă!.. Ку çырăва эпĕ çапăçу шавĕ лăпланнă вăхăтра çыратăп. Ĕнер эпир, Чулхулара пуçтарнă дивизири салтаксем, пĕрремĕш хут нимĕçсемпе тытăçăва кĕтĕмĕр. Тăшман пирĕн çине урăм-сурăм вут тăкрĕ. Пĕрремĕш çапăçурах, снаряд ванчăкĕ пуç купташкине лекнипе, Костя Дергач вилсе выртрĕ, белорус ачи Коля Малявка йывăр аманчĕ. Кусем — пирĕн оруди расчечĕн салтакĕсем — артиллеристсем. Эпир пурĕ улттăнччĕ: вырăс ачи Иван Земсков, украина ачи Костя Дергач, белорус ачи Коля Малявка, çармăс çынни Михаил Туксерн, Отар Гогоберидзе грузин тата эпĕ, чăваш. Пирвайхи çапăçурах пирĕнтен пĕр тус уйрăлса кайрĕ. Çынни питĕ кăмăллăскерччĕ, кулăшла тĕрлĕ халап каласа пама ухатаччĕ. Савнă хĕрĕ пурччĕ унăн — Оксана, шутсăр юрататчĕ вăл ăна, унăн сăнӳкерчĕкне хăйĕнчен шит те хăвармасăр илсе çӳретчĕ, кăкăрĕ кĕсйинчех чиксе çӳретчĕ. Çирĕм иккĕрех Костьăн çĕре кĕрсе выртмалла пулчĕ, мăнтарăн. Нимĕн тума та çук — вăрçă! Эпир ăна, салтакла чысласа, вăрман хĕрринчи пĕр çӳллĕ вырăна салют парсах пытартăмăр. Унăн вилтăприйĕ умĕнче Костьăшăн тавăрма тупа турăмăр.

Тăшман пире сывлăш çавăрма та памасть — чакатпăр та чакатпăр. Хыçра — Мускав. Кунта та çав ирсĕр çĕлен-калтана тытса чараймасан... Çук, çук, пулма пултараймасть! Пирĕн халăх нихăçан та чура пулса пурăнма килĕшес çук. Пирĕн фашист тискерĕнчен аннесемпе аппасене, тăвансене, савнисене, тăван çĕре сыхласа хăвармалла. Пирте — тĕрĕс вăй! Эпир çĕнтеретпĕрех!

Уçтукăм, тархасшăн, сăнна ӳкерттерсе ярса пар. Ухмаха ереслех кĕтетĕп.

Сана чун-чĕререн савакан çынну, *Володя».*

*«1941 çул. Октябрь уйăхĕ.*

Володя, тăванран та тăван сыннăм, варлийĕм!

Çырăвна илетĕп те — чĕрем пĕр саманта лăш пулать. Илмен вăхăтсенче çӳретĕп вара темгепĕр шухăшпа арпашса...

Вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа та уйăх иртрĕ. Учительсемпе паллашса çитрĕм. Тĕрлĕ çын пур. Пĕтĕмĕшле илсен, аван коллектив, ĕçлеме пулать. Кӳрентерме памаççĕ. Уйрăмах маншăн шкул директорĕ хытă тăрать. Вăл та часах фронта тухса каймалла, повестка кĕтет. Пырĕ-çке, çынпа, мирпе пĕрле эпир те пĕтмĕпĕр, аптрамăпăр. Учительсем хушшинче пĕри пур — Мирон Петрович, сăмах май ун çинчен çырса пĕлтерес, терĕм. Çынни хăй чее те сăмаха ăсталскер, анчах та ĕçме юратать. Урока сайра пĕрре урă пырать. Яланах хĕрĕнкĕ çӳрет. Хайне шкултан кăларса ярасси патнех çитнĕ — унсăр пуçне вĕрентекен çук. Çаванпа тытса тăраççĕ. Етĕрне енчисем тет-и этемми. Çара илмеççĕ курăнать ăна — мăйĕ юхан, яланах мăйĕ пӳрленсе, лăймакаланса тăрать. Ӳсĕрпе юр çинче темиçе сехет выртса тăм илтерпĕ, теççĕ. Çитменнине, çынни хĕрарăм хыççăн йăкăртатма селĕм. Пурăнасса вăл шатник пек самăр кĕлеткеллĕ Тракка матки патĕнче пурăнать. Пуштăпа çӳрекен тăлăх матка патĕнче. Хăвăр ялсене пĕлетĕн ĕнтĕ эс? Лешĕн упăшки финн вăрçинче пуç хунă. Мирон Петровичĕ вара Тракка матки патĕнче киле кĕнĕ ятлă шутланать. Ытти çĕре те çӳрекелет, теççĕ. Манпа та сăмах хушма хăтланкалать те — тӳрех касса тататăп, çаванпа кураймасть. Ун курайманни мана чĕрне хури чухлĕ те хăратмасть! Çӳретĕр хăй çулĕпе, вараланчăк.

Тепĕр учительница пур, шутсăр ырă кăмăллăскер. Упăшки усал, арăмĕ уроксене вĕçĕм кăвак куçпа пырать...

Çыртăм та, çырсах кайрăм пулмалла, каçар, пасар матки пек, тем те пĕр сӳпĕлтетсе тултартăм...

Варук аппа патĕнче час-часах пулатăп. Ҫалама ҫук ырă хĕрарăм санăн аннӳ, Володя. Пирвайхи хут сирĕн пата каҫса ларсан, вăл ятласа-хăртса кăларса ярасран питĕ хăранăччĕ. Апла пулмарĕ. Эпĕ ăна ҫавăншăн шуг-сăр килĕштерсе пăрахрăм. Халь унăн сывлăхĕ самай аванланчĕ, атту, эсĕ кайнă хыҫҫăнах, вырăн ҫинчен те тăраймастчĕ. Эпĕ ĕҫре чухне ун патĕнче Улюна кинемей пулать.

Сан ҫырăвусене Варук аппа мана вулаттарать. Эсĕ унта хăвăн Уҫтукна пĕлĕте ҫитиччен мухтатăн та, ҫав йĕркесене вуланă чух, вăтаннипе, сывлăш пӳлĕнсех ларать. Хуть те ҫĕр тĕпне анса кай! Пĕррехинче чăтса лармa пултараймарăм, ҫырăвна сĕтел ҫине пăрахса хăварса, пӳртрен тухса тартăм. Тем шутларĕ ĕнтĕ аннӳ? Пит ниҫта кайса кĕмелле мар пĕҫерчĕ. Пăртакран, хăю ҫитерсе, кĕтĕм, вуласа пĕтертĕм...

Сăнӳкерчĕк ярса паратăп. Хам пекех илемсĕр те, пырĕ. Сана валли ҫăм чăлха ҫыхса пĕтеретĕп. Ҫăмне Варук аппа пачĕ. Пĕтерсенех ярса паратăп. Асту, ан шăн!

Санăн *Уҫтуку*».

*«1941 ҫул. Ноябрь уйăхĕ.*

Уҫтукăм, телейĕм, ытарайми этемĕм, савниĕм!

Ҫырăвушăн пĕр ҫĕклем тавтапуҫ. Сăнӳкерчĕкӳшĕн — пин хут. Эпĕ унран самант та уйрăлассăм ҫук.

Тăшмана тытса чартăмăр. Тек утăм та чакмастпăр! Тăван ҫĕршыв, Мускав ҫапла хушать. Кĕҫ — наступлени! Пирĕн ҫĕр ҫине хăйма ҫиме килнĕ Гитлер вăрă-хурахĕсене тин хăйсене юнлă кĕселпе хăналама пуҫлатпăр. Кĕҫ ҫĕршер те пиншер тупă-пăшалтан ирсĕр тăшман ҫине таса хаярлăх вучĕ тăкăнма тытăнĕ.

Уҫтукăм, сывă пул, маншăн ан пăшăрхан, кĕске ҫырнă тесе ан ятла. Ҫапăҫу хыҫҫăн вăраммине ҫырса ярăп.

Саламппа *Улатимĕрӳ*».

*«1942 çул. Январь уйăхĕ.*

Володя, варлийĕм, чунăм, мăшăр çунатăм, ăçта эс? Сас парсам? Мĕншĕн пĕр хыпар та тумастăн, тăванăм?

Санăн Уçтуку ирĕн-каçăн шартлама юр çине вĕри куççуль тăкать, çĕрĕ-çĕрĕпе минтерпе хупласа хÿхлет. Хуйăхăм — çĕр йăтайми. Алла ĕç пымасть, шухăшлас шухăшăма хуйхă пăрлантарать. Çĕр çинчи пĕртен-пĕр юратăвăм, кĕтнĕ çыннăм, пархатарăм, ниушлĕ сана урăх нихăçан та курма пÿрмĕ, сарлака кăкăру çумне лăпчăнса, савăнăç куççульне пытармасăр, пĕр ÿкĕнĕççĕр макăраймăп?! Çав тери сарлака çĕр çинче те сан валли вугçулăмсăр пĕр лаптăк вырăн та тупăнмарĕ-ши?

Эй, ялтăркка таса хĕвел, ĕмĕр кивелми çуттуна ÿкер Володя умне, çул кăтартса пар, сас партар!

Пĕтетĕп, пĕтетĕп эпĕ сансăр. Володя! Ут-пÿ сивĕнет, юн пăрланать сансăр! Ăçта эсĕ, тусăм, сас парсам?!

Чĕрине шăнтса хÿхлекен *Уçтуку».*

... Март хĕвелĕ ăшăпа сĕнкнĕ уйсем çине кÿçне чарса пăхать. Çурхи хĕвелĕн пĕр ĕç: чăкăт пек шурă-шурă хирсене юртан тасатса чĕрĕлĕх-телей вăрлăхĕ акасси. Сивĕпе ĕнтĕркенĕ ял, çур хевтине сиснĕ çăмламас Улайкка пек, шăмшакне канлĕх кĕртсе, лăстăртатать. Пÿртсемпе лупас тăррисенчен куçне уçнă тумлам каçса кайса шăпăртатать. Каçсерен, çĕр çине сулхăн ансан, тумламăн йĕс хĕлĕхĕ самантлăха шăпланать, унăн ăшчикне сивĕ тытать. Çук çав, çутçанталăк ăслайĕ çутçанталăк ăслаех çав, е унта, е кунта мĕн ирччен йĕке пек шăннă пăр катрамĕ, пăрлантарăва парăнмасăр, шарт сике-сике илет, чĕркĕмĕл пек чĕрĕлĕх куççулĕ, улăм пĕрчи хăвăлĕнче вăй илсе, тасаран та таса çĕр çине йăрăлтата-йăрăлтата анать, çĕркаçа сĕнкме хатĕрленнĕ çут тĕнчене чун кĕртет.

Кĕçĕн алăк сасси пулчĕ те, Уçтук, сĕтел хушшинче тетрадьсем тĕрĕслесе лараканскер, чÿрече каррине сирсе, урамалла тинкерчĕ. Никам та курăнмарĕ. Тĕттĕм. Та-

кам çенĕк урайне тӳнклеттерсе утса иртрĕ. Пӳрте хĕрĕнкĕ Мирун йăтăнса кĕчĕ.

— Пирĕн килес. Утаççĕ-и, чупаççĕ хуçисем?— сăмсапа мăрăлтатрĕ вăл, ӳкесрен аран-аран алăк янаххинчен тыткаласа тăраканскер.— Хăна килчĕ. Улюна кинемей ăçта? Çук-и? Тем тума кирлĕ-ха вăл мана, тепĕр тесен...

Уçтук хура та, шурă та чĕнмерĕ, «тухса кай» та, «тĕпелелле ирт» те темерĕ, паçăрхи сулăмпах хăй ĕçĕпе тăрмашрĕ.

Мирун сĕтел патне танкăлтатса пычĕ, ампар пек сарлака шăлавар кĕсйинчен пăкăланă пулăштух кĕленчи туртса кăларчĕ, лартрĕ, лартнă чух, сулăнса кайса, чӳрече патушĕпе çурăмне хытах ыраттарчĕ, хăй пурпĕр хĕр çумне сикерех ларма хатĕрленчĕ.

— Чи йӳççи. Çунаканнинех тăпăлтарса килтĕм пĕринчен. Атя, туп стаканна,— пулăштух кĕленчи енне ӳпĕнчĕ Мирун.— Эх, Устиня Кирилловна, нимĕн те пĕлместĕн çав эс, нимĕн те пĕлместĕн. Мĕн, савăнăçран ĕçетĕп тетĕн-и эс мана? Çук, савăнăçран мар. Аш çуннипе. Ăнмасть ман хĕрарăмсемпе. Тракка матки чухлĕ Тракка матки те килĕнчен хăвала пуçларĕ. «Тухса кай, сан пек арçынпа пĕрле выртса çывăрнинчен çывăрманни, тасал, çĕрĕк çăпата кантри»,— тесе янăрашать. Эп, мĕн, çĕрĕк çăпата кантри-им, вăл апла мăшкăллама, э?

Мирун кĕленче анинченех пĕр-ик сыпкăм турĕ.

— Эх, Устиня Кирилловна, Устиня Кирилловна,— каллех хашлатрĕ хĕрĕнкĕ арçын, хĕр çумне тачă сикерех ларса.— Атя, сирĕн пата пурăнма куçам та — ĕçĕ пĕттĕр. Çăва патне Тракка маткине, çав арпа миххине. Эсĕ те, эпĕ те учитель, интерессем пĕр пек пирĕн. Шăкăлтатса кăна пурăнăпăр. Ĕçме пăрахап, йăлăхтарчĕ. Э, мĕнле шутлан, Устиня Кирилловна, Устя?

Уçтук, Мирун сăмахĕсене илтсе, çӳçенсе илчĕ. Хăй пурпĕр шăл шурри те кăтартмарĕ. Хĕр чĕнменнине кура, Мирун хăюлланчĕ.

— Калап çав эс мана ăнланан тесе. Пыл чĕресĕ пек

тутлă çав эсĕ, пархатарăм,— сылтăм аллине хĕр пилĕкĕ çине хума хăтланчĕ те Мирун — пиçеймерĕ. Уçтук унăн сÿсленнĕ пÿрнисене пĕррех пăчăртаса лартрĕ.

— Э-ей, Мирон Петрович, хăвăра йĕркеллĕрех тытасчĕ. Тÿррипе, çĕр хуга килсĕр йытă пек çапкаланса çÿремесен те юрамалла. Пĕчĕк ача мар вĕт эсир, ăна-кăна ăнланма кирлĕ,— танлăн тавăрчĕ Уçтук, сĕтел хушшинчен тăрса тухса.

Мирун, капла каланине илтсе талăрса кайнăскер, ун хыççăн. Вăл хĕре ыталама тăчĕ, тутинчен чуптума меслетлерĕ. Уçтук ÿсĕр арçын çĕр хута мĕн шухăшпа танкăлтатса çÿренине тинех ăнланчĕ. Вăл, пĕтĕм вăйне пухса, Мируна кăкăрĕнчен чышрĕ те, лешĕ, çавна кĕтменскер, кĕрĕс-мерĕс кĕлеткипе урайне шапах месерле кайса ÿкрĕ.

— Эх, Мирон Петрович, Мирон Петрович. Эпĕ сирĕнте пăртак та пулин этем ĕренки юлнă тесе. Йăнăшнă иккен. Чыссăр, намăса пĕлмен çын эсир, акă кам!— тарăхса кайрĕ Уçтук.— Халех тухса кайнă пултăр кунтан. Тухса каймасассăн-и?..

Хĕр, тĕпел кукрине чупса кĕрсе, турчăка йăтса тухрĕ. Мирун, çÿçне-пуçне тармаклантарса янăскер, йăраланса тăрса, хĕр хыççăн тĕпел кукрине сĕкĕнсе кĕме мекĕрленнĕччĕ, турчăкана курсан, туххăмах каялла чакрĕ. Хăйĕн нимĕн те тухас çуккине ăнлансан — йăвашланчĕ.

— Сыпсан хăюлăх ытларах пухăнтăр терĕм те. Тьфу, ăсу-пуçу,— алăк патĕнчи сак çине пырса ларчĕ — урăлнă пек пулчĕ. «Пĕрле пурăнас çынсем-ха, тепĕр тесен. Чĕрÿ те çемçелĕ-и? Халь ĕлĕкхи мар, арçын тени те шутлă, тутанса пăхмалăх çеç. Ман пек уксаках кăмăлу выртĕ-ха, ак, курăпăр»,— мăкăртатрĕ хăй пурпĕр.

— Каятăн-и эс тухса, каймастăн-и? Тăран сÿпĕлтетсе,— хаярланчĕ Уçтук.— Арçын тет тата хăйне. Мемме! Ланчашка! Халех тухса кайнă пултăр! Çÿрен учитель ятне çĕртсе!

Мирун тата темĕн те пĕр каласа айĕн-çийĕн аварттарасшăнччĕ пулĕ те — кӳршĕрен Улюна аппа каçрĕ.

— Пĕлетпĕр эпир эс камшăн ăш çунтарса пурăннине, суккăрах мар. Тупăннă, вăл анчах çын пек. Вăрçă вăл, ачамккă...— тем вирлĕреххине çавăрттарса хурасшăн муталанса тăчĕ-тăчĕ те Мирун, Улюна кинемей çине пăхса илнипе, нимĕн хаярринех те шарламарĕ, йăвашланнă сассипе çапла анчах хушса хучĕ.— Ак ун сырăвĕ, ме, ил, тепĕр тесен. Парас-и, парас мар-и тесе, Тракка матки патĕнче виçĕ кун тытса усрарăм,— терĕ.

Çыру?! Уçтук, турчкине тĕпеле персе, Мирун патне чупса пычĕ, ун аллинчи çырăва тăпăлтарса илчĕ, чĕпкуç çутипе унта мĕн çырнине вулама пуçларĕ. Çыру вуланă чухне хут тытнă хĕр пӳрнисем вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕç, мăшăр куçĕнчен мăшăр куççуль питçăмартине çурса, йăрăлтата-йăрăлтата анчĕ.

«Савнă Уçтукăм!— хыпăнса вуларĕ хĕр.— Эсĕ мана каçар, нумай вăхăт хушши çыру çырмасăр пурăнтăм, пăшăрхантарас темерĕм. Мускав патĕнчи хаяр çапăçусенчен пĕринче мана йывăр амантрĕç. Пĕр-икĕ эрне тăнсăр выртрăм. Унтан, операци хыççăн, икĕ уйăх ытла Çĕпĕрти пĕр хулари госпитальте вăй пухрăм. Халь тин ним хăрушши те çук, сурансем пирчесе ситрĕç. Пирĕн çул каллех — фронта. Мускав патĕнче нимĕç салтакĕсене пирĕннисем тип мунча кĕртрĕç. Чухлаччăр пирĕн кучченеç мĕн тути каланине!

Уçтук, шутсăр сана курас килет. Киле кĕрсе тухаймастăп. Канаш станцийĕнче эпир ик-виç сехетрен ытла тăмастпăр пулмалла. Канаш витĕр март уйăхĕн юлашки кунĕсенче иртсе каятпăр. Май килсен — тух. Новосибирскран килекен пуйăса ыйт. Эпĕ киле, анне патне те çыру ятăм.

Сана чунтан-вартан шанакан *Володя*».

Уçтук ниçта кайса кĕрейми ăшталанса ӳкрĕ. Кĕтмен хыпарпа вăл çухалса кайрĕ, пĕрре сĕтел патне чупса

ıычĕ, тепре — ним салтавсăр — тепел кукрине çавранса тухрĕ, хыпăнса, кантăкран пырса пăхрĕ, тĕлли-паллисĕр алăкăн-тĕпелĕн кумрĕ, унтан, ăна илсе, пальтине çекĕлтен вĕçертсе, çăм тутăрне хулпуççийĕ çине уртса ячĕ те урама вирхĕнсе тухрĕ. «Часрах Володя патне Канаша!» — савнийĕпе час тĕл пулас самант хĕпĕртĕвĕпе кăртлатрĕ хĕр чĕри.

Теттĕм. Çил касса вĕрет.

Чичивара çитсен, Уçтук умне чăрмав сиксе тухрĕ. Çырмара сĕлкĕш хăпарнă, шыв çулĕ уçăлсах çитеймен пирки унта урлăш-тăршшĕпех кĕвелсе тăрать. Хĕр нумай шухăшласа тăмарĕ, пилĕк таран йăпăр-япăр хывăнса, пăрлă, çӳçенчĕк шыва ашса каçрĕ. Каçсан — мĕн Канаша çитиччене чупрĕ.

Мăшăр çунат шăтса ларнă тейĕн Уçтука, çĕрлехи çул ланкашки-сакăлтине те, шыв-шур чăрмав-синкекне те, шăмма шăнтса вĕрекен çурхи чараксăр çиле те асăрхамарĕ вăл, пĕрехмай станцăна танкăшрĕ те танкăшрĕ. Вокзал çурчĕ патне çитеспе ун умĕнченех пĕр теплушка тапранса кайрĕ. Уçтук çавна курса ăшталанса ӳкрĕ. «Володя пуйăсĕ пулмарĕ-ши ку?» — вĕлтлетсе иртрĕ шухăш ун пуçĕнче. Вара вăл, эшелонăн юлашки вакунне те пулин хăваласа çитсе тытса чарасла, шпалсем тăрăх чупрĕ те чупрĕ. Ăшша пиçсе вăйран сулăнсан — чарăнчĕ. Çухалчĕ эшелон, куçран çĕтрĕ, сĕмлĕхе тарса кĕчĕ. Чугун урапасен сасси анчах пĕр вăхăт рельссем çинче тăнкăртатса кĕрлесе тăчĕ.

Вокзал тĕлĕ — пушă, пĕр çын чунĕ те курăнмасть. Ак, хĕрлĕ хунарне мĕкĕлтеттерсе, чугун çул çинче ĕçлекен васкамасăр утса иртрĕ. Уçтук унпа калаçса пăхрĕ. Ку, халĕ иртсе кайни, Хусан пуйăсĕ пулчĕ иккен. Апла, Уçтукăн ăш çунтарса хыпăнмаллиех те çук. Апла, вăл Володя пуйăсне кĕтсе илет-ха.

Вичкĕн çил ăшша пиçнĕ хĕре часах уçăлтарчĕ. Уçтук, вокзал çурчĕ умне çакса хунă çуни-çунми хунар айне пырса тăрса, унăн вăйсăр çутинче Володя çырăвне

тепӗр хут вулама пикенчӗ. Вуланӑҫемӗн хӗр пичӗ йӑл кулӑпа пута-пута кӗчӗ, тути саванӑҫпа ирӗлчӗ. Ҫав киленӗҫпе вӑл хунар айӗнче чылайччен хӑйпе хӑй савӑшса тӑчӗ, чӗрин ырӑ таппине тимлерӗ. Тулӑксӑр ҫилпе ури самаях кӑчӑр пулнине туйса илсен, Уҫтук вокзалӑн лапчӑк-лапчӑк кивӗ йывӑҫ суртне ӑшӑнмалла кӗрсе тухам, терӗ.

Вокзалра пӑчӑ, шӑршлӑ. Урайӗнче унта та кунта ҫын купи. Харлаттараҫҫӗ. Шухӑша кайса чӗлӗм паклаттаракан та пур. Пурне те вӗсене килӗсенчен пӗр нуша — ҫул нуши сӗтӗрсе тухнӑ. Тӗттӗмре такамӑн алӑри сасӑ тытӑннӑ ачи хӑйӑлтата-хӑйӑлтата йӗрет. Уҫтук пӳртре нумаях чӑтса тӑраймарӗ — тухрӗ. Володя пуйӑсӗ станцӑра чарӑнса тӑмассӑн, ҫил пек иртсе каяссӑн, хӑй ӑна курса юлаймассӑн туйӑнса тӑчӗ хӗре, ҫавӑнпа вӑл тула васкарӗ.

«...Мӗн тери кӗрнек хавасла сывлатчӗ шӗкӗр хуламӑр Канаш ҫур ҫул каярах кӑна,— шухӑшларӗ Уҫтук, тӗттӗмре аран-аран палӑракан ҫывӑхри суртсем ҫине тинкерсе, перрон ҫинче уткаланӑ май.— Юрӑ-кулӑпа, савӑнӑҫ-хӗпӗртӳпе ҫиҫсе-янраса тӑратчӗ. Мӗн чухлӗ илӗртӳллӗ ӗмӗтчӗ яш-кӗрӗмре, Уҫтуксенче! Вӗренсе пӗтерни ҫинчен калакан хутсене аллисене илсен, мӗн тери хӗпӗртенӗччӗ вӗсем. Асану касӗ мӗнешкел савӑнӑҫлӑ иртнӗччӗ тата. Ӑҫта ҫӳреҫҫӗ-ши халь пӗрле вӗреннӗ ачасем — Толя, Миша, Вася, хӗр-тантӑшсем — Нина, Полина, Таня, пурте? Каччӑсем Володя пекех вӑрҫӑ хирӗнче юн тӑкаҫҫӗ пулӗ... Маттур ачасемччӗ, лайӑх юлташсемччӗ. Пӗри те пӗр хыпар тумасть. Хӗрупраҫӗ хӑть кам та пулин ҫыру ҫырӗҫин — шарламаҫҫӗ. Пусӑрӑннӑ пуль ӗнтӗ пурте. Тӑнӑҫ вӑхӑтри пек вӑйӑн-шайӑн ҫӳреймӗн. Вӑхӑчӗ ҫавнашкал...»

Таврана кӑвак сӗм ҫапрӗ. Ҫутӑлать. Станцӑ урлӑ урӑх пӗр эшелон та иртсе кайни-туни пулмарӗ. Шӑп. Йӗпхӳ ҫума пикенчӗ. Упа сурчӑкӗ пекки. Уҫтук Володьӑна кӗтме тин хӑй пӗр нимсӗр-мӗнсӗр тухнине асӑрха-

рĕ те ўкĕнсе илчĕ. «Çăм нускине те пулин илсе тухмаллаччĕ, пĕреххут»,— пăшăрханчĕ хĕр.

Володя! Мĕн каласа юлма ĕлкĕрĕ-ха савнă каччине Уçтук? Хăй ăна хытă-хытă юратни çинчен, унсăр пурăнма пултараймасси çинчен, ăна вĕçĕм кĕтсе пурăнасси çинчен калама ĕлкĕрĕ. Ыталаса чуптăвĕ. Арăмĕ пуласса шантарĕ. Сывă, тĕрĕс-тĕкел анчах çаврăнса килтĕрччĕ Володя — Уçтук ăна кĕтме хал çитерĕччех! Çитерĕччех!

Çанçурăмне сивĕ хыпалама пуçланине сисрĕ Уçтук. Вăл, те Чичивар сĕлкĕшне çурма-çарапаккан утса каçса кăчăр пулнăран, те Канаша çити чупса ăшша пиçнĕрен, те йĕпхў айĕнче тăрса ĕнтĕркеме пуçланăран, çил варкăшĕпе çўçене-çўçене илчĕ. Нўрĕ, чĕрĕ сывлăш хĕр кăкăрне кĕçĕттерсе пўлĕнтерчĕ, ура тунисене чĕпĕтрĕ. «Ара, ку таранах мĕн туса тăратăп-ха эпĕ çумăр айĕнче? Хўтте кĕрес. Вокзал дежурнăйĕпе калаçса пăхас. Мĕнле пуйăс хăçан килессе унран ыйтса пĕлес капла ним тĕлли-паллисĕр çўриччен»,— текен шухăш патне пырса тухрĕ Уçтук, темиçе сехет вокзал умĕпе пайтах каллĕ-маллĕ çўресен. Вокзал дежурнăйĕ, хĕрĕх-хĕрĕх пиллĕксене çитнĕ мăтăх арçын, уксах урине тенкел çине хăпартса хурса, тăрăхла сак çинче хуп сĕтĕрет. Пўлĕме çын кĕнине сисрĕ пулин те, вăл йăшăлт та тумарĕ, юри тенĕ пек, туйăмана персе, пĕртен-пĕр хĕсĕк куçĕпе йĕпе маччана тĕллесе выртрĕ.

Усĕркелесе илчĕ Уçтук. Хăй мĕн çăмăлпа кĕнине каларĕ.

Çывăракан этем, хĕр сăмахĕсене илтсен, урай хăми пек сарлака аллипе çатма пек çамкине шап! шаплаттарчĕ те, лĕхĕл-лĕхĕл кулса ярса, ялт! анчах тăрса ларчĕ.

— Ап-пай-пай, урлă урам кĕтесси!— хирĕнчĕклĕ сассипе кăшкăрса ячĕ вăл, виç ĕмĕр курман тăванне тин курма пўрнĕ пекле. Ку çынна çур самант каялла кăна вилнĕ пек харлаттарса выртнă тесе ниепле те ĕнентерсе калаймăн. Калама майĕ çук. Мĕншĕн тесен этемми сăмаха пăрça сапнă пек шапăр та шапăр кăна тăкать.

Каласмасть, хёртнĕ çатма çинче ăшаланă пăрçа ташши ташлать, тейĕн.— Ат тамаша! Тăрса юлнă эсĕ вăл пуйăсран, йăмăкăм, çывăрса юлнă. Сан пуйăсу пирĕн станцă урлă ĕнер ирхинех тĕпĕртеттерсе иртсе кайрĕ. Çапла, нумайччĕ унта салтаксем, Мускав патĕнчи çапăçура аманса сывалса тухнисем, тесе каларĕç. Шăп икĕ сехет тăчĕ шалун. Халĕ эсĕ ăна ура тупанне çурăмна перĕнтерсе чупсан та хăваласа çитеес çук... Э-э, арçыннуна кĕтме тухнă пуль-çке эс, урлă урам кĕтесси!?— çил çинчи çĕтĕк сăхман арки пек çатăлтатрĕ вокзал дежурнăйĕ.

Уçтук ни чĕрĕ, ни вилĕ пулса кайрĕ. «Кайнă? Кам кайнă? Ăçта? Володя иртсе кайнă-и? Пулма пултараймасть! Çук, çук, пулма пултарайман япала ку! Тен, ку этемми йăнăшать пуль, чăннине каламасăр тăрать?»— пăшăрханчĕ хĕр.

— Эпир йăнăшмастпăр вара, пур чухне те чăннине калатпăр. Чим-ха, йăмăкăм, тен, эсĕ ак çак качча кĕтме тухнăскер пулатăн. Тем ĕнерсем курăнмарăн та. Хĕр шухăшĕ хĕрĕх урама та вырнаçмасть, теççĕ-и-ха çав. Пулĕ çамрăксен. Халь вăхăчĕ çавнашкал та, шанчăксăр. Пурăнма пўрнин пурăнса юлмалла, паллах, çут тĕнче саккунĕ. Эпир шухăшласа кăларман. Эппин, кăтартамха,— тесе, арçын аллине лўчĕркенсе пĕтнĕ минтер айне пашт чиксе ячĕ те унтан хĕре темĕнле хулăн хут кăларса тыттарчĕ.— Сăнўкерчĕк. Савнă хĕрне кĕтетĕп, терĕ. Питĕ ĕштеленсе кĕтрĕ вăл ăна. Кĕтрĕ-кĕтрĕ те кĕтсе илеймесĕрех ларса кайрĕ. Ларас умĕн вăл ман пата чупса пычĕ те «тен, килĕ, пар ăна çакна» тесе хăварчĕ, урлă урам кĕтесси. Каччи, калама кăна калас, маттур яш, маттур! Çакă-и?

«Çакă!!!»

«Уçтук, сана кĕтсе илеймерĕм. Мĕнпе те пулин кўрентертĕм пулсан, каçар. Володя»,— тесе çырнă сăнўкерчĕк хыçне.

Уçтук, такам пуç тўпинчен ханлаттарса çапнăн, йы-

нăшса ячĕ, алăк патĕнчи сак çине тĕшĕрĕлсе анчĕ. Куç-çулĕ шăпăртатрĕ.

Çакна кура, арçын та чĕлхесĕр пулса ларчĕ. Хĕр тути, куççуль витĕр, вĕçĕм пĕр сăмах пăшăлтатрĕ: «Володя, Володя, Володя»,— терĕ.

...Тĕм хура каçа шăтарса ыткăнакан пуйăс, çĕрлехи хирте тем çухатса хăварнăн, тунсăхлăн икĕ хуг умлăхыçлă кăшкăртрĕ. Унăн сасси, пĕрчĕпе пĕтĕленнĕ кăпăшка тăпра сийĕпе лăп-лăп чупса кайса, аякри-аякри катасене, катасенчи çӳçе-хăвалăха çитсе перĕнсе, çур ытамĕнче çунат саракан пĕтĕм çутçанталăка техĕмлĕ варкăшĕпе çупăрласа хăварчĕ.

Георгий Самуиловичăн калас сăмахĕ каллех такăнчĕ.

— Ырă çынна çил хирĕç тени тĕрĕсех те пуль çав. Ахаллĕн ма Володьăпа Уçтукăн, икĕ юратакан чĕрен, Канаш станцийĕнче тĕл пулас мар çавăн чухне! Усал çын алли картларĕ вĕсен савăнăç сехетне, пилсĕр çын алли. Вĕсен телей самантне хурлăх куççулĕпе вараларĕ намăссăр чун!— çапла каларĕ те манăн кӳршĕм тарăхуллăн, вăрăм çула тухнă урхамах сывлăш çавăрма сĕлĕ ани хĕррине чарăнса тăнă евĕр, чĕлĕмне тепĕр хут авăрласа, чăпăкне паклаттара пуçларĕ. Тĕтĕм, вăхăтлăха хуçинчен ютшăнма ĕлкĕрнĕскер, пĕр ăстрăм шлепки тавра хăйи-хăйми çакăнкаласа тăчĕ, унтан, хăйне шиклĕх хӳтĕрлес çуккине асăрхасан, хăмла пултранки пек, мăччана пĕтĕрĕне-пĕтĕрĕне, шĕвеле-шĕвеле хăпарса кайрĕ.

Эпĕ çав шĕвек тĕтĕм капламĕ çине пăхса лартăмлартăм та пĕр япалана аса илех кайрăм. Вера института вĕренме кĕнĕ çул пулнăччĕ-ха вăл. Хам ун чухне, çуллахи вăхăтра, студент çăкăрне чейпе йĕпетмелĕх текелесе, çурт-йĕр тунă çĕрте ĕçлеттĕм. Ытла та шапăлкаччĕ çав хĕр чухне Вера, чисти йăр-япăшчĕ. Çавăрса ярас тесен, такама та çавăрса яратчĕ вăл. Хăй хыççăн кама чуптарас килет, çавна чуптарма пултаратчĕ. Çавăншăн ăна пĕтĕм ял хĕрĕ курайми пулса çитнĕччĕ. Уйрăмах Çерг-

тук маткин Кĕтеринĕ вилсе каясла юратмастчĕ Верăна. Мĕншĕн тесен Кĕтерин çӳрес тенĕ каччисене Вера тыта-тыта илетчĕ. Эпĕ Вера юри хăтланнине пĕлеттĕм те, нимĕн те хирĕçлесе калаймастăм. Тӳррипе, хăйне эпĕ вăрттăн юратса пуравнине те пĕлмен-ха вăл ун чухне. Хам вăрттăнлăха кайран анчах уçса патăм Верăна, института вĕренме кĕрсен. Кулчĕ вара вăл манран каçса кайсах. Шельмă, хăй те мана юратнă иккен те, манашкалах калама хăйман. Çавăнпа, ман меммелĕхе тарăх-тарас тесе, йăр-япăш курăнасшăн тăрăшнă.

Çерттук матки Кĕтерийĕн унччен çӳренĕ каччи çартан таврăнчĕ — Элекçей. Кĕтерин качча кайма çулĕ çитнĕ; ял хĕрĕ, çирĕм виççĕ урлă каçсан та вырнаçма пултараймасан, ват хĕр ятне илтет вара. Ват хĕр шутне кĕрсен — ячĕ ĕмĕрлĕх çыпçăнасса шансах тăр. Эппин, чанĕ çапиччен качча тухса вĕçтерем!— ĕмĕтленет кашни хĕрех. Кĕтери каччи — Элекçей. «Шуйттан Элекçейĕ, килнĕ-килмен Верăсен хапхи умне йăкăртатма пуçланă-çке, хитрине куçланă, эсремет арçынни. Пĕтерет ман пурнăçа çав кĕпер хĕрри Верийех!» — тарăхать Кĕтери, хăйне пӳрес çуллă татăк урăххи çăварне лекес инкеке асăрхасан. Верăшăн пулсан — ялан йӳçĕхсе çӳрекен Кĕтерука çĕтĕлтерсе пултăр. «Çĕтĕлин-çĕтĕлтĕр! Каччăсем ман пата çӳренĕшĕн эпĕ айăплă-им?»— тет вăл, шăл йĕрсе. Элекçей, таврăнсан пĕртен-пĕр каç Кĕтеруксен хапхи умне пынăскер, вĕсен тĕлне пачах манать. Ĕç-пуç капла килсе тухнине кура, Кĕтерук ниçта кайса кĕреймест. Тарăхнипе тем туса хурĕччĕ вăл Верăна. Анчах та Верăна мĕн те пулин туса хунипе Элекçей каялла таврăнмасть-çке-ха. Ăна та ăнланать Кĕтери, ăнланмасть мар. Кур-ха, лешĕ пукра пек çыпçăннă та ун çумне, лумпа хăйăрсан та хăпăтаймăн. Вери хăй ĕçне малаллах тăвать. Элекçее хăтана пыма вăхăт çитсе пыни çинчен те систерсе хурать. Элекçейĕ вара, Вери «юратăвне» чăннипе ĕненсе лартнăскер, çакна илтнипе анрасах каять, тепĕр куннех тăванĕ-пĕлĕшне Верăсем патне хă-

тана ăсатать. «Ăт, тупрăм-тăк тупрăм арăм, ĕçченнинчен ĕçченни, чиперринчен чиперри»,— тесе каçăрăлса çÿренĕ, тет, çав кун Элекçей. Пулас хăтасем пырса кĕреççĕ хĕр килне — хĕрĕ çук. Хĕрĕ çутăличченех тухса вĕçнĕ иккен хулана, Шупашкара, институтa, вĕренме! Ав мĕн иккен! Чике тăршшех тыттарса хăварнă Вера Элекçее. Элекçей вара, намăс курасран, макăра-макăра, хăта сыннисене Çерттук матки Кĕтерийĕ енне çул кăтартса ярать. Кĕтерукĕ, кĕтмен телей вырăсла хапхапах пырса кĕнипе хыпăнса ÿкнĕскер, хăта çыннисемпе туххăмрах сăмах татса, çак кaçах пулас упăшкин килне кайса ларать. «Элекçей шухăшне урлă-пирлĕ тăвиччен, ярминкки çакăнпа пĕттĕр»,— тет вăл.

Кĕтерипе Вера тĕл пулмассерен паян кун та çавна аса илсе кулаççĕ...

Эпĕ шухăша кайса ларнине асăрхарĕ пулмалла та Георгий Самуилович хăй сăмах чĕнчĕ.

— Володьăпа Уçтук çинченех шухăшлатăп-ха,— терĕ вăл, сÿннĕ чĕлĕмне çĕнĕ табак хурса тепĕр хут мăкăрлантарса ярсан.— Вĕсем çинчен шухăшласанах ăш вăркама пуçлать, туйăм çивĕчленет, нимĕнле нишлĕ япала çинчен те шухăшлас килмест. Хăвăн телейне, пуласлăхна шанни пысăк хăват пулĕ этемре. Паттăр чун-чĕреллĕ çынсем анчах хăйсен çăлтăрне тивĕç...— Георгий Самуилович ĕнсине кăтăртаттарса хыçса илчĕ те сăмахне каллех сыпăнтарчĕ.— Вăхăт сурана сиплет,— терĕ вăл малалла шухăшлăн.— Уçтукпа Володьăн чун суранĕ те майĕпен пирчет, ÿт илет. Каллех юратупа лăпланнă чĕресемшĕн пурнăç хăй вырăнне ларнă пек пулать. Пĕрпĕрин патне çыру çырман кун та иртмест çамрăксен. Çырăвĕсем пĕринчен тепри ачаш, çепĕç, йăпануллă çырăнаççĕ вĕсен. Канашри ăнăçман тĕлпулу хыççăн та хĕрпе каччă тепĕр çулталăк çурăсем пек çыру çÿретеççĕ-ха. 1943-мĕш çулхи июнь уйăхĕ хыççăн, Курскпа Орел пĕккинчи хаяр çапăçусем хыççăн, вĕсен çыхăну тăнчах татăлать. Уçтук эрленсе-хуçăлса, ăсран каясла

кĕтет Володя хыпарне. Анчах та каччинчен мар, урăх хыпар кĕтсе илет хуйхăпа лӳтĕркенĕ чун. Курскпа Орел патĕнчи хаяр çапăçусенче Володя паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунине пĕлтерекен шелсĕр хут таткине илет хĕр. Çук, ĕненмест ку хута хĕр чĕри. Ăçтан ĕненĕ-ха, енчен те пĕтĕм пурнăçне, ăсне, кĕлеткине, чунне Уçтук Володьăпа ĕмĕр ĕмĕрлес шанчăкпа çыхнă пулсан?! Ĕненме майĕ те çук! Ывăлĕ вилни çинчен калакан хута илсен, хуйхăрса, ахаль те хавшак сывлăхлăскер, чирлесех каять Варук аппа. Çавăн хыççăн нумаях пурăнаймасть вăл, часах çĕре кĕрет. Уçтук вара унта пурăнма куçать. Хĕр чĕрине куççульпе хуйхă пăвăртаççĕ пулин те, вăл чăтать, пурăнма хал çитерет, каччине, унăн хыпарне тӳсĕмлĕн кĕтет. Кĕтсех тепĕр çул иртсе каять.

Пĕрехмай çунса пурăннипе Уçтукăн сывлăхĕ те япăхланать. Пурпĕр хуйăха парăнмасть хĕр, ĕçпе йăпанать: ачасене вĕрентет, çу кунĕсенче çынпа тан хирте тарлать. Ĕненменрен, Мускава, Оборона министерстви-не те çырса пăхать Уçтук. Унтан та çав шелсĕр хыпарах илет. Володя паттăрсен вилĕмĕпе Курск çывăхĕнче пуçне хунă иккен. Вара урăх кĕтмест Уçтук, çула пуçтарăнать. Хăйпе икĕ пĕчĕк тĕп çĕмĕрт йывăççи илет. Шыраса тупать вăл савнă каччин, ăна нихăçан ӳкĕнмесле юрату çулăмĕ хыптарнă этемĕн, вилтăприне. Хăй пекех яш хурăнлăх хĕрне пытарнă пулнă ăна. Икĕ çул каялла тупă, танк, самолет, пулемет-автомат сассипе кĕрлесе-шатăртатса янăранă таврашăх шăпăрт тăнă. Тăван Раççее ирсĕр вăрă-хурахсенчен сыхласа пуç хунă каччăсен масарĕ çийĕн хăюсăр çил анчах чупкаласа иртнĕ. Уçтук Володя вилтăприйĕ çине, юратăвĕ ĕмĕрлĕх пуласса палăртса, чăвашран илсе килнĕ икĕ тĕп çĕмĕрт лартать. Вара таçти-таçти инçетлĕхе, куç виçейми анлă уй-хирсене, яш хурăнлăха, тем калăпăш кăвак тӳпене хуйхатса, Уçтук хӳхлевĕ янăраса каять:

«Ытарайми савнийĕм, çĕр çинчи пĕртен-пĕр çыннăм, пĕр хĕвве хупăнма пӳрмен упăшкам, Володя! Ир тăр-

сан та, каç выртсан та пĕр эсĕ çеç асăмра. Юр та çурĕ — унăн та тĕсĕ çĕтрĕ, шăрăх та ĕнтрĕ — ĕнтрĕ-ĕнтрĕ те çав ĕнĕкпе хăй те ĕнсе кайрĕ—сан сăну анчах самантлăха та тĕссĕрленмерĕ. Чичивар çăлкуçĕ пек, чĕрем ĕненĕвĕнче хĕлĕн-çăвĕн таса палкаса тăчĕ. Тайма пуç сана Володя, ĕненĕвĕм, хевтем!

Тăвата çул иртнĕ хыççăн акă ăçта тĕл пултăмăр иккен санпа, манăн хастар чĕреллĕ çыннăм, ăмăрткайăкăм! Йывăр çул вĕçĕ тинех сан пата çавăрса килчĕ. Володя, тăванăм, эпĕ килтĕм, çĕр йăтайми хурлăхпа лӳштĕркенĕ санăн Уçтуку. Тăр, савнийĕм, калаçар! Ыталам сана, кăкăру çине ӳксе, савăнăç куççулĕпе макăрам! Тăр, савнийĕм!

Чичивар çырмине янраттарса ахăлтатăпăр. Тăр, савнийĕм! Илтерекре шăмпăлтатăпăр. Тăр, савнийĕм! Ухман тӳпинчи шучĕ те çук çăлтăра шутлăпăр. Тăр, савнийĕм! Эсĕ мана леш ху каласа панă халапа тепĕр хут каласа парăн. Тăр, савнийĕм! Володя, тăр, каяр кунтан! Илтетĕн-и, тăр, тăрсам?!

Çук, вилтăпри хăлхасăр — илтмест, вилтăпри чĕлхесĕр — чĕнмест.

Эй, кăн-кăвак пĕлĕт, пуç тăрринчи йăлтăркка, çуткам чаплашка! Çутар Володя кăкăрĕ çине çĕнтерӳ юрри, амăшĕ куççулĕпе, ман куççульпе шăварăннă çĕнтерӳ юррине çутар! Юлашки сывлăш тухиччен санăн пулăп эпĕ, тӳрĕ пурăнăп, Володя. Текех эсĕ пĕччен пулмăн. Эпĕ чăвашран илсе килсе лартнă икĕ тĕп çĕмĕрт, хамăр юратăва яланлăхах сыпăнтарса, ӳссе çитсе, сан тăпру çинче çуллен çеçке çурĕ. Чичивар çырмин имĕпе, Илтерек шывĕн янкăрлăхĕпе, Ухман çăлтăрĕсен асамлăхĕпе пиеленнĕ çĕмĕрт çеçки сана, савнийĕм, ир те, каç та хăвăн Уçтукун юрату юррине пăшăлтатĕ. Тăр, савнийĕм!

Хӳхлетĕп эпĕ, тăшман касса татнă телейĕмĕршĕн çĕр çыртса хӳхлетĕп, Володя!»

Георгий Самуилович калаçма чарăнчĕ те, купене каллех шăплăх хупăрласа илчĕ. Таçта, аякра-аякра, ял

тулашӗнчен илтӗнни пек, чӗрене хайӑрттарса, кӑмӑла эрлӗк пустарса, вакун урапи такӑлтатрӗ. Пуйӑс, тӑлӑх хирте ҫӗтсе кайса, пулӑшу йыхӑрнӑ евӗр, тунсӑхлӑн кӑшкӑрта-кӑшкӑрта ячӗ.

Эпӗ, Георгий Самуилович калавӗ ырӑпа вӗҫленессе кӗтсе, ӗненсе лараканскер (пурте вилмеҫҫӗ вӗт-ха вӑрҫӑра та!), унӑн юлашки сӑмахӗсене илтсен, шанках пулса кайрӑм. Володя тепӗр хут аманасса та, тен, сусӑрланса юласса та шухӑшлама пултарнӑ-ха эпӗ, анчах та вӑл сасартӑках пурнӑҫран уйрӑлса каясса ӑна та илме пултарайман. «Мӗнле-ха капла,— шараҫлантӑм эпӗ, хыпӑнса ӳксе.— Георгий Самуилович калавӗ кӗнекесенчи пекех ҫыхӑнса-тӗвӗленсе пыратчӗ-ҫке. Ме, кур, ӑнсӑртран тӗп йӗртен пӑрӑн та кай: калаври чи кирлӗ ҫыннӑн вил те вырт. Телейлӗ вӗҫленмеллеччӗ пек-ҫке Володьӑпа Уҫтук шӑпи, ҫавӑн чухлӗ асапланса ирттернӗ хыҫҫӑн питех те телейлӗ вӗҫленмелле пекчӗ. Апла, темиҫе ҫул иртнӗ хыҫҫӑн Уҫтук, тен, хӑйӗн ҫӗнӗ телейне тупнӑ. Тем тесен те, вилнӗ ҫынпа тупӑка пӗрле кӗрсе выртаймастӑн. Чӗрӗ пуҫ пурӑнмаллах»,— ҫакнашкал шухӑш пӑтравӗнче арпашрӑм эпӗ. Тата мана тепӗр ыйту кӑсӑклантарчӗ. Чечеклӗ ваза Георгий Самуилович аллине мӗнле майпа килсе лекнине пӗлесшӗн пултӑм. Ваза ун аллинче пулсан, калав тупсӑмӗ те, паллах, ун аллинче пулма тивӗҫлӗ, терӗм.

Эпӗ шухӑшпа ҫуйханса ларнӑ вӑхӑтра купене ӗҫсе лартнӑ Мирун тайкаланса пырса кӗчӗ.

— Ӑг, ҫӗр ҫӑтманӗсем, нӳхреп хырӑмсем, такки мана ҫирӗм пуслӑх шӑхӑртса хӑварчӗҫ-хӑварчӗҫех. Астӑвӑр, каплах хӑтлансан, народнӑй контроле ҫырап, терӗм те, хӑраса ӳкес вырӑнне хама вакун-ресторантан тӗртсе кӑларса ячӗҫ. Ӑт, пулаҫҫӗ вӗт, ҫӗр ҫӑтасшӗ ҫынсем,— чӗлхине аран-аран ҫавӑркаласа лакӑртатрӗ вӑл, ури ҫинче халь-халь тӗшӗрӗлсе анасла сулланкаласа тӑраканскер. Мирун хаш! сывласа ячӗ те купене эрех шӑрши палкаса тухрӗ.

Георгий Самуилович, тепĕр çавра чĕлĕм мăкăрлăнтарса янăскер, кĕнĕ çын çине шăтарасла пăхса ларчĕ. Лешĕ çав-çавах хăй юррине ĕнерешрĕ.

— Пурнăç вăл, тăванăм, ача вăййи мар. Непуç, пĕрре тăрăслаттарсан — çӳре вара ун хыççăн пархатар кĕлесе, чышкă пек мăкăль тухса ларнă çамкуна хыпаласа,— терĕ те ӳсĕр çын, кĕтесре сĕвеннĕскер, те хăй сăнарлăрах сăмах шыраса тупнишĕн хĕпĕртесе, те тем амакĕшĕн, ихĕлтетсе кулчĕ. Кулса пĕтерсен—тăчĕ, тăчĕ те чӳрече патнелле танкăлтатрĕ. Паçăрхи сăмахсем çумне вăл çапла хушса хучĕ.— Эп ырăран çапла çĕр хута çапкаланса çӳретĕп, тетĕр-и? Ырăран сана, кĕтсех тăр! Çав Тракка матки чухлĕ Тракка матки те сивлерĕ те, ват каска, ыттисемпе мĕн калаçмалли. Пĕтерчĕç ман ĕмĕре хĕрарăмсем, чĕрĕлле çирĕç!

Мирун сĕтел çинчи графинри шыва ланкăртаттарса ĕçрĕ, сентре çине хăпарма тапаçланчĕ.

— Ĕлĕк, çамрăкрах чухне, япăхах марччĕ. Такам та киле кĕртетчĕ, ак халь, пуç кукшалансан,— сутă пуçне катăртаттарса хыçрĕ ӳсĕр арçын,— никама кирлĕ мар çын пулса тăтăм. Кама кирлĕ эпĕ халь? Никама та. Ватлăхра хӳтĕре пурăнма ача-пăчам та çук. Темĕн тумалла. Унччен ăшă куçпа пăхнă хĕрарăмсем те тĕртсе кăларса яра пуçларĕç. «Çӳре ху çулупа, куккук», теес çĕ... Ухманра пултăм, Уçтук патĕнче. Миçемĕш хут ĕнтĕ! Хăй аран-аран çӳрекелет — чирлĕ, юлам-и, шăкăлтатса пурăнăпăр, пĕччен пурăнса йăлăхрăм, кам çумĕнче те пулин пурăнса вилесчĕ, терĕм те, каккуй унта — калаçасшăн та пулмарĕ. Хӳтерсе кăларса ячĕ. Шупашкарта тепĕр майра пурччĕ, вăрçă хыççăн иленни. Калаçам, йăлăнса пăхам, тесе, кайрăм та, сăмса умĕнчех алăкне хупса лартрĕ. Урăх арçын тупнă, сывлăхлине, кăркка ами! Етĕрнери майра патне те кайса килтĕм. Бухгалтерта ĕçлетчĕ те, шулĕкленнĕшĕн, тĕрмене çакланнă. Тĕсĕ! Ăçта кайса кĕмелле? Юрать, Мускаврa шăллăм пурăнать. Вăл, хĕрхенсе, усракалĕ,— лĕпĕртетрĕ Мирун.

Унăн, сентре çине тапаçланса хăпарма хăтланакан-скерĕн, ури тимĕр урлашкаран вĕçерĕнсе кайрĕ те, арçын аялти сентре çине хӳплетсе персе анчĕ. Ӳкни ыраттармарĕ пулмалла. Мирун сас кăлармарĕ. Пурпĕр вăл кăшт урăлнă пек пулчĕ, çавăнпа купере мансăр пуçне тепĕр çын пуррине те асăрхарĕ.

Эпĕ хамăрăн виççĕмĕш пассажир кам иккенне тавçăра пуçларăм. Шарламарăм-ха. Малалла мĕн пуласса çеç кĕтсе лартăм. Мирун Георгий Самуиловича пĕр самант тĕллесе пăхрĕ-пăхрĕ те савăнăçлăн: «Георгий Самуилович, тăванăм, авалхи пĕлĕшĕм»,— тесе, кăшкăрса ячĕ, ăна çупăрлама ӳпĕнчĕ.

Георгий Самуилович тăснă алла тытса пăхрĕ те ырă та, усал та чĕнмерĕ. Мирун хăй паçăр хăварнă ĕçсе пĕтермен хĕрлĕ эрех кĕленчи пуррине аса илчĕ. «Питех те вырăнлă пулчĕ-ха ку пире, ăт, пĕлмен, илсе килеттĕм вакун-ресторанран пĕр пулăштух»,— текелесе, ăна сентре кĕтессинчен туртса кăларчĕ.

Георгий Самуилович яхăнне те ямарĕ. Мирун çине тăрса ӳкĕтлерĕ. Георгий Самуилович, темĕн чул ӳкĕтлесен те, тутанса пăхмарĕ. Мирун, çакна кура тăркач: «Эй, тепĕр тесен, кайтăр, эппин, хам хырăмах. Санпа эпир, Георгий Самуилович, ыран та лӳксе лартма ĕлкĕрĕпĕрха», текелесе, кĕленче тĕпĕнчи эрехе шалтах шаплаттарчĕ. Вăл Георгий Самуилович тем каласса кĕткелесе ларчĕ-ларчĕ те, лешĕ шăл шурри те кăтартманнине курса, хывăнмасăрах сентри çине хăпарса выртрĕ. Пĕр вăхăт вăл тем мăкăртатрĕ, такампа ятлаçрĕ, хыçкаланчĕ, вара, тумхахлă çулпа хантăртатса пыракан урапа пек, харăлтаттарма пуçларĕ.

Эпĕ, мĕн пулса иртнине тинех ăнланса, шăпăртах лартăм. Ара, Георгий Самуилович калавĕн вĕçĕ те пирĕн куперех-çке, тавçăрса илгĕм эпĕ. Уçтук — халĕ те хăраххăн, Ухманрах пурăнать, Мирун ун патне киле кĕрсе, йăва çавăрма хавас-мĕн те — Уçтукĕ хирĕçлет. Ӳрет вара яшлăхне сĕвĕртсе пĕтернĕ этем унченхи

арçын сапаланчăкĕсем патĕнче сапаланса. Хăй калашле — тĕсĕ!

Георгий Самуилович, ку таранччен шăпăрт ларакансскер, алăкăн-тĕпелĕн кумма пуçларĕ. «Да-а,— терĕ вăл тăстарса,— тĕлĕнмелле! Эпĕ пур, асамлăх туйăмĕ çинчен калаçса ĕмĕтленсе ларатăп, йĕксĕкĕ, калавăн ăçтиçук «паттăрĕ» пирĕнпе пĕрлех патшалăх пуйăсĕ çинче ларса пырать иккен...»

Георгий Самуилович сӳннĕ чĕлĕмне тепĕр хут авăрласа чĕртсе ячĕ. Шĕвĕ тĕтĕм, шĕвĕ шухăш пек, никама кирлĕ маррăн, купе маччинче усăсăррăн çакăнса тăчĕ.

Мана ыйхă пусса килчĕ. Вакун проводникĕнчен, пĕрер тенкĕ тӳлесе, тӳшек манер хытă япалапа хăрахшар минтер илсе килсе, вырăн сартăмăр. Ыйăхămăр килмерĕ. Георгий Самуилович чарăна пĕлми чĕлĕмне чаплаттарчĕ. Эпĕ алăсене хĕреслетсе пуç хыçне хутăм та мачча çине шăтарасла пăхса выртрăм. Мана Георгий Самуилович калавĕнчи юлашки, эпĕ пĕлсе пĕтереймен енĕ, ваза тупсăмĕ канăç памарĕ.

— Георгий Самуилович,— чĕнтĕм хăю çитерсе,— каçарăр та, эсир каласа панă калавра маншăн халĕ нимĕн те вăрттăнни çук пек, çапах та ваза сирĕн алла епле килсе лекнине ниепле те тавçăраймарăм-ха?— терĕм.

Георгий Самуилович, ыйха путма васкамансскер, пăртакран ман ыйтăва çапла хурав турĕ.

— Пĕлетĕн-и, пĕлĕшĕм,— терĕ вăл, минтер çине чавсаланса.— Мирунпа пулса иртнĕ тĕлпулу питĕ пăлхатса ячĕ-ха мана.

Эппин, ĕмĕр тăршшĕпех йĕксĕклĕхрен хамăр мĕн чухлĕ хăтăлас тесе тăрăшатпăр пулин те, йĕксĕклĕх çавăн чухлĕ хамăрпа пĕрлех çыхланса çӳресшĕн. Паян, Володьăпа Уçтук пурнăçне сана каласа панă каç, Мирупа тĕл пулатăп тесе шутламан та эпĕ,— терĕ.

Манăн ваза историйĕн вĕçне пĕлесех килчĕ. Çавăнпа эпĕ паçăрхи ыйтăвăма тепĕр хут аса илтертĕм.

— Ваза историйӗ тетӗн-и-ха? Мӗн историйӗ пултӑр унта? Ҫынна ҫын сума суни, пулӑшни ҫеҫ,— шухӑшлӑн каласҫрӗ Георгий Самуилович.— Мирун лапӑртатнинчен илтрӗн пулӗ: Уҫтук чирлӗ, аран-аран ҫӳрекелет, сывлӑхӗ япӑх. Хуйхӑпа хавшарӗ. Ҫӑсал вӑл пенсие кайрӗ. Мӗн ӗмӗрне Володьӑна манмасӑр, тӳрӗ пурӑнса ирттерчӗ. Ҫуллен, ҫӗмӗрт ҫеҫке ҫурнӑ вӑхӑтра, Володя вилтӑприйӗ ҫине кайса килетчӗ. Пӗр ҫул та сиктерместчӗ. Ҫӑсал урараи ӳкрӗ, вырӑнпах выртрӗ,— ҫапла каласа, Георгий Самуилович мана куҫран тинкерчӗ.— Эсӗ,— терӗ вӑл,— лайӑх ҫул юлташӗ пултӑн. Володьӑшӑн Уҫтук та ӗмӗр тӑршшӗпе ырӑ ҫул юлташӗ пулас ҫынччӗ. Телей пӳрмерӗ, ав, вӗсене. Мӗн тӑвас тейӗн, вӑхӑчӗ ҫавнашкал килчӗ. Вӑрҫӑ нумай шӑпана хурлӑхпа шӑварчӗ. Вӑл тискер япала пире тек нихӑҫан та ан ҫулӑхтӑрччӗ,— терӗ.

— Ваза пирки калас пулсан,— Георгий Самуилович, сӗтел ҫине пӑхса илсе, сӑмаха малалла шутарчӗ,— унӑн тупсӑмӗ акӑ мӗнре. Итле. Эпӗ вӑрҫӑ ҫулӗсенче Ухман шкулӗн директорӗнче ӗҫлерӗм. Унтан вӑрҫа илсе кайрӗҫ. Берлина ҫитрӗм. Темиҫе тӗлтен амантӑм та, анчах та телейлӗ ҫӑлтӑр айӗнче ҫуралтӑм пулмалла — чӗрӗ таврӑнтӑм. Таврӑнсан, каллех директора лартрӗҫ. Пӗр пилӗк-ултӑ ҫул ӗҫлесен, хам вырӑна ҫамрӑксене патӑм. Хам предмета, математикӑна, сӗтӗрсе пырсан та мана, ҫамрӑках мар ҫынна, ҫитӗ, терӗм. Устиния Кирилловна сырӑвӗнче ырӑ ятпа асӑнакан ун чухнехи шкул директорӗ эпӗ пулнӑ вӑл. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн та эпир унпа, тӑвансем пек, ҫӑвартан-ҫӑвара шӑкӑлтатса пурӑнтӑмӑр. Паян кунччченех эпир унпа тату. Ҫавӑншӑнах-и, тен, ку хутӗнче Володя вилтӑприйӗ ҫине кайса килме вӑл мана ыйтрӗ. Манӑн унӑн савнийӗн вилтӑприйӗ ҫинчен ун патне чӗрӗ ҫӗмӗрт ҫеҫки хуҫса килмелле, ваза ӑшне лартса. Уҫтук хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне Володя чунне-ӳтне упракан ҫӗмӗрт ҫеҫкин ҫав чӗрӗлӗхӗнче курать. Ҫавӑнпа ҫула тухнӑ-ха эпӗ... Пӗтӗм калавӑм та ҫакӑ кӑна.

Георгий Самуилович, ӳсӗркелесе илсе, шӑпланчӗ.

Эпĕ хама темиçе сехет хушши кăсăклантарса тăнă калав туххăмах пĕтсе ларнăшăн ăшра кулянса та илтĕм.

Чылайччен çывăрса каяймасăр выртрăм эпĕ. Ман ăса, пуçа, чуна пĕр вĕçĕмех Володьăпа Уçтук юратăвĕ, Уçтук ĕненĕвĕ-çирĕплĕхĕ, тасалăхĕ пăлхантарса тăчĕ.

Сентре çинче, пуç тăрринче, Мирун хăлхана çурасла харлаттарчĕ.

Ирхине, эпир куç уçнă тĕле, Мирун, вăранса, куперен тухса тасалма та ĕлкĕрнĕ иккен. Те хăй темĕскер ăнланса, те пирĕнпе урăлла тĕл пуласран сехĕрленсе, ăна урăх вакуна кайса ларчĕ пулĕ, терĕмĕр. Мускава çитсен эпир Георгий Самуиловичпа алă тытсах сывпуллашрăмăр та, эпĕ, метрона анса, хамăр общежити енне ларса кайрăм. Эпĕ çул тăршшĕпех Володьăпа Уçтук çинчен, çын телейĕшĕн тăрăшса çӳрекен Георгий Самуилович çинчен тата Верăпа хамăр çинчен шухăшласа пытăм. «Çын, хăй телейне тӳрре кăларас тесен, тӳрĕ пурăнмалла иккен», текен шухăшпа çунатлантăм.

1972 ç. Сентябрь-ноябрь.
Шупашкар.



## ИРТЕС ÇĂЛТĂРСĂР КАÇ

Ахванеç, автобусран анса ял еннелле каякан сукмак çине ӳксен, кĕсъери эрехĕ çинчен аса илчĕ.

Çула тухаспа вăл çуттине самаях ӳпĕнтеркеленĕччĕ. Пĕтĕм çул тăршшĕпех унăн ăстăнĕ лайăх пычĕ. Анса юласпа çеç пуçĕ хĕскелеме, ăшĕ пăтранма пуçлани Ахванеçĕн çутă шухăш-кăмăлне кăштах тĕксĕмлетрĕ. Халĕ, ак, эрех кĕленчи асне килни лĕкленме пуçланă кăмăлне хăпартлантарсах ячĕ.

Вăл эрех пăккине çерçи сăмси пек тыткăчĕнчен туртса уçрĕ те, кĕленчери шĕвеке сыпкăм-сыпкăм туса, лапкăртаттарса ĕçме пуçларĕ. Çил ачисем Ахванеç туги тавра чупкаласа çӳрерĕç, хырма ĕлкĕреймен янахĕ çине йăрăлтатса аннă тумлама чĕпĕткелерĕç. Ахванеç реххетленсе, тутине пĕлсе, чăпăрт-чăпăрт тутарса ĕçрĕ. Улттăмĕш сыпкăм тунă чух ун куçне арăмĕн çиллес сăнĕ курăнса кайрĕ. «Ы-ы, пĕтме пĕлменскер, чыхса тултар,

кӳп, кӳп, тӑмписмен!»—ҫихӗрчӗ вӑл, ҫӳҫне-пуҫне тустарса. Сыпнӑ сыпкӑмӗ пырне ларчӗ Ахванеҫӗн, куҫӗ шывланса килчӗ, кӑкӑрӗ питӗрӗнчӗ. Темле курӑнман вӑй ҫеҫ сыпкӑма каялла тапса кӑларчӗ. Нумайччен чыхӑна-чыхӑна сывларӗ Ахванеҫ. Вара, кӗленчине каялла кӗсйине чиксе, ял еннелле утнӑ май хӑй тӗллӗн мӑкӑртатма пуҫларӗ:

«Кӳп, пӗтме пӗлменскер, тет-ха тата! Эп пӗтсен, сана такам пит тӑрантарса пурӑнӗ-ха?.. Ӗҫнишӗн вӑрҫать. Эп мӗн, лайӑх пурнӑҫран вӗреннӗ-им ӗҫме? Ҫук, лайӑх пурнӑҫран мар. Ҫамрӑк чух манран ял тӗлӗнсе тӑратчӗ. Влисса ачи мӗнле ҫын пулӗ-ши, хӗр пек те, тумлам сӑра ӗҫмест те, тетчӗҫ. Ҫук, мана апла калама юрамасть. Пӗтӗмпех пӗтнӗ ҫынна ҫеҫ «пӗтме пӗлменскер» теҫҫӗ. Эпӗ, мӗн, пӗтӗмпех пӗтнӗ ҫын-и? Ӗҫем пулам, эппин. Ӗҫнипех ҫынна пӗтнӗ ҫын тесе калама ҫук. Эс ху та манран каях мар ярӑнтаран-ха ӑна, ҫуттине. Сана хӑвна пӗтнӗ ҫын темелле, апла-тӑк. Эп кунашкал ҫынччӗ-и? Э-э-э?..»

Ахванеҫ, хӑйне хӑй калаҫтарса, пурнӑҫӑн пур кӗтесӗсене те кӗре-кӗре тухрӗ. Аслӑ ҫултан Сӗнтӗр ялне ҫитме ултӑ ҫухрӑм. Калаҫ та калаҫ...

«Ӗнер ҫуралнӑ кун пеккине туса ирттертӗмӗр. Аллӑ пӗре кайрӑм. Сӑра-эрех юхрӗ. Малани туйра сикнӗ пекех сикрӗ. Эп ҫур ӗмӗр тултарнине вӑл аплах уявласшӑн марччӗ те, хам ҫине тӑтӑм. Ӗмӗрте пӗрре ҫын шутне кӗрем терӗм. Хӑй праҫникне Малани ҫуллен сӗтел йӑтайми тӑвать те... Епле ҫуй турӗҫ унӑн пӗлӗш-тӑванӗсем! Вӗсем мана чыс тума мар, хӑйсен ҫуралнӑ кунӗсене ирттерме пуҫтарӑннӑ тейӗн ҫав. Малани, Малани тата! Хуть кӗпе парнелесчӗ упӑшкине. Как-никак ҫирӗм пилӗк ҫул пӗрле пурӑнтӑмӑр. Чӗрӗк ӗмӗр хушшинче йӳҫҫине те, тутлине те пӗрле тутаннӑ, пӗрле тӳснӗ. Йӳҫҫи Маланине мар, мана лекрӗ пулӗ те ӗнтӗ ытларах, ҫавах та упӑшкипе арӑмӗ-ҫке-ха эпир. Хисеп тумаллахчӗ ӗнтӗ Маланин мӑшӑрне пӑртак та пулин. Эпӗ пукане пек

тумлантартăм. Хăй ĕçлеме пăрахни те вунă çул, эпĕ тăрмашса илнĕ укçа-тенкĕпе пурăнатпăр вĕт-ха. Тĕрмене те арăмшăнах чуть çакланаттăм. Ăшă кĕрĕк тесе пĕрмаях янрашатчĕ те ĕнтĕ. Хам универмаг заведующийĕ пулнă май, ют çĕршывран кӳрсе килнĕ пилĕк кĕрĕкрен пĕрне Малани валли йăт та кай. Унашкал час-часах тăваканччĕ те, укçи-тенкине каярахпа çеç тӳлекелесе пыраттăмăр. Шăп тата тепĕр кунне тĕрĕслеме килчĕç. Юратьха ун чухне, яла кайса, аннен ĕне сутнă укçине илсе килсе хătăлса юлтăм. Сисме те сисеймерĕç ĕнтĕ тĕрĕслекенĕсем. Сиснĕ пулсан, паян кун пурнăç пăрăнчăкĕ таçта сулса хăваратчĕ-ха мана.

Анне тенĕрен, пурăнчĕ ĕнтĕ пурнăçне те маншăнах. Пĕртен-пĕр ачине пурлă-çуклă укçипе вĕрентсе кăларчĕ. Ун чух, вăрçă çулĕсенче, нимĕнпех те пит иртĕхеймен те, çавах, киле килкелесен, хутаçа çавра çăкăр хурса яратчех. Вăрçа каяймарăм, илмерĕç: уру уксах терĕç. Лаша çинчен ӳксе сусăрланса юлнăччĕ эп. Питĕ çын тăвасшăнччĕ анне манран. «Вĕренсен, ывăлăм, пайта пулĕ, тăрăш»,— тетчĕ. Ватăлмалăх кунĕнче хăйне ачи пăхасса ĕмĕтленнĕ ĕнтĕ карчăк. Эпĕ, ак, аннене тивĕç çын пулаймарăм. Маланирен вăрттăн теплерен пĕрре çĕр-çĕр аллă тенкĕ яркаласа параттăм. Кивĕ укçапа ĕнтĕ. Хулана илсе килмеллеччĕ те ăна, хамăр пата — Малани шат та пат килĕшмерĕ. «Эй, сан аннӳпе, пустуй хырăма тăрантарса усра!»— терĕ те урăх ун çинчен çăвар та уçтармарĕ. Çулла çитмĕл пиллĕке çитмеллеччĕ карчăкăн. Ик уйăх каялла вăл ир çинче шыв ăсма тухнă чух, пăрлă картлашкаран ури вĕçерĕнсе кайнипе, шăн çĕре тăрăнса аннă. Хăй вара çапах та пӳрте каялла кĕрсе выртма хал çитернĕ. Кайран тăнне çухатнă, мĕскĕн. Хăй çутас умĕн вилсе выртнă. Анне вилни çинчен пĕлтерсе, пире ун патĕнче хваттерте пурăнакан çамрăк учительница Полина телеграмма çапарса янă. Вăл та çав кун вырсарникуна килне кайнă тĕл пулнă иккен. Эпĕ анне çĕре кĕнине тепĕр эрнерен — коман-

дировкăран таврăнсан тин пĕлтĕм. Малани темле хавасăн хыпар пĕлтерес пек çиçкĕнчĕк сăнлăччĕ. «Ахванеç, санăн часах яла çурт сутма каяс пулать»,— тет çакскер, куçĕнчи шуйттанĕсене астарса. «Мĕнле апла?»— тетĕп ăна хирĕç. «Аннÿ вилнĕ, ак, вула»,— тăсса кăтартать телеграммăна. Чĕре шар! турĕ, хурлăх, ÿкĕнĕç пусса килнипе сăмах та чĕнеймерĕм, урама тухса утрăм. Çынсем пурте мана пÿрне тĕллесе кăтартаççĕ пек: «Акă, вăл, курăр, амăшне вĕлерекен»,— теççĕ пек...»

Çул урлă çуран тăман чупа-чупа каçать. Вăл сукмак хĕрринчи пĕр-пĕр кĕрт тĕмескинчен çакланать те, пĕчĕк ача шÿрĕ витĕр вăйтанçи вĕрнĕ чухнехи пек, юр хĕлĕхĕсене вĕлтĕртеттерет. Хирте чиркÿри шăплăх. Сарлака уйра халĕ орган кĕрлесе кайсан та никамшăн тĕлĕнĕç пулман пулĕччĕ, мĕншĕн тесен виçесĕр анлăхра ку çапла пулмалла пекех туйăнса тăрать. Тепĕр çынна хĕллехи çулпа пĕччен утма кичем пулма пултарĕ. Ахванеç вара хăйпе хăй калаçса пыма килнишĕн, унăн шухăшне никам та пÿлсе пыманнишĕн савăнчĕ çеç. Ури айĕнче юр кăчăртатни унра темле тĕлĕрÿллĕ, канăçлă туйăм вăратса пычĕ. Ахванеçĕн Малание асилес те килмерĕ. Анчах та чĕрĕк ĕмĕрне унпа пĕрле пурăнса ирттернĕскерĕн кирек мĕн çинчен шухăшлас тенĕ чухне те арăмĕн сăнарĕ куçĕ умне туха-туха тăчĕ.

«Пурнăç пÿштерĕ тулăхрах пулнă пулсан, Маланипе те çыхланса каяс çукчĕ те. Çыхланса каясси-мĕнĕ, эпĕ мар-ха, вăл хăй мана çулăхрĕ. Малтан нимех те пулманччĕ, пĕр çулталăк пек ун патĕнче пурăнтăм — апатне те расна çинĕ. Малани килĕнче кашни каç тенĕ пекех ĕçкĕ-çикĕччĕ, таçтан пуçтараннă çынсем купăс каласах ташлатчĕç. Мана та тепĕр чух эрех сĕнсе пăхатчĕç те — шăршлă шĕвеке çăвар патне илсе пырасси асра та пулман ун чухне. Çур çул пек ташласан-ташласан çак ÿсĕр ушкăн пач çухалчĕ. Малани каланипе, вĕсенчен чи пуяннине (таçтан тем çаратса пуяннăскер ĕнтĕ) тĕрмене тытса кайнă имĕш. Пĕр вăхăта Малани те таçта çухал-

чĕ. Кӳршĕсем кун пирки пĕрре те лайăххине калаçмастчĕç — вăл хырăм пăрахма çĕтнĕ тесе сăмахлакансем те пурччĕ. Апла-и, капла-и, как-никак, халь вăл ман арăмçке. Усал чĕлхе мана нихçан та витмен. Малани... Çухални пĕр-ик эрне иртсен тупăнчĕ вăл. Хăй йалт пĕтсе кайнă, виçĕ уйăх çимен çын пек курăнать. Малани килсе кĕнĕ чухне каç пулнăччĕ ĕнтĕ. Вăл сумкинчен икĕ çур литр çутти тата тăват-пилĕк кукăль кăларса сĕтел çине майласа хучĕ, халиччен пулманнине, мана та хăйпе ларма сĕнчĕ.

— Финька, атя, тĕрĕс-тĕкел таврăннине палăртса пĕрер черкке ӳпĕнтерер-ха!

— Мĕн эсир, эп... мĕн, хăвăра сип пултăр...

— Юрĕ, юрĕ, Финька, кил, юнашар лар, пĕр черккене эс мар, кушак çури те ĕçет. Хăвна çавах арçын тетĕн пуль-ха? Еçмен арçынран качака шăршĕ кĕрет, теççĕ. Ну, юрĕ, юрĕ калаçса. Акă, ме-ха черккине, ак, кукăльне те тыт, ăна эрехне ĕçсе янă хыççăн çыртăн.

Эпĕ ĕçрĕм вара. Хама хваттер хуçи хĕрарăмĕ умĕнче арçыннăн туяс килнĕ пуль çав.

— Вăт, çапла, маттур, Финька. Атту, тем, арçын мĕн тунине пĕлмен хĕр пек курнăçланса ларатăн. Яланах çапла çивĕч пул, вара ниçта та пĕтмĕн. Еçетне тепĕр черкке, тултарас-и? Э?

— Çу-ук, урăх ĕçместĕп. Халь те пуç кунтăк пек.

— И-и, ара, тепĕр черкке те ĕçмесен, сана хваттерте усрани те!.. Ме-ха, тыт, кăна-и, кăна ĕçтерепех-ха, тур канашĕпе те виççĕ теççĕ, пĕрне ĕçрĕн, тепĕрне ĕçенех-ха. Ме-ха, тыт, тыт, тыт. Арçын пек пул.

Эпир вара тата тепрер черкке ĕçрĕмĕр. Унтан тата тепрер. Унтан тата та ĕçнĕ пулĕ. Астумастăп халь. Йӳçсе çитсен, Малани çавăтрĕ те мана хăй вырăнĕ çине кайса выртгарчĕ. Хам тăма хăтланатăп — ниепле те тăраймастăп: туятăп-ха хĕрарăм хăйпе ахальшĕнех выртгарманнине. Тăраймарăм...

Кайранхине аса илме те намăс.

Çав ҫаҫранпа эпĕ Малани упăшки пулса тăтăм... Пулни-иртни ҫинчен аннене те калама именеттĕм. Вăл текех ман валли хĕр куҫласа хуни ҫинчен систеркелетчĕ те. Хĕрне хамăн та чун выртатчĕ ĕнтĕ. Кӳршĕрехчĕ, иҫмасса. Укаҫ ятлăччĕ. Тăванĕсем ялта ҫукчĕ. Чирлĕ амăшĕ вилнĕ хыҫҫăн Укаҫа кӳршĕ района каччă илсе кайрĕҫ. Полина, пирĕн ялти учительница, шăпах унăн хĕрĕ ĕнтĕ. Кӳршĕ тенĕрен-и, пирĕн патăрта пурăнать, ав. Кил-ҫурта, карта-хурана тирпей кӳрсе тăрать, юхăнса кайма памасть».

Утать Ахванеҫ, пуҫри пайтах шухăшĕпе арпашăнса утать. Асаилĕвĕ унăн самантран-самант савăнăҫсăртарах, ăшăнусăртарах. Ахванеҫ шухăшлать-шухăшлать те ухмаха ерсех каять. Авланиччен, тĕрĕссипе — Малание качча тухиччен, унăн пурнăҫĕ хĕвеллĕ утрав пулчĕ, халĕ, ав, ҫĕрĕк кăмпа пек ҫеҫ тăрса юлнă. Миҫе хутчен ĕнтĕ вăл Малани патĕнчен тухса каясси патнех ҫиткеленĕ, анчах та кашнинчех тухса кайма хăюлăх ҫитерейменни пăчлантарнă ăна. Аллă ҫула ҫитиччен пурăнчĕ Маланипе, ача тавраш вĕсене кулса кăтартмарĕ — малтанхи ҫулсенче Ахванеҫ ҫакна Малание час-часах астутаркаласа тăратчĕ: кайран, ӳкĕчĕ ахаллине ăнкарса ҫитсен, сăмахлама та пăрахрĕ. Пурăнчĕ вара Ахванеҫ пӳртри хăнкăла пек,— кăмăлĕ кӳтсе ҫитсен, хуйхине эрех ăшне путаркаларĕ, ахаль чухне — килтен ĕҫе, ĕҫрен киле хутларĕ. Халь ĕнтĕ пурнăҫне пурăнса ирттернĕ тесен те юрать унăн. Малани патĕнчен тухса кайсан та урăх нимĕнле ăшă вырăн та тупаймĕ вăл. Текех ăна хĕрарăм тени те ҫавăрăнса пăхмĕ. Ватăлнă, лĕпки ҫинчи ҫӳҫĕ те ĕлĕкхи мар, ала витĕр алланă пек — шĕвелнĕ. Савăнтармарĕ Ахванеҫе юрату тенĕ туйăм. Чун ҫулăмне вăл никама та парнелеймерĕ... Çапла иртсе пычĕ вĕсен ĕмĕрĕ: иккĕшĕ те пĕр-пĕринпе интересленмесĕр, ҫурăмпа ҫурăмăн пурăнса...

Утать Ахванеҫ, телейсĕр пурнăҫĕ ҫинчен шухăшласа, пуҫне ватса утать.

«Çĕр çинче пĕртен-пĕр савнă кĕтес пурччĕ. Çав кĕтесре пĕртен-пĕр юратнă çын — анне — пурăнатчĕ. Ырантан çакă та маншăн яланлăхах çухалать. Тăван ял çĕрĕпе юлашки хут утатăп. Урăх мĕн тума килсе çӳрес кунта? Пĕтĕмпех пĕтнĕ, пĕтĕмпех саланнă, пĕтĕмпех çилпе вĕçсе кайнă. Малани яла килместех. Çурт хупăнасси çинчен шухăшланă-и анне?! Çук, кин кĕртесси, ăрăва малалла тăсасси çинчен шухăшланă. Çурчĕ пит хаклах каяс çук, укçи пирки-и-ха кунта шухăшĕ — этем пурнăçĕ, ман пурнăç саланать, çук пурнăçăм. Мĕн нĕшкетĕп-ха эпĕ — саланать тетĕп, саланнă ĕнтĕ вăл; ăна халь темиçе кăшăлпа тыттарсан та сыватма пулмĕ. Шĕкĕ ерсен, тăн-тăн ларакан çĕнĕ пӳрт пĕренисем те юрăхсăра тухать, теççĕ те. Эпĕ ĕнтĕ тахçанах хăвăл пуль... Малани яла килсе пурăнмастех... Мĕн савăнтартăр ăна кунта?.. Мăянпа витĕнчĕ пулать апла Яркка Ахванеçĕн çурт никĕсĕ, э?»

Шухăш шухăшласа яла çитнине те сисмерĕ Ахванеç. Унăн ял витĕр Аялтикаспа çур урам утмалла. Вăл пуçне пĕксе, курпунне кăларса, такам хыçалтан хăваласа çитсе юр чăмаккипе çурăмĕнчен пересрен шикленнĕ пек мĕскĕнленсе, лăпчăнса утрĕ. Тĕл пулакан кашни çын куçкĕретех ăна тирпейсĕр пурнăçĕпе тĕксе кăтартассăн туйăнчĕ. Телейне, никам та урампа иртекен-тăвакан пулмарĕ. Амăшĕн юр хӳсе кайнă, тайлăк-тайлăк вĕрлĕк хапхаллă пӳрчĕ умне çитсе тăрсан, Ахванеçĕн кăмăлĕ сасартăках йăшса, çемçелсе кайрĕ, унăн халиччен куççуль кăларса курман куçĕсенчен чĕркĕмĕл пек икĕ пĕрчĕ сивĕпе ĕнтĕркенĕ питçăмартийĕ тăрăх шуса анчĕ.

«Анне... ялта та эпир кăна хапха тăваймасăр юлтămăр, теттĕн. Хĕлле картишне кĕрт хӳсе каять, лупасайне юр тултарса лартать, выльăхсене те ниçта уçălма кăлармашкăн çук, юписене темле кӳртерсе килмелле ĕнтĕ, хăмисене те ялти пилорамрах çуртарма пулĕччĕ те, тепле çав, вăй çитерейрес çук, теттĕн вара эпĕ килкелесе кайнă тĕлсенче. Вăй çитерейместĕмĕрччĕ-и? Икĕ ĕмĕр пурăнать терĕм пулĕ аннене, çавăнпа ват çынна хисе-

пĕм ҫителĕксĕр пулчĕ-тĕр?.. Халĕ, ак, хапхи те, пӳрчĕ те сутлăха анчах...»

Пӳрте кĕрсе пальтипе ҫĕлĕкне алăк патĕнчи пăтаран ҫакса ярсан, Ахванеҫ, тĕпел кукринче стакан шыраса тупса, кĕленчери юлнă эрехе чăп-чăмиех ĕҫсе ячĕ. Хăватлă шĕвек чылай утса килнĕ сынна сиплĕ эмел пекех пулчĕ. Ахванеҫĕн кăчăр пулнă урине ҫийĕнчех ăшă ҫапрĕ, ҫанҫурăмĕ ыйхă килтермелле сăрăлтатма пуҫларĕ. Ăна кĕленче тĕпĕнчипе ҫителĕксĕр пек туйăнчĕ, вăл вара пĕрер кун пурăнмалăх ҫимеллисем чиккелесе килнĕ сумкинчен виҫĕ ҫăлтăрлă «Коньяк» туртса кăларчĕ. Ăна пуҫлама ĕлкĕреймерĕ Ахванеҫ: чӳречерен такам картишĕпе васкаса иртни курăнса кайрĕ. Алкум алăк сасси кĕмсĕртеткелесе илчĕ, пӳрте тăп-тăпăл кĕлеткеллĕ, сăпайлă питлĕ-куҫлă хĕр кĕрсе тăчĕ.

— Ой, ҫитнĕ-ҫке эсир,— терĕ вăл, сывлăх сунса.— Эпĕ сире паян паҫăрах кĕтетĕп. Кĕтрĕм, кĕтрĕм, хăвăр ҫитетпĕр тесе пĕлтертĕр те, каҫкӳлĕм те пулчĕ, эсир ҫаплах ҫук. Килессине ырана хăварчĕҫ пулĕ терĕм вара. Шкулта пуху пулчĕ, унта йăпăртлăха кайса килтĕм-ха. И-и, Афанасий Петрович, шăнтăр та пулĕ ҫул ҫинче, Шупашкарĕ пит ҫывăхрах мар та, кăмакана яшка лартнăччĕ, вĕри апат ҫитерем-ха сире.

Ахванеҫ, ҫак хĕр кĕтмен ҫĕртен килсе кĕнипе хыпăнса ӳкнĕскер тата, умĕнчи коньяк кĕленчине ниҫталла пуҫтарса хума ĕлкĕрейменнишĕн аванмарланса, ăшĕнче хăйне хăй ятласа ӳпкелекенскер, пĕр вăхăта сăмах тупаймасăр ҫухалса тăчĕ.

— Эпĕ мĕн-ха, Полина... Эпĕ кучченеҫ илсе килнĕччĕ,— терĕ вăл тепĕртакран, кĕленчине сĕтел варринерех тĕртсе лартма май тупăннишĕн хĕпĕртесе.— Яшки-мĕнĕ, вĕри апатсăр та пырĕ-ха пĕррелĕхе, пирĕн хырăма тем те юрамалла, ак, уни-кунине ҫырткалăпăр та, пулчĕ те,— чĕлхи уҫăлма пуҫларĕ Ахванеҫĕн.

— Мĕн эсир, Афанасий Петрович, юрать-и вара ҫул ҫинчен килнĕ ҫынна мĕн-килчӳпе апатлантарма! Вĕри

апат — сиплĕ çимĕç, шăнни-тунине туххăмрах хăваласа кăларĕ,— сĕтел çине шӳрпе антарса лартнă, çăкăр касса хунă хушăра калаçрĕ Полина.— Эсир, акă, хăвăрăнне каялла пуçтарса хурăр, сирĕн ятпа тесе эпĕ юри «Столичнăй» илсе хунăччĕ, сирĕн юбилейччĕ вĕт-ха ĕнер. Асанне, аннĕр ĕнтĕ, текех асăнатчĕ те... Шупашкара уява çитсе курасса сунатчĕ...

Полина хăй ытлашширех персе хунине çийĕнчех сисрĕ те калаçăва урăх еннелле пăрса яма пикенчĕ.

— Лешкасри Мĕтри тете килсе ларчĕ, виçĕмкунсем. Вăталăх ывăлĕ пирки сăмах тапратрĕ те, уйрăлса тухасшăн имĕш. Эсир килес-тăвас пулсан, Афанасий Петрович, Мĕтри тете систерме хушрĕ, çурт пирки калаçма пулĕ,— терĕ вăл, хăй çав вăхăтрах черккесене тултарса ĕçме сĕнчĕ.

— Мана аван та мар та хĕр пуçпа эрех ĕçтерме, айăп ан тăвăрах. Сирĕн сывлăхăршăн, Афанасий Петрович, тата аллă çул улăп пек кĕрнеклĕ пурăнăр. Çапла калаççĕ-и-ха çуралнă кунпа ыр суннă чух?

Ахванеçе темле ăшă-ăшă, нихçанхилле мар хаваслă пулса кайрĕ. Вăл пĕр саманта вăтăр çул каялли, хăй каччă шутĕнче çӳренĕ вăхăтри, амăшĕ килтерме пĕлекен кил-çурт ăшшине аса илчĕ, ăна Полина ырăнĕнче çак пиççе çитнĕ çырла пек çирĕм тăваттăри хĕр мар, хăйĕн халиччен кĕтсе пурăннă савăнăçĕ, юрату сĕмлĕ телейĕ ларнăн туйăнчĕ. Анчах та ку туйăм унăн пуçĕнче нумая пымарĕ. Ахванеç ют пахчана вăрра кĕме хăтланнине час сисрĕ те, хăй шухăшĕнчен хăй аванмарланса, вăтанса кайрĕ. «Нĕрсĕр çын»,— çапла каласа вăрçас, ятласа тăкас килчĕ унăн хăйне.

Полина, хĕре тивĕçлĕ чиперлене-чиперлене икĕ черкке чухлĕ ĕçем пекки тусан, урăх çăварне те сыпмарĕ, Ахванеçе вара хисте-хистех тепĕр тăваттăшне ӳпĕнтерттерчĕ. Ахванеçе ку черккесем малтанласа тутлă шыв пекех туйăнса пычĕç пулсан, ларнăçем вĕсенчен кашни çур пăтлă кире пуканĕ пек туйăна пуçларĕ.

Ахванеçе ыйхă пусса пычĕ, ĕнер каç та çын ретлĕн çывăрайманскерĕн, куçĕсем хăйчикки çути пек мăчлаткаларĕç, çанçурăмĕ лĕштĕрех кайрĕ унăн, пуçĕ усăнса анчĕ. Вăл Полинăна темскер калас-калас тесе, шухăшне пуçтаркаларĕ — пуçтарса çитерейменĕ, сăмах ваклама уçнă çăварĕ уçнипех юлчĕ, хуçи кутник сакки çине çиткелесе выртсан, ун хушăкĕнчен хуп турттарнă сасă илтĕнме пуçларĕ...

...Ахванеç çирĕм пĕррере. Хĕвел халь-халь пытанмалла. Ахванеçĕн чĕринче виçесĕр савăнăç, вăл ыран Шупашкара вĕренме тухса каять, тухса кайиччен кӳршĕ хĕрĕ Укаçпа калаçса куратех. Халиччен хăю çитерейменнине паян çитеретех. Унсăрăн хăçан калĕ-ха ăшра шăнăçайми туйăмне? Ахванеç Этмене шыва кĕме васкать, акă вăл çанçурăмне каçхи лĕп шывпа уçăлтарса тухать те апат çимесĕрех Турикаса, çамрăксем пухăнакан вырăна, уттарать. Мĕн яш-кĕрĕмĕ ĕнтĕ халь ялта! Каччисем те сайра: вăрçăра. Пурпĕрех авалхи йăлана пăрахмаççĕ-ха, улт-çиччĕн пулсан та, ятне тума Турикаса пуçтарăнаççĕ. Унта, паллах, Укаçа тĕл пулать. Укаç... Чим... Çыран хĕрринчи шыва шĕмпĕлтеттерсе такам çăмăллăн ишкелесе çӳрет. Ку вырăна Ахванеççĕр пуçне урăх никамах та килекен марччĕ. Вĕтлĕх кунта. Кăштах шиклĕрех те каçпа шыва кĕме ку тĕлте. Тарăнăшĕ те тарăн. Хĕвел хăйĕн ылтăн пуçне сăрт хыçне пытарчĕ ав. Тĕттĕмленет. Çурма çутăра Этмен шывĕ паçăрхинчен кăсăкрах... Чим... Салтăнма хатĕрленнĕ Ахванеç пĕр вырăнта тăнн хытса тăрать. Шывран никам та мар, унăн асĕнчи Укаçĕ тухать. Кĕнекесенче вуланă вутăш пек. Унăн Укаçĕ!.. Каччăн ăсĕ пăтранать. Юнĕ вĕресе каять, именӳсĕр-мĕнсĕр, нихăçан Ахванеçре пулман хăюлăхпа... Кĕçех Ахванеç вĕтлĕхрен ыткăнса тухать те хĕр еннелле чупать. «Укаç, Укаç, тăхта-ха!..» Анчах Укаç ăна илтмест. Укаç каччă ыткăнса килнине сисмест. Вăл васкамасăр кĕпине тăхăнать. «Укаç, Укаç!» — кăшкăрать Ахванеç мĕн вăйĕ çитнĕ та-

ран. Хĕр тумланса пĕтерет ĕнтĕ, кайма хатĕрленсе, çӳçне турать. Ахванеç çаплипех вирхĕнсе пырать, епле пулсан та вăл Укаçа çитесшĕн. Кун чухлĕ чупнипе Укаç патне çитмелле пек ĕнтĕ, анчах та темшĕн Ахванеç хĕре çитеймест. Чупать каччă, кăшкăрса, пĕтĕм вăйран кайса чупать, вĕтлĕхне пăхмасăр, вĕлтĕренне пăхмасăр, уксах урипе лăкăштатса. Каять, каять Укаç, каять. «У-к-а-ç!!!»— ян! янрататать Ахванеç Этмен çырмине...

...Ахванеç, такам пуç çине вĕри шыв сапнă пек, шарт сиксе вăранса кайрĕ. Хăйĕн тăван килĕнче выртнине тавçăрса илсен, нихăçан сăхсăхманнине кĕçех хĕрес хывса илетчĕ. Пĕтĕмпех тĕлĕкре пулнă иккен ку. Нимĕнле Укаç та, нимĕнле Этмен шывĕ те çук. Çурт тĕттĕмлĕхне хуйхатса, стена сехечĕ кăна канăçсăррăн шаккать. Çывăхрах, çӳхе хăмапа пӳлнĕ пӳлĕмре, Полина питĕ тутлăн сывлани илтĕнет. Ахванеç пĕр хушă хĕр сывланине тăнласа выртрĕ. «Лăпкăн сывлать, çывăратех пулмалла апла пулсан, эпĕ тĕлĕкре анчах кăшкăрнă, ку питĕ аван-ха, атту хĕрачана çĕр варринче хăратса ӳкерме пулатчĕ»,— шухăшларĕ Ахванеç. «Эй, мăнтарăн хĕрĕ, пуçăм айне минтер те хунă, урасене те хывнă, Маланипе миçе çул пĕрле пурăнса та пĕрре тирпейлесе вырттарнă пулин хуть! Тьфу, аса илес мар-ха ун çинчен пĕреххут».

Кăмака хыçĕнче шăрчăк чăрлатать. Шухăшне йĕркене кĕртсе çитерсен, Ахванеç пырĕ çав тери типсе çитнине туйса илчĕ. Пуçне те такам тем туса хунă тейĕн—пуш-пушă, тимĕр пичĕке пек, ян-ян! туса каять. Куçне уçсанах вар-хырăмĕ те чиперехчĕ — халĕ, ак, ăшĕ туртса ыратма пуçларĕ унăн. Ахванеç, шăппăн тăрса, чĕрне вĕççĕн тенĕ пек сĕтел патне йăпшăнса çитрĕ. Чӳречерен ӳкекен çĕрлехи сĕм тĕпелте мĕн пуррине самаях курма май парать. Вăл, шĕвекĕ çурри пек юлнă коньяк кĕленчине сĕтел çинче хыпашласа тупсан, стакан таврашне шырасă-туса тăмарĕ, тӳрех эрехе пырне ӳпĕнтерчĕ. Ку вара ăшчикĕ пăтраннине те, пуçĕ ыратнине те çийĕнчех иртерсе ячĕ, мухмăра куçса кайнă çынна сиплĕх кӳчĕ.

Сĕтелтен виç-тăватă утăмрах, каланкка çумĕнче, Полина çывăрать. Ахванеç хăлхине хĕр сывлани тепĕр хут пырса кĕрсен, унăн чĕри шиклĕхпе, вăтанăçпа тулса кайрĕ: хăй çĕр варринче тăрса эрехпе сывлăхне тĕрлетнинчен, çавна Полина сиссе йĕрĕнессинчен именчĕ вăл. Анчах та Ахванеçĕн шикленĕвĕ, вăтанăçĕ, именĕçĕ кăлăхах пулчĕ: хĕр ыйăхĕнчен вăранмарĕ, çаплипех тутлă сывласа канлĕн çывăрчĕ.

Пӳлĕмри шăппăн шăвакан шăплăх, Ахванеç чĕрине ыраттарса, унăн эрехпе вĕриленнĕ пуçĕнче ӳпкевлĕх, мĕскĕнлĕх туйăмĕсем вăратрĕ. Тĕшĕсĕр пурăнса ирттернĕ пурнăçĕ ăна шухăшĕн кирек хăш пăтранчăкĕнче те шăл йĕрсе кĕтсе тăчĕ. «Çывăрать хĕр. Мĕн тума кирлĕ пултăр ăна Ахванеçĕн пӳрнепе кăшт тĕксенех арпа пек пăрр саланса каякан килпетсĕр кунçулĕ! Тĕрĕс, йĕркеллĕ пурнăçпа пурăннă пулсан, турри мана та шанчăксăр хăвармастчĕ пулĕ, ватăлăхри канлĕхе юнăмран ӳт илнĕ тĕпренчĕкре тупнă пулăттăм...» Ахванеç хăй мĕн тунине те ăнланса, тавçăрса пĕтереймерĕ, Полина кравачĕ патне çитсе, хĕр вырăнĕ умне чĕркуçленсе ларчĕ. Таçта шалта, кăкăрĕнче, чунĕн пĕр хĕлĕхĕ татăлчĕ унăн: кӳçĕсенчен куççуль сăрхăнса анчĕ, çанçурăмĕ, пĕрре вĕриленсе, тепре сивĕнсе, чĕтреве ерчĕ.

Ют çын сĕртĕнни Полинăна шартах сиктерсе вăратрĕ.

— Ах,— ахлатса илчĕ вăл, пуçĕ вĕçĕнчех арçын капланса тăнине курсан.— Афанасий Петрович-и? Афанасий Петрович! Сирĕлĕр... йĕркене кĕрĕр... шеллĕр... Эсир, эсир атте пулатăр вĕт ман...

Ахванеç, самант хăвăрт улшăннипе тата хĕр ăна хăйне йăнăш ăнланнипе аптраса ӳкнĕскер, чĕлхине çĕтерчĕ. Хĕртен хĕрхенӳ, йăпату кĕтсе илме шанчăкĕ пурччĕ унăн, анчах яланах çапла: чунĕ кӳтсе килнĕ чухне, хуйхисуйхине кампа та пулин пусарас, пайлас тенĕ чухне, ăна никам та ăнланса алă тăсмасть. Хăтланкаларăшĕсене кура ăна пурте кăштах катăкрах этем теççĕ пулас.

Хĕрхенӳпе йăпату хĕлхемне кĕтсе илесси ҫинчен мар, епле те пулин ҫын ретлĕ курăнасси ҫинчен ҫеҫ хумханмалли юлчĕ халĕ Ахванеҫĕн.

— Полина... Полина,— кăкăрĕ пӳлĕннине, чĕлхи-ҫăварĕ ҫыхланнине аран ирттерсе ячĕ Ахванеҫ,— эс... эс... ан хăра манран. Қаҫар... хамран хам тухса кайрăм. Эп ирсĕр курăнасшăн марччĕ пачах, усал шухăш тытман.

Қăмака хыҫĕнчи шăрчăк, те халиччен арҫын сассине илтменнипе хуйханнăскер, темиҫе минут ҫăварне шыв сыпса тăчĕ, унтан, хăйне нимĕнле хăрушлăх та хăратманнине сиссе илсен, малтанхинчен те хыпаланчăкрах, хĕпĕртесе кайса, чăрлатма пуҫларĕ.

— Пурнăҫ ăнмарĕ манăн, ывăнса ҫитрĕм, халиччен никам умĕнче те епресе кайманччĕ, тем амакĕ пулчĕ — ак, пуҫа ҫухатрăм. Ан айăпла ĕнтĕ ват ҫынна, Полина,— калаҫăва тăсрĕ малалла Ахванеҫ.

Юлашкинчен, хăйĕн хуйхи-суйхи витернине курса илсен, вăл хăй пурнăҫĕнчи арҫын тивĕҫне яракан эрнесемпе кунсем, уйăхсемпе ҫулсем ҫинчен такăна-такăна калаҫса кайрĕ. Анчах та шăпин чи кăткăс та ăнлантарса пама йывăр ыйтăвĕ патне — хăйне иленсе хисеп туман юратăвĕ патне — ҫите-ҫите тухрĕ пулин те, Ахванеҫ ун ҫинчен кăвĕле-кĕвĕле тарăхса та, типĕ вутă пек хыпса кайса та нимĕнех те каламарĕ. Хайхи, калаҫсан-калаҫсан, хăй усăсăр ытлашши перкелешсе ларнине туйса илсен, вăл: «Хама ҫын пек пурăнтарнă пулсан, манăн та сирĕн чухлĕ ачам, йăх тăсамĕ пулмаллаччĕ»,— тесе хучĕ. «Ачам» сăмаха Ахванеҫ лĕпĕшĕн шăннă ҫунаттисене вĕрсе ăшăтнă чухнехи пек черченнĕн те тивлетлĕн каларĕ.

Тăнлать хĕр Ахванеҫе, хăйшĕн ҫĕнĕ, ку таранччен пĕлмен-тӳсмен пурнăҫа ăшне илет. Анчах та умĕнчи тенкел ҫинче мĕскĕннĕн ларакан, пичĕ пĕркеленнĕ арҫынна вăл нимĕнпе те пулăшма пултараймасть. Чĕринчи чăн сăмахне калас-тăк — вăл Ахванеҫе хĕрхенме мар, намăслантарса, ятласа пĕтернĕ пулĕччĕ. Суйса, Ахване-

çе хĕрхеннĕ пек туса кăтартма унăн пушшех те халĕ çитмерĕ.

— Влисса аппа пĕрмаях çурт хупăнасси пирки кулянатчĕ, хăв хыççăн çурт хупăнни пурнăçна усăсăр пурăнса ирттерниех, тетчĕ вăл,— хăй тĕллĕн калаçнă пек сăмах хушрĕ Полина, кӳрши чĕмсĕрленсен.

Ахванеçĕн пуçĕ паçăрхи пекех хĕсме, ыратма пуçларĕ. Вăл, тĕпелелле иртсе, ăшĕ каниччен шыв лĕрккерĕ, ĕçсе тăрансан, Полина кравачĕ патне урăх пымарĕ, хăй вырăнĕ çине лаш! кайса выртрĕ.

— Афанасий Петрович?— чĕнчĕ Полина.— Қаçарăр, чĕлхи çавнашкал ман, пуклак, çынна йăпатма пĕлместĕп,— çапла каларĕ те хĕр, хăй чĕререн калаçманнине ăнланса, ăшра хăйне хăй вăрçса илчĕ, вара тахçантанпах ятарланă шухăшне персе ячĕ: — Эпир ку çурта сутăн илесшĕн,— терĕ.

Хĕр шалт тĕлĕнтерсе ячĕ пулин те, Ахванеç чĕнмерĕ.

— Манăн пӳрни кăçал кунти шкула ĕçлеме килет. Институт пĕтернĕ хыççăн. Мĕтри тетен вăталăх ывăлĕ вăл,— калаçрĕ Полина.— Çурт хакне çуррине çуркуннесем парас тетпĕр, тепĕр çуррине вĕренӳ çулĕ пуçланнă тĕлелле. Тепле ĕнтĕ, те килĕшетĕр, Афанасий Петрович?

Инçех те мар урамра йытă вĕрсе ячĕ. Хĕллехи каçра кил тĕлне пĕлмесĕр сĕтĕрĕнсе çӳрекен анчăк пурнăçĕ Ахванеçе хăйĕн пурнăçĕпе пĕрешкеллĕнех туйăнса кайрĕ. Қилсе лекнĕ шухăш тавра вăл татах та çаврăнкаласа çӳресшĕнччĕ. Анчах та Полина ыйтăвне ответлемесĕр чылай вăхăт иртнине аса илсен: «Юрĕ-çке, юрĕ, килĕшмесĕр»,— терĕ.

Хĕр урăх чĕнни-калаçни пулмарĕ.

Ахванеç пальтипе çĕлĕкне шыраса тупрĕ. Хуллен, сас тумасăр, Полина вăранасран шикленсе, пӳртпе алкум питĕркĕçĕсене илчĕ, урама тухрĕ.

Хĕллехи çăлтăрсăр каçа тухăç енчен шурă илме пуçланă. Кĕçех автансем авăтса ямалла.

1968



## ЭЙ, ЫТАРАЙМИ ТĔНЧЕМ!

### Тĕрленчĕксем

### Кĕрхи Атăл

Умра, шухăшăмра — йăлăхтармăш кĕр çилĕ. Атăл хумĕсем аназалла пĕр хыпкаланса чупаççĕ, пĕр вăраххăн иксĕлеççĕ: те ĕсĕклеççĕ вĕсем, те кĕр çанталăкĕнчен тĕлĕнеççĕ...

Атăл çийĕн пăрахутăн хурлăхлă сасси чĕркĕмĕлленсе ванчĕ. Ун ванчăкĕсем çыр хĕрринчи хăвалăха кӳ! пырса тирĕнчĕç те — хăвалăх чĕтренсе, çӳçенсе илчĕ. Ана çу çилĕ, пляжри хăйăр çинче хĕртĕнекен хĕрсен çӳçе-кĕлеткисем асне килчĕç пуль. Асне килчĕç пуль те хăвалăх чунне çатăрласа ыраттарчĕç: унăн çуллен ӳт илекен тепĕр çамрăклăхĕ сӳнет-çке, пĕрремĕш сĕткенрен пуçланнă пурнăçĕ сĕврĕлет.

Пăчăр-пăчăр куççулĕ сăрхăнчĕ,— çумăр шĕпĕртетет

иккен, кĕрхи сивлек çумăр. Тумламсем таканлă ут кĕввипе, урисене шăнтасран шикленмесĕр, сивĕ хумсем тăррипе ăшталанса чупрĕç.

Тăхлан пĕлĕтсем. Ку пĕлĕтсене Врубелĕн е Ренуарăн ӳкермелле... Пăрахут тепĕр хут хурлăхлăн сас парчĕ те, хăйĕн сассипе пĕрле, тăхлан пĕлĕтсен айне кĕрсе çухалчĕ.

Пушă. Кĕрхи çанталăк, çак йывăр тыткăнран хăтăласшăн туртăнса, юлашки кунсем асаплanать. Хĕл хуçалăхĕ, халь-халь йĕркелĕхе аллине илсе, ку тăрăхра хăйĕн ĕмĕрне пуçласа ярĕ. Атăл çинче халлĕхе вара — çил, çумăр, хăвалăх хурлăхĕ...

## Сана аса илетĕп

Лена, сана аса илетĕп. Сана аса илмессеренех куç умне Сильтĕк уявĕ, пĕчĕк хурăн вăрманĕ тухса тăрать, тата пирĕн пĕрремĕш тĕлпулăвăмăр. Уяв уявах-тăр ĕнтĕ, тутаннă çав çуттине те. Айван пуçăм, куçусене курнипех хĕрнĕскер, çуттине тутансан хĕм сапмах тытăннă, чĕлхем çăмăлланнă. Юхнă вара сăмаххисем те. Астумастăп, мĕнле майпа эпир шăплăха килсе лекнине, эсĕ пуçна кăкăрăм çине пĕксе çăмăллăн ахлатса илнипе çеç тăна кĕнĕ. Именетпĕр те пек пĕр-пĕринчен, куçран куçа пăхма та хăймастпăр пек. Аллусене ман еннелле тăсрăн та «айванăм» терĕн. Уяв та, вăрман та çухалчĕ пирĕншĕн. Çемçе курăк тăрăх утрăмăр, утрăмăр чĕнмесĕр. Хăвăрттăн чарăнса аллунтан тытрăм та: «Йăрăс хурăнăм»,— тесе пăшăлтатрăм. Чăн-чăн хурăнĕсем çулçисемпе йăл-йăл кулкаласа илчĕç.

Каярахпа вара татти-сыпписĕрех сăмах юхнă. Эсĕ — тухтăр иккен, район пульницинчен тăван килне вырсарникуна çеç килнĕскер. Пирĕн курнăçса тăрас вăхăчĕ те кĕскелсе çитнĕ-мĕн. Уяв та тахçанах саланнă. Эпир те вăрманта мар ĕнтĕ. Сирĕн умăрти ансăр сак çинче ларатпăр. Эсĕ тем калаçатăн-калаçатăн — сывламасăр сана итлетĕп. Эпĕ те тем калаçатăп пулмалла: сăмаххăмсене

итлесе, сан çумна тĕршĕнетĕп. Қалама çук ыррăн туйăнса тăрать пире.

Тухтăрăм манăн, хир шăрши кĕрекен тухтăрăм! Қăвак çутă та чĕлтĕрсе килчĕ. Ах, ансăр сакран уйрăлас килмест-çке...

... Лăпкăн çуралакан хĕвел пайăркисем хурăнсем хушшине тарса саланчĕç. Ĕнерхи ращапах утатпăр. Эсĕ мана разъезда ăсататăн. Иксĕмĕр те чĕмсĕрленнĕ ĕнтĕ. Сасартăк тупăннă телей пăравус сасси пек самантрах сухалассӑн туйăнать. Кун пирки пирĕн те сăмах хушса калама хăю çитмест. Ӳпкев туйăмĕ те, хурланни те çук, тепре тĕл пуласси çеç шухăшлаттарать.

Ленăна мелсĕр чуптăватăп та вакун алăкĕн хăлăпĕнчен уртăнатăп.

Пуйăсваскать, унăн мана эпĕ веренекен çĕре, Мускава, илсе çитермелле. Ленăн шывланнă куçĕсенче — шанчăк, тунсăх, юрату. Ан хуçăл, ытарайми тухтăрăм!

Васкатăр пуйăс, тен, çав хăвăртлăхпах мана каялла сан пата илсе çитерĕ.

Тем пекехчĕ...

## Кĕтетĕп

Ку пуйăса кĕтсе эпĕ чылайччен тăтăм. Темшĕн мана эсĕ çак пуйăспа килессĕнех туйăнчĕ. Перрон леш айккинче сăвă калакан хурама çулçисем çинчен те шухăшламарăм эпĕ. Кĕтрĕм, эсĕ вакунран анса Хĕвелпи куллипе ытамăмра ахăлтатасса ĕмĕтлентĕм. Ытармăшăм! Тĕсмĕртмен хĕр пичĕ çеç варкăшса юлчĕ станцă умĕпе. Салхуччĕ унăн сăнĕ, куçĕсем, сана кĕтнишĕн ӳпкелесе, вĕçĕмсĕр сăмахлатчĕç...

Ку тăрăхра иртекен юлашки пуйăс та аякри пăрăнăçра чăмса çухалчĕ. Сасартăк чĕмсĕрленсе, хурама çулçисем те çĕпĕççĕн пăшăлтатма пăрахрĕç. Эпĕ çаплах, шанчăкăма çухатмасăр, сана кĕтетĕп...

## Каймăпăр-и?

Лена, кичем!

Иккĕмĕш талăк ĕнтĕ çумăр пĕрĕхет. Пушă. Эсĕ кантăк умĕнче ларатăн.

Сарă çулçăсем салху куçĕсемпе карта кĕтессисенче çынсем пек пăхса выртаççĕ. Кӳленчĕк умĕнче кăвакарчăн шеперсе ларать.

Лена пичĕ тăрăх, кӳренĕçлĕ туйăм хăварса, икĕ куç-çуль пĕрчи йăрăлтатса анчĕ.

Тĕтре мăкăлтататать. Хапха умĕпе урапа лачăртатса иртсе кайрĕ.

Лена? Чĕнмест... Пĕлĕт хĕрри шупкалма пуçларĕ. Çумăр тамалчĕ. Лăпкăн кăлтăртатса ларакан кăвакарчăн çумне тепри вĕçсе пырса ларчĕ. Мăшăрĕ пулĕ.

Лена, эсĕ кĕрхи вăрмана кайса курасшăнччĕ. Каймăпăр-и?

## Эй, ытарайми тĕнчем!

Ку тăрăхра пĕтĕмпех шурă. Уй-хир те, йывăçсем те, ялĕ те. Çил ывăнми гитари çинче курăнман пӳрнисене шуçтарма тытăнать те—çил çилхисем кĕртсем тăрăх чĕлтĕртетсе чупаççĕ. Урам шурă тĕтре ăшне путать вара. Çав шурă тĕтре ăшĕнчен халь-халь шурă-шурă Илле пăхаттир утса тухас пек, тен, шурă кĕпине вĕлтĕртеттерсе, сасартăк пирĕшти пек юр пике курăнса кайĕ? Ку тăврана пĕтĕмпех шурă фантази теме пулать.

Çуркуннепе шурă юмах çухалмасть. Уйсенче, йывăçсенче симĕс юмах пуçланать. Çапах та шурă юмах вилĕмсĕр тейĕн, вăл каллех чĕрĕ: улмуççисем чечекре, çĕмĕртсем çупкам-çупкам шурă. Çуркунне — вĕр-çĕнĕ сăнарсем.

Эпĕ ялан пурăнакан шурă тĕсшĕн! Эй, ытарайми тĕнчем!

ТУПМАЛЛИ

Акăль . . . . . . . . . . 3
Суран . . . . . . . . . 20
Çапса çумăр çăвать . . . . . 35
Çавсемех тата вăл . . . . . . 59
Çуллен çеçке çурать... . . . . 73
Иртес çăлтăрсăр каç . . . . . 126
Эй, ытарайми тĕнчем! . . . . . 140

**Агивер (КОНОВАЛОВ)** Федор
Георгиевич

**ПРОЛИВНОЙ ДОЖДЬ**

**Новеллы**

На чувашском языке

Редакторы *Ю. Г. Григорьев, Ю. И. Скворцов*
Художник *Я. В. Комиссаров*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *Р. Я. Семенова*
Корректоры *Л. А. Иванова, Л. К. Ванюшкина*

НТ 19590. Сдано в набор 2/VIII-73 г. Подписано к печати 18/XII-73 г. Изд. № 36/74 г. Формат 70×108/32. Бумага типографская № 2. Физ. печ. л. 4,5. Усл. печ. л. 6,30. Учетно-изд. л. 6,44. Заказ № 3776. Тираж 10 000 экз. Цена 23 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.